# Тăван район 70 çул тултарчĕ

Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

*10 (8174) №* * *Юн кун, 2014 çулхи нарăс (февраль) уйăхĕн 12-мĕшĕ* * *Хакĕ ирĕклĕ*





**Ӳс, çĕклен, Муркашăмăр,**
**Пуянлан, вăйлан,**
**Ĕçĕмĕрпе юррăмăр**
**Сан валли ялан!**

**МУРКАШ РАЙОНĔН ХИСЕПЛĔ ÇЫННИСЕМ!**

Района йĕркеленĕренпе 70 çул çитнĕ ятпа сире пĕтĕм кăмăлтан саламлатăп!

Муркаш районĕ вăл – Чăваш Енĕн илемлĕ тăрăхĕ. Унăн экономикипе социаллă сфери ăнăçлă аталаннă, çут çанталăкĕ илĕртӳллĕ. Район историпе, мухтавлă традицисемпе тата хăйне евĕр культурипе пуян.

Сирĕн мухтанмалли çук мар! Муркашсен ĕçри тăрăшулăхне пула çынсен пурнăç условийĕсене лайăхлатас, ялсене комплекслă аталантарас, вĕренӳре, сывлăха сыхлассинче, спортра тата культурăра услугăсен пахалăхне ӳстерес, çынсен килти хушма хуçалăхĕсене, пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăна пулăшас енĕпе патшалăх йышăнакан программăсем ăнăçлă пурнăçа кĕреççĕ. Районта çĕр ресурсĕсемпе тата муниципалитет харпăрлăхĕпе эффективлă усă курма, территорисене тирпей-илем кĕртме хушма укçа-тенкĕ çăл куçĕсемпе усă курма тăрăшаççĕ.

Муркаш районĕн ветеранĕсене хăйсене хĕрхенмесĕр ырми-канми вăй хунăшăн тата тăван çĕре чунтан юратнăшăн уйрăмах пысăк тав сăмахĕ калатăп. Вĕсем хывнă ĕç традицийĕсене Муркашсен пулас ăрăвĕсем упраса хăварасса тата аталантарса пырасса шанса тăратăп.

Малашне те ĕçри çĕнĕ çитĕнӳсем район историне пуянлатса пыччăр, кашни çемьен пурнăçĕ вара кăмăл ăшшипе тата савăнăçпа тултăр! Сире çирĕп сывлăх, ырă пур пуçарура та ăнăçу, районăн социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕнче çĕнĕ çĕнтерӳсем, телей тата ăнăçу сунатăп!

**М. ИГНАТЬЕВ,**
**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ.**

**МУРКАШ РАЙОНĔН ХИСЕПЛĔ ÇЫННИСЕМ!**

Сире пысăк уявпа – Муркаш районне йĕркеленĕренпе 70 çул çитнĕ ятпа чĕререн тата ăшшăн саламлатпăр! Муркаш районĕ йĕркеленнĕренпех республикăра малта пыракан районсенчен пĕри пулнă. Кашнин тăрăшулăхĕнчен, хăйсен районне чунтан юратнинчен килет çакă.

Район экономикинче, ял хуçалăхĕнче, социаллă сферăра, культурăпа вĕренӳре, медицинăра паян пултаруллă та хастар, район малашлăхĕшĕн чунĕпе çунса тăракан çынсем сахал мар вăй хураççĕ. Апла пулсан район малашне те çĕнĕрен çĕнĕ çитĕнӳсемпе тата ӳсĕмсемпе савăнтарасса шанса тăратпăр.

Хаклă çыннăмăрсем, хисеплĕ тусăмăрсем! Сире пархатарлă ĕçĕршĕн, район аталанăвне тивĕçлĕ тӳпе хывма тăрăшнăшăн пысăк тав сăмахĕ калатпăр, çирĕп сывлăх, ĕçре ăнăçу, телей, çемйĕрсенче тату пурнăçпа килĕшӳ сунатпăр.

**Н. ВАНЕРКИН, В. МИДУКОВ,**
**Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсем.**

**МУРКАШ РАЙОНĔН ХАКЛĂ ÇЫННИСЕМ!**

Сире паллă кун – Муркаш районне йĕркеленĕренпе 70 çул çитнĕ ятпа саламлатпăр!

Район ĕçченĕсем Чăваш Енĕн экономикипе социаллă пурнăçне аталантарма тивĕçлĕ тӳпе хываççĕ, сывлăха сыхлассине, вĕренĕве тата агропромышленноç комплексне, ял инфраструктурине аталантарассипе йышăннă приоритетлă наци проекчĕсене ăнăçлă пурнăçа кĕртеççĕ.

Муркаш районĕнче пурăнакансене пурне те телей, сывлăх, тăван района тата республикăна аталантарассипе пуçаруллă ĕçре ăнăçу сунатпăр!

**«Единая Россия» партин**
**Чăваш Республикинчи регион уйрăмĕ.**

**ХАКЛĂ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ!**

2014 çулхи февралĕн 10-мĕшĕнче пирĕн Муркаш районĕ 70 çул тултарчĕ. Районăн çуралнă кунĕ вăл – чи малтанах, ăна йĕркелесе яракансен тата вĕсен ĕçне малалла тăсса, района малалла аталантаракансен, районăн малашнехи шăпишĕн хăйсене яваплăха туйса вăй хуракансен уявĕ.

Муркаш районĕн çыннисем Аслă Отечественнăй вăрçăра çапăçнă, тылра вăй хунă. Вăрçă хыççăн унăн суранне сиплес тесе тимленĕ, районăн экономикине малалла аталантарнă. Ĕç условийĕсене лайăхлатас тата çынсен пурнăçне лайăхлатас тесе тăрăшнă. Çине тăрсах çулсем тунă, ялсене çут çанталăк газне кĕртессипе тимленĕ.

Çĕнĕ фермăсемпе комплекссем те, машинăпа трактор паркĕсем те, çĕнĕ шкулсемпе ача сачĕсем те, культура учрежденийсемпе больницăсем те, ытти объектсем те районта пурăнакансем тăрăшнипех çĕкленнĕ. Çулсерен улшăнса çĕнелсе, çирĕпленсе, тĕрекленсе пынă районăмăр.

Районăн 70 çулхи тапхăрне куç умне кăларсан çирĕппĕнех çапла калама пулать: сахал мар вăй хунă çак хушăра тăван Муркаш Ен малашлăхĕшĕн. Апла пулсан паян районта пурăнакансем хамăр историпе, ырă йăласемпе тата ĕçри çитĕнӳсемпе тивĕçлипех мухтанма пултараççĕ.

Çак таранччен тунă çитĕнӳсем вара патшалăх влаçĕпе вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем çине тăнипе кăна пулман. Кашни ĕç коллективĕ, предприятисемпе организацисенче, учрежденисенче вăй хуракансем, ял ĕçченĕсем, ветерансемпе çамрăксем тăрăшнипе пулнă çитĕнӳсем çаксем пурте. Мĕншĕн тесен районăн чи пысăк пуянлăхĕ вăл – унта пурăнакан пуçаруллă та маттур, хамăр района юратакан тата уншăн, унăн аталанăвĕшĕн хăйĕнчен килнине йăлт тума, пĕр-пĕрне яланах пулăшма хатĕр çынсем. Вĕсемех хамăр районăн шанчăкĕ те пулса тăраççĕ. Çакăн пек çынсемшĕн, вĕсен пурнăçне лайăхлатассишĕн ĕçлетпĕр те.

Муркаш районĕнче пурăнакансем паян эпир пирĕн аттесемпе асаттесем, аннесемпе асаннесем – пирĕн несĕлсем мĕн тунине асра тытатпăр. Района йĕркелесе, ăна аталантарса пынăшăн вĕсене чĕререн тав тăватпăр. Аслă ăру çыннисем мĕн тунине сыхласа хăварса, мĕн пуррине малалла аталантарса пыратпăр.

Паян Муркаш районĕ çирĕппĕнех малалла утать. Малашне те аталану çулĕпе пĕрлех, пĕр шухăшлă пулса, пĕр ĕмĕт-тĕллевпех утасчĕ. Çавăнпа та пурне те хамăрăн аслă ентешĕмĕрсем пекех патриотсем пулма чĕнетпĕр. Мĕншĕн тесен тăван яла, тăван района, тăван Чăваш Республикине, тăван çĕр-шыва юратсан кăна ĕç ăнать, çитĕнӳ пулать. Чун-чĕрепе хамăра патриотла туйсан кăна, чĕре çав юрату туйăмĕ пулсан çеç ĕçлес туртăм ӳсет, пултарулăх аталанать, хамăр миçе çулта тата мĕнле професси алла илнине пăхмасăр пурăнас, ĕçлес, çитĕнӳсем тăвас килет. Çакăн пек мĕн пур чун-чĕре хавалĕпе ĕçлесен вара пурнăç та хитререх пулать, тăван Муркаш районĕ те илĕртӳллĕрех, пуянрах, çирĕпрех пулать, унти пурнăç шайĕ те кунран-кун хăпарсах пырать.

Хисеплĕ ентешĕмĕрсем!

Пурсăра та Тăван Муркаш районĕ 70 çул тултарнă ятпа саламлатпăр. Пархатарлă ĕçшĕн, район аталанăвĕшĕн вăй хунăшăн чĕререн тав тăватпăр. Малашне те ĕçĕрсем ăнсах пыччăр, çитĕнӳсем пĕрин хыççăн тепри килсех тăччăр. Сывлăхăр çирĕп, кун-çулăр вăрăм та телейлĕ килтĕр. Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтĕрсем çитсе пыччăр. Çывăх çыннăрсен юратăвĕ, тимлĕхĕ сире пурăнма, ĕçлеме вăй парса тăтăр.

Уяв ячĕпе пурне те!

**И. НИКОЛАЕВ,**
**район пуçлăхĕ – депутатсен районти Пухăвĕн Председателĕ.**
**Р. ТИМОФЕЕВ,**
**район администрацийĕн пуçлăхĕ.**

**МУРКАШ РАЙОНĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ!**

Муркаш районĕн юбилейĕ ячĕпе сире чĕререн саламлатăп!

70 çул историшĕн пысăк вăхăтах мар, анчах та район унта пысăк ĕçсен çулне хывма пултарчĕ: район территорийĕ, унăн экономикипе социаллă пурнăç, культура аталанăвĕ улшăнчĕ. Пĕр япала кăна улшăнмасăр юлчĕ – ку вăл çынсем хăйсен пĕчĕк Тăван çĕр-шывне юратни.

Юбилей кунне уявланă май эсир района пуçласа йĕкелесе ертсе пыракансен йышĕнчисене тав сăмахĕпе аса илетĕр. Муркашсен ĕç паттăрлăхĕн тĕслĕхĕсемпе мухтанатăр. Вĕсем район, Чăваш Ен тата пĕтĕм çĕр-шыв аталанăвне тивĕçлĕ тӳпе хывнă.

Районта пурăнмалли çĕнĕ çурт-йĕр, социаллă пĕлтерĕшлĕ объектсем тăваççĕ, районти ял хуçалăх предприятийĕсем ял хуçалăх продукцийĕ туса илессипе малтисен шутĕнче.

Хăвăрăн ентешĕрсен çитĕнĕвĕсемпе мухтанма сирĕн сăлтав çук мар. Пултарулăх коллективĕсем чи çӳллĕ шайри фестивальсенче района тивĕçлипе кăтартаççĕ. Сирĕн спортсменсем районти кăна мар, Раççей шайĕнчи ăмăртусене те хутшăнса ăнăçусем тăваççĕ. Агропромышленноç комплексĕнче вăй хуракансен, социаллă сфера ĕçченĕсен, предпринимательство пĕрлĕхĕн представителĕсен – хăйсен ĕçĕпе тата харпăр хăй тĕслĕхĕпе район аталанăвне тивĕçлĕ витĕм кӳрекенсен тухăçлă ĕçне пĕр хут кăна мар пысăк наградăсем парса хакланă.

Районти пурнăçа хăтлă та илĕртӳллĕ тума паян сирĕн ресурссем те, хатĕрсем те, пĕлӳ те, профессионализм та пур. Çавна валли пĕтĕм вăя пĕрлештерни, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем, общество организацийĕсемпе предприятисен представителĕсем, предпринимательсем тата Муркаш районĕнче пурăнакансем пурте пĕрле çыхăнса ĕçлесе пыни кирлĕ.

Юбилей кунĕнче районта пурăнакансене, муниципалитет ăнăçлăхĕшĕн ĕçленисене тата халĕ ĕçлекенсене пурне те оптимизм, сывлăх, ĕçре ăнăçу тата çемьесенче телей сунатăп! Районăн тата сирĕн кашнийĕнех ырлăх-пурлăх шайĕ ӳссех пытăр! Юбилей ячĕпе пурсăра та!

**Л. ЧЕРКЕСОВ,**
**Чăваш Республикин муниципалитет йĕркеленĕвĕсен канашĕн председателĕ.**

## Уяв тивĕçлĕ шайра иртĕ

Депутатсен районти Пухăвĕн черетсĕр 32-мĕш ларăвĕ февралĕн 10-мĕшĕнче иртрĕ. Пĕрремĕш ыйтупа депутатсем район администрацийĕн вĕренӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн çĕнĕ ячĕ, унăн функцийĕсемпе задачисем пирки калакан положение пăхса тухса çирĕплетрĕç.

Иккĕмĕш ыйтупа район администрацийĕн депутатсен районти Пухăвĕн 2010 çулхи декабрĕн 2-мĕшĕнчи С-3/4 № «Муркаш районĕн культури: 2011 – 2020 çулсем» районти тĕллевлĕ программăна çирĕплетесси çинчен» йышăнăвĕ вăйне çухатнă тесе çирĕплетрĕç. Ку вăл РФ бюджет кодексне улшăнусем кĕртнипе çыхăннă.

Депутатсен районти Пухăвĕн черетсĕр ларăвĕ иртнĕ кун – февралĕн 10-мĕшĕ – района йĕркеленĕренпе 70 çул çитнин кунĕпе пĕр килчĕ. Çавна май район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев депутатсене çак юбилейпа саламларĕ. Вăл палăртнă тăрăх юбилейпа çыхăннă мероприятисем иртнĕ çулах пуçăннă. Район юбилейĕпе çыхăннă тĕп уяв мероприятийĕсем вара Шупашкарта К. Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче февралĕн 14-мĕшĕнче иртмелле.

Ростислав Николаевич палăртнă тăрăх Муркаш районĕн юбилейĕ ячĕпе районти пултаруллă та хастар çынсем пирки каласа паракан çĕнĕ кĕнеке – «Моргаушский район. История в лицах» пичетлесе кăларма хатĕрленеççĕ. Çавăн пекех район энциклопедине те çĕнетсе пуянлатнă хыççăн çĕнĕ вариантпа пичетлесе кăларма палăртаççĕ.

Ростислав Николаевич февралĕн 14-мĕшĕнчи уяв мероприятийĕн – «Район кунĕн» программипе паллаштарчĕ. Уяв анлă иртмелле. Унта ĕç итогĕсене те пĕтĕмлетĕç, тĕрлĕ отрасльти пултаруллă та хастар ĕçченсене чыслĕç-саламлĕç, савăнăçлă лару-тăрура Муркашсен ентешлĕхне йышăнĕç, район историйĕпе çыхăннă фильмсем те пăхма май пулĕ. Ростислав Тимофеев уявпа саламланă май çак мероприятисене пурте активлă хутшăнасса шаннине пĕлтерчĕ, район аталанăвĕшĕн, унăн малашлăхĕшĕн малалла та пĕрле ĕçлесе пыма ăнăçусем, ырлăх-сывлăх сунчĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

**Район 70 çул тултарнă май район пуçлăхĕ – депутатсен районти Пухăвĕн Председателĕ И. Николаев тата район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев сăмах илеççĕ**

# Чи пысăк пуянлăхăмăр – хамăр район çыннисем











**АТАЛАНУ ÇУЛĔ ÇĂМĂЛ ПУЛМАН**

Пирĕн Муркаш районĕ Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче – 1944 çулхи февралĕн 10-мĕшĕнче йĕркеленнĕ. Мĕн йĕркеленнĕренпех нимле йывăрлăха пăхмасăр мухтавлă çулпа утать районăмăр.

Пирĕн районтан вăрçа 9845 çын кайнă. Вăрçăран 5491 салтак таврăнайман. Вĕсен ырă ячĕсем ĕмĕр-ĕмĕрех пирĕн асăмра. Сывă юлнисене тав тунипе пĕрлех çапăçу хирĕнчен таврăнайманнисен тата йывăр сурансене пула пурнăçран уйрăлнисен, тыл ĕçченĕсемпе «вăрçă ачисен» умĕнче эпир çĕре çити пуç таятпăр.

Çак Аслă вăрçăра пирĕн районтан 5-ĕн Совет Союзĕн Геройĕсем пулса тăнă: Григорий Алексеевич Алексеев (Исетерккĕ), Яков Анисимович Анисимов (Уйкас Апаш), Борис Михайлович Васильев (Çĕмĕртлĕх Чемей), Алексей Иванович Воробьев (Çурлатри), Илья Григорьевич Мешаков (Пăсăрман). Александр Артемьевич Быков (Хуракасси выççăлкки) Мухтав орденĕн тулли кавалерĕ пулса тăнă. Вĕсен ячĕсем район историйĕнче ылтăн саспаллисемпе çыраннă: вĕсен ячĕсене районăн Хисеп кĕнекине кĕртрĕмĕр. Орденсемпе медальсем илнисем те пиншерĕн.

Çĕнтерӳшĕн тылра та хĕрӳ кĕрешӳ пынă. Фронта кайнă арçынсем вырăнне станоксем умне ватă рабочисемпе хĕрарăмсем, ачасем тăнă, уй-хирте те вĕсемех тĕп вăй пулнă. Ял çыннисем пилĕк таран юр ашса вăрман каснă, лаша вырăнне кӳлĕнсе суха тунă – пур майпа та фронта пулăшнă. Юлашки укçине те вĕсем Аслă Çĕнтерĕве çывхартма панă. 13 çулхи Э. Ситников Хĕрлĕ Çарăн çăкăр фондне 2 пăт тырă тата танк колоннине тума 1 пин тенкĕ укçа хывнă. «Манăн 4 пичче вăрçăра çапăçать. Ман вĕсене пулăшмаллах», – тенĕ вăл. Çакăн пек тĕслĕхсене татах та татах илсе кăтартма пулать. Çынсем çакăн пек пысăк чунчĕреллĕ, патриот пулни Çĕнтерĕве çывхартма пулăшнă.

Района вăрçă çулĕсенче пĕрре кăна мар оборона комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне парса чыс тунă. Çакна никам та нимĕнпе те танлаштарса параймĕ.

Вăрçă хыççăн районта пурăнакансем çине тăрсах юхăннă халăх хуçалăхне ура çине тăратассишĕн тимленĕ. Пĕчĕккĕн çĕнĕ объектсем тума пуçланă. 1950-мĕш çулсен çурринче Муркашра пĕрремĕш 10 вырăнлăх мунча хăпартнă. Муркашри МТС-ра 56 вырăнлăх общежити, шыв башнине туса лартнă. 10 çул хушшинче юсав мастерскойне, 10 вырăнлăх автогараж, минераллă удобренисем упрамалли склад, пилорама, электропередача линине, пурăнмалли çуртсем тунă.

Вăхăт иртнĕçемĕн çĕнĕрен те çĕнĕ объектсен йышĕ хушăнсах пынă районта. 1960-мĕш çулсем тĕлнелле ялсенче тĕп усадьбăсем тума пуçланă. Шкулсемпе ача сачĕсем, пурăнмалли çуртсем, выльăх-чĕрлĕх пăхакансен çурчĕсем, врач амбулаторийĕсем, клубсем тунă. Ялсен сăнĕ улшăнса-çĕнелсех пынă. Çаксем йăлтах районта пурăнакансем тăрăшнипе, вĕсем чуна парса ĕçленипе пулнă ырă улшăнусем.

Район центрĕ те çулсеренех илемленме, пуянланма пуçланă. Пĕрремĕш клуб, 2 хутлă йывăç шкул, хуçалăх таварĕсене сутмалли магазин, универмаг çуртне туса пĕтернĕ. 60-мĕш çулсен варринче Муркашра нумай хватерлĕ çуртсем çĕкленме пуçланă.

Каярахпа 90 вырăнлăх ача сачĕн, пушар деповĕн, шалти ĕçсен пайĕн, халăх сучĕн, çыхăну узелĕн, Патшалăх банкĕн, типографин, райĕçтăвкомăн çурчĕсем, перекет кассипе Муркашри 1176 вырăнлăх шкул, больница поликлиникăпа пĕрле, сĕт-çу завочĕ тата ытти объектсем пĕрин хыççăн тепри çĕкленнĕ. Тасатмалли сооруженисемпе газ пăрăхĕсем, шыв пăрăхĕсем хывма пуçланă районта. Канализаци кĕртнĕ. Урамсене электричество çутипе çутатмалла тунă. Асфальт çулсем сарнă.

Çак ырă улшăнусем пĕтĕмпех районта пурăнакансем тăрăшса вăй хунăран пулса пынă. Çулсеренех тыр-пул, çĕр улми тухăçĕ ӳссе пынă. Выльăх-чĕрлĕх продукцине ытларах илме пуçланă. Муркаш районĕ республикăра малтисен йышне кĕнĕ. Çакăн çинчен районăмăр халиччен илнĕ наградăсем те çирĕплетеççĕ.

**ЧЫСА ÇĔРЕ ӲКЕРМЕСТПĔР**

Паян та район çĕнсе илнĕ чыса ӳкерес мар тесе пурăнать, ĕçлет. Иртнĕ çул 2012 çулхи ĕç пĕтĕмлетĕвĕпе Муркаш районĕ республикăри районсем хушшинче 2 вырăна тухрĕ. Республикăри ял тăрăхĕсем хушшинче Москакасси ял тăрăхĕ çĕнтерчĕ. Обществăлла финанссемпе пĕлсе усă курассипе Раççейре иртнĕ конкурсра Муркаш районĕ унта хутшăннă районсенчен 1 вырăн йышăнма пултарчĕ. Асăннă конкурсра район иккĕмĕш хут çакăн пек сумлă вырăн йышăнчĕ.

Муркаш районĕнче **ял хуçалăхĕ** тĕп отрасль шутланать. Çулталăк пĕлтĕр çăмăлах пулмарĕ пулин те, ял хуçалăх продукцине ял хуçалăх предприятийĕсенче висĕм çулхинчен 8 процент ытларах туса илчĕç. Сĕт туса илессипе «Путь Ильича», Суворов яч. хис., «Оринино», «Свобода», «Ударник» хуçалăхсем ĕçлеççĕ. Суворов яч. хис., «Оринино» хуçалăхсем пахалăхлă сĕт туса илессипе палăрса тăраççĕ. Ильич яч. хис. хуçалăх элитăллă тырă вăрлăхĕ туса илсе сутать. «Ударникпа» «Картофель» агросоюз вара элитăллă çĕр улми вăрлăхне туса илессипе специализациленеççĕ. «ВаСем» хуçалăх «иккĕмĕш çăкăрпа» пахча çимĕç туса илессипе ырă ят çĕнсе илчĕ. Кунта тухăçлă çĕр улми, купăста туса илеççĕ. Суворов яч. хис. тата Е. Андреев яч. хис. хуçалăхсем вара çĕре «биологизацилессипе» ĕçлеççĕ, экологи тĕлĕшĕнчен таса продукци туса илеççĕ.

**Промышленность** предприятийĕсем те паян ăнăçлă аталанса пыраççĕ. Ырă ят çĕнсе илнĕ «Сеспельпе», Муркашри кирпĕч завочĕпе, «Моргаушская» МСО-па пĕрлех юлашки çулсенче чылай çĕнĕ предприяти («Карина», «МирТрубПласт», «Атриум», «Магма», «СпецТранс», «Фаворит», Вязов уйрăм предприниматель тата ыттисем) ĕçлеме пуçларĕ. Вĕсем те ăнăçлă аталанаççĕ.

Иртнĕ çул «Сеспельте» танк-контейнерсем кăларакан çĕнĕ цех ĕçлеме пуçларĕ. Кунта робот системине производствăра усă курма пуçларĕç, лазер системи те пурнăçа кĕчĕ.

**Суту-илӳпе предпринимательствăра** та курăмлă утăмсем сахал мар. Муркашпа Мăн Сĕнтĕр райповĕсем малтан çĕнсе илнĕ чикĕсенчен пĕрре те чакмаççĕ. Малтанхи пекех Чăвашпотребсоюзра та, Центросоюзра та малта пыраççĕ. Иртнĕ çул район центрĕнче Муркаш райповĕ çĕнĕ «Бриз» ресторан туса лартрĕ. Мăн Сĕнтĕрте уйрăм çыннăн «Космос» сĕтел-пукан сутмалли магазинĕ тата ытти объектсем хута кайрĕç.

**Тӳлевлĕ пулăшу парассипе** вара «Муркашри çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕ» тата «Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха ертсе пыракан компани» ăнăçлă ĕçлесе пыраççĕ.

Халăха газпа, электричествăпа тивĕçтерессе те йĕркеллĕ шайрах. Ку енĕпе Муркашри «Газпромгазораспределение Чебоксары» тата МРСК «Волги» Чувашэнерго» Çурçĕр производство уйрăмĕ – Муркашри районти электричество сечĕсем» акционерсен усă обществисем йĕркеллĕ ĕçлесе пыраççĕ.

**Строительствăра** та курăмлă утăмсем сахал мар пирĕн. Юлашки çулсенче районта кашни çулах çĕнĕ нумай хватерлĕ çуртсем çĕкленчĕç. Ку енĕпе уйрăмах «Моргаушская» МСО лайăх ĕçлет. Иртнĕ çул Муркашра 24 хватерлĕ çурт хута кайрĕ. Халĕ предприяти Москакассинче 21 хватерлĕ çурт тăвассипе ĕçлет. «ПМК «Водоснабжения» Мăн Сĕнтĕрте 51 хватерлĕ çурт тума пуçларĕ.

Тĕрлĕ программăсене хутшăнса район ялта пурăнакансене çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма пулăшассипе ăнăçлă ĕçлесе пырать. Çав шутра – тăлăх ачасене çурт-йĕрпе тивĕçтерессипе те. Кăçал çак тĕллевпе 15 хватерлĕ çурт тума палăртнă.

Районта çулсем тăвас, вĕсене юсас, тытса тăрас ыйтусем те куç умĕнчех.

**Халăхăн сывлăхне сыхлас** системăра та юлашки çулсенче ырă улшăнусем пĕрин хыççăн тепри пулса иртеççĕ. Районти медицина учрежденийĕсем çĕнĕ оборудованипе пуянланчĕç. «Земство тухтăрĕ» программăпа пирĕн патра 17 çамрăк тухтăр ĕçлеме пуçларĕ. Халăхăн пур категорине те диспансеризацилеме пуçлани те патшалăх енчен тимлĕх ӳснине кăтартса парать. Сывлăх çирĕп пулсан кăна çитĕнӳллĕн вăй хума пулать. Иртнĕ çул Шомикра çĕнĕ ФАП хута кайрĕ.

**Вĕренӳ системинче** те çĕнĕлĕхсем пĕрин хыççăн тепри пурнăçа кĕрсе пыраççĕ. Юлашки çулсенче шкулсене тĕплĕн юсассипе, шкул столовăйĕсене тĕплĕн юсаса çĕнĕ оборудованипе, сĕтел-пуканпа тивĕçтерессипе йĕркеллĕ ĕçлетпĕр.

Чуманкасси шкулĕпе кунти ача садне энерги перекетлеме май паракан модульлĕ котельнăйсем çине куçартăмăр.

**Физкультурăпа спортра** та районăн çитĕнӳсем сахал мар. Халăх йышĕн пĕрре виççĕмĕш пайĕ спортпа туслă пулни вара савăнтарать. Районта юлашки çулсенче çĕнĕ спорт ăмăртăвĕсем сахал мар пулчĕç. Пĕтĕмĕшле вара район шайĕнче 50 ытла тата хуçалăхсенче спортăн 16 тĕсĕпе тĕрлĕ ăмăртусем иртеççĕ çулсерен. Иртнĕ эрнере кăна афганец салтаксене асăнса район администрацийĕн пуçлăхĕн Кубокне çĕнсе илессишĕн республикăри 2-мĕш бокс турнирĕ Муркашсем çĕнтернипе вĕçленчĕ.

**Культурăра** та ырă улшăнусем сахал мар. Районта «халăх коллективĕ» ята 12 коллектив çĕнсе илнĕ. Ытти коллективсем те пултарулăхпа палăраççĕ. Иртнĕ çул Мăн Сĕнтĕрте информаципе культура центрĕнче çĕнĕ зал хута кайрĕ. Асăннă сферăра республикипе те кун пек çĕнĕ объектсем юлашки вăхăтра ниçтах та туман.

Çак ырă улшăнусем паян патшалăх влаçĕпе вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем халăхшăн тăрăшнине кăтартса параççĕ. Мĕншĕн тесен пирĕн чи пысăк пуянлăхăмăр – çынсем, районта пурăнакансем. Ку таранччен мĕн туни – йăлтах вĕсен пурнăçне лайăхлатас тесе тунă утăмсем. Аслă ăрури çынсем, пурнăçри йывăрлăха кĕрсе ӳкнĕ çынсем – районта пурăнакан кашни çын хăйне çирĕп туйтăр тесе тимлемелле пирĕн малашне те.

Чăваш мĕн ĕлĕкренпех ĕçченлĕхпе палăрнă. Е. Андреевпа О. Федорова Социализмла Ĕç Геройĕ ята тивĕçнĕ. Вĕсем пек маттур та пултаруллă çынсем пирĕн кашни сферăрах пур. Эпир вĕсемпе мухтанатпăр, вĕсене чĕререн тав тăватпăр.

Паянхи çамрăксем те ветерансен паттăрлăхне, вĕсен ырă тĕслĕхне малалла тытса пыраççĕ. Пирĕн районтан кайнă салтаксем Афган, Чечен вăрçисенче хăйсен чысне çухатмарĕç, паттăрлăхпа хăюлăхшăн çĕр-шыв наградисене тивĕçрĕç, Николай Смирновпа Евгений Борисов вара – Раççей Геройĕн ятне те. Районти çамрăксем паян та вĕренӳре те, производствăра та çитĕнӳсем тăваççĕ.

Муркаш районĕн 70 çулхи юбилейне Сочинче иртекен хĕллехи Олимп вăййисем вăхăтĕнче паллă тăватпăр. Çакă хăех Раççей тĕнчипех сумлă çĕр-шыв пулса тăнине çирĕплетсе парать. Тăван çĕр-шывăмăр вара тăван районтан, хамăр çуралса ӳснĕ ялтан, ача чух çара уран чупнă урамран, аттепе анне тунă тăван килтен пуçланать.

Муркаш районĕ чăннипех те илемлĕ. Çак илем вара пирĕн чун-чĕре илемĕнчен пуçланать. Эппин, айтăр-ха, Культура çулталăкĕнче те, малашне те тăван районăмăр татах та çирĕпрех, вăйлăрах, хитререх пултăр тесе тăрăшар.










# Района ертсе пынă

**КПСС райкомĕн пĕрремĕш секретарĕсем**

1944 çулхи мартăн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1947 çулхи декабрĕн 23-мĕшĕччен – В.И. ИЛЬИН.

1947 çулхи декабрĕн 30-мĕшĕнчен пуçласа 1950 çулхи сентябрĕн 7-мĕшĕччен – Д.П. КИРПИЧЕВ.

1950 çулхи январьтен пуçласа 1952 çулхи августчен – М.В. ЗАЙЦЕВ.

1952 çулхи августăн 12-мĕшĕнчен пуçласа 1955 çулхи октябрĕн 30-мĕшĕччен – Т.Л. ЛОГИНОВ.

1955 çулхи октябрĕн 30-мĕшĕнчен пуçласа 1959 çулхи июлĕн 25-мĕшĕччен – Е.Я. МИДАКОВ.

**Райĕçтăвком председателĕсем**

1944 çулхи февралĕн 27-мĕшĕнчен пуçласа 1947 çулхи августăн 30-мĕшĕччен – Г.Ф. ФЕДОРОВ.

1947 çулхи октябрьтен пуçласа 1950 çулхи августчен – В.И. АНДРЕЕВ.

1950 çултан пуçласа 1952 çулччен – Т.Л. ЛОГИНОВ.

1952 çулхи августран пуçласа 1959 çулхи июльччен – П.П. ПЕТРОВ.

**1964 çулта Муркаш районĕ иккĕмĕш хут йĕркеленнĕ.**

**КПСС райкомĕн пĕрремĕш секретарĕсем**

1964 çулхи мартăн 10-мĕшĕнчен пуçласа 1966 çулхи сентябрĕн 6-мĕшĕччен – П.А. ЖУРАВЛЕВ.

1966 çулхи октябрĕн 6-мĕшĕнчен пуçласа 1970 çулхи декабрĕн 26-мĕшĕччен – А.П. ИВАКОВ.

1970 çулхи декабрĕн 26-мĕшĕнчен пуçласа 1979 çулхи октябрĕн 22-мĕшĕччен – В.Ф. ГРИГОРЬЕВ.

1979 çулхи октябрĕн 22-мĕшĕнчен пуçласа 1990 çулхи февралĕн 15-мĕшĕччен – В.С. КРАСНОВ.

1990 çулхи майăн 12-мĕшĕнчен пуçласа 1991 çулхи сентябрĕн 23-мĕшĕччен – М.М. ПУШКИН.

**Райĕçтăвком председателĕсем**

1964 çулхи мартăн 11-мĕшĕнчен пуçласа 1966 çулхи сентябрĕн 6-мĕшĕччен – А.П. ИВАКОВ.

1966 çулхи сентябрĕн 6-мĕшĕнчен пуçласа 1973 çулхи октябрьччен – Н.Г. БОРИСОВ.

1973 çулхи ноябрĕн 12-мĕшĕнчен пуçласа 1976 çулхи октябрĕн 9-мĕшĕччен – С.П. НИКИТИН.

1976 çулхи октябрьтен пуçласа 1979 çулхи сентябрьччен – В.С. КРАСНОВ.

1979 çулхи сентябрĕн 22-мĕшĕнчен пуçласа 1983 çулхи декабрĕн 27-мĕшĕччен – Л.С. СОФРОНОВ.

1984 çулхи январьтен пуçласа 1988 çулхи апрельччен – В.И. ЕГОРОВ.

1988 çулхи апрельтен пуçласа 1991 çулхи декабрьччен – В.М. РУБЦОВ.

**Район администрацийĕн пуçлăхĕсем**

1991 çулхи декабрĕн 9-мĕшĕнчен пуçласа 1994 çулхи сентябрĕн 28-мĕшĕччен – В.М. РУБЦОВ.

1994 çулхи сентябрĕн 28-мĕшĕнчен пуçласа 1996 çулхи декабрĕн 25-мĕшĕччен – И.Г. КОНСТАНТИНОВ.

1996 çулхи декабрĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа 2004 çулхи мартăн 11-мĕшĕччен – В.И. ВЯЗОВ.

2004 çулхи мартăн 11-мĕшĕнчен пуçласа 2011 çулхи декабрĕн 18-мĕшĕччен – Ю.А. ИВАНОВ.

2012 çулхи январĕн 27-мĕшĕнчен пуçласа паянхи кунччен – Р.Н. ТИМОФЕЕВ.

**Район историйĕнчен**

# Çапла çуралнă районăмăр

Муркаш районне Чăваш АССР Аслă Канашĕн Президиумĕн 1944 çулхи февралĕн 10-мĕшĕнчи Указĕпе тата РСФСР Аслă Канашĕн 1944 çулхи февралĕн 15-мĕшĕнчи Указĕпе килĕшӳллĕн йĕркеленĕ.

Çак вăхăтчен ку тăрăхри ялсем Элĕк, Сĕнтĕр, Советски, Ишлей районĕсене кĕнĕ. Муркаш районне Элĕк районĕнчен Матьăк, Панкли, Шĕвĕш, Йӳçкасси ял Совечĕсене, Ишлей районĕнчен Шурча, Мăн Янăш, Очăкасси, Тивĕш, Хăймалакасси, Ярапайкасси ял Совечĕсене, Сĕнтĕр районĕнчен Атапай, Кашмаш, Муркаш, Оринин, Пашалукасси, Çатракасси ял Совечĕсене куçарнă. Район центрне Муркаша туса хунă.

Çапла вара Муркаш районне 19 ял Совечĕ, 25284 çын, 72 колхоз-артель, 99 ял, 5485 уйрăм хуçалăх, 33402,39 гектар çĕр кĕнĕ. Вăтам шкулсем 4, тулли мар вăтам шкулсем 9, пуçламăш шкулсем 6 пулнă.

Медицина учрежденийĕсенчен çаксем пулнă: Муркашри больница, врач пункчĕсем 2, фельдшерпа акушер пункчĕ 1, акушер пункчĕ 2, ача çуратмалли уйрăмсем 2, фельдшер пункчĕсем 3, трахома пункчĕсем 12. Ялпосем 6, ялпо уйрăмĕсем 9 пулнă вăл вăхăтра.

Çĕнĕ район йĕркелени районти организацисене, колхозсене, ял Совечĕсене конкретлă тата оперативлă ертсе пыма май панă.

Муркаш районĕ 1944 çулхи мартăн 30-мĕшĕ тĕлне пур яла та хăйĕн шутне илсе пĕтернĕ. Çапла вара района йĕркелес ĕç вĕçленнĕ. Анчах та хăш-пĕр ял Совет территорийĕнчи çынсем унчченхи районсенчех юласшăн пулни палăрнă. Çавăнпа та Чăваш АССР Аслă Канашĕн Президиумĕн 1944 çулхи июнĕн 29-мĕшĕнче йышăннă постановленийĕпе килĕшӳллĕн Янăш тата Хăймалакасси ял Совечĕсен территорийĕсенчи ялсем Шупашкар районне, Шĕвĕш ял Совечĕн территорийĕ Элĕк районне куçнă. Советски районĕнчен пирĕн района Чуманкасси тата Тойкилтĕ ял Совечĕсене куçарнă.

Вăрçă çулĕсенче çуралнă çĕнĕ районăн çыннисем фашистла Германие çапса аркатас ĕçе пысăк тӳпе хывнă. Уншăн пĕр хут кăна мар СССР Оборона Патшалăх Комитечĕн куçса çӳрекен ялавĕсене илме тивĕçнĕ. Районтан Аслă Отечественнăй вăрçа 9845 çын тухса кайнă, 5491 çын каялла таврăнайман.

Тылра та фронта пулăшма ырми-канми ĕçленĕ. Пилĕк таран юр ашса вăрман каснă, юлашки кĕрпепе услам çăва сутса заем çыраннă, унсăр пуçне çар техники тума укçа-тенкĕ нумай пухса панă. «Пĕтĕмпех – фронта валли, пĕтĕмпех – çĕнтерӳшĕн» – çакăн пек девиз пулнă кашни çыннăн.

Чăваш АССР-ĕнче ĕçлекенсем «Колхозник Чувашии» танк колонни, «Комсомолец Чувашии» çар самолечĕсен эскадрилйи тума укçа пухас ĕçе йĕркелесе янă.

Пирĕн район çыннисем те ку тĕлĕшпе ырă тĕслĕх кăтартнă. Акă «Авангард» колхоз ĕçченĕсем танк колонни тума 80 пин тенкĕ куçарса панă. Çак колхозри Зоя Синичкина тата Ольга Кудряшова патшалăх заемĕн облигацийĕсене 1000-шер тенкĕлĕх туяннă. «Красное Сормово» колхоз председателĕ П.Н. Майков тата ферма заведующийĕ С.М. Соловьев çар самолечĕ тума 50-шар пин тенкĕ укçа хывнă. Кун пек тĕслĕхсем татах нумай пулнă.

Пĕтĕмлетсе каласан Хĕрлĕ Çара пулăшма укçа-тенкĕ, тырă, тăхăнмалли ăшă япаласем пухни халăхăн патриотизмне уççăн кăтартса парать.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче район çыннисем юхăннă хуçалăха ура çине тăратассишĕн ырми-канми тăрăшнă. 1947 çулта район гектартан вăтамран 13 – 15 центнер тырă пухса кĕртнĕ. Ку кăтарту вăрçăчченхи çулхинчен 2 – 3 центнер нумайрах.

1950 çул тĕлне выльăх-чĕрлĕх продукцийĕ туса илессин шайне икĕ хут ӳстерннĕ. Çапла майпа район аталанса, çирĕпленсе, вăй илсе пынă. Çынсен пурнăç условийĕсем те лайăхланнă.

1950-мĕш çулсенче район историйĕнче каллех улшăнусем пулнă. ЧАССР Аслă Канашĕн Президиумĕн 1959 çулхи постановленийĕпе Муркаш районне пĕтернĕ. Унти ялсене Сĕнтĕр тата Элĕк районĕсене кĕртнĕ.

Тепĕр 3 çултан, 1962 çулхи декабрĕн 20-мĕшĕнче, ЧАССР Аслă Канашĕн Президиумĕн постановленийĕпе Муркаш районне кĕнĕ мĕн пур ялсене Шупашкар районне кĕртнĕ.

1964 çулхи февралĕн 29-мĕшĕнче ятарлă постановленипе Муркаш районĕн хальхи территорине çĕнĕрен йĕркелеме йышăннă. Пĕрремĕш йĕркелӳ сессийĕ 1964 çулхи мартăн 11-мĕшĕнче пулнă. Апла пулсан Муркаш районне пуçласа йĕркеленĕренпе кăçал 70 çул, юлашки хут йĕркеленĕренпе вара 50 çул пулать.

**Архив материалĕсем тăрăх.**

# Эпир çĕнсе илнĕ наградăсем

***Муркаш районĕн историйĕ пуян. Çултан-çул вăл ӳсĕмлĕ аталанса пырса 70 çул хушшинче çĕнĕрен çĕнĕ чикĕсене çĕнсе илнĕ. Муркаш тăрăхĕ республикăра та, çĕр-шыв шайĕнче те ырă ята тивĕçме пултарнă. Тунă çитĕнӳсене, ӳсĕмсене тивĕçлипех хакланă. Çĕнсе илнĕ наградăсен пухмачĕнче Пĕтĕм Союз, Пĕтĕм Раççей, республика шайĕнчисем сахал мар. Çакă вăл – пĕтĕмпех район историйĕ, унăн летопиçĕн манăçми страницисем.***

**ÇĔР-ШЫВ НАГРАДИСЕМ**

**1978 çул**

* Производство эффективлăхне тата ĕç пахалăхне ӳстерессишĕн, 1977 çулхи халăх хуçалăх планне ăнăçлă пурнăçлассишĕн пынă Пĕтĕм Союзри социализмла ăмăртăва хутшăнса чи пысăк кăтартусем тунăшăн района КПСС Тĕп Комитечĕн, СССР Министрсен Совечĕн, ВЦСПС-ăн тата ВЛКСМ Тĕп Комитечĕн **куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне** панă.

**1984 çул**

* Выльăх-чĕрлĕхе ăнăçлă хĕл каçарассишĕн, 1983 – 1984 çулсенчи хĕллехи тапхăрта выльăх-чĕрлĕх продукцийĕ туса илессине тата хатĕрлессине ӳстерессишĕн пынă Пĕтĕм Союзри социализмла ăмăртăва хутшăнса чи пысăк кăтартусем тунăшăн района КПСС Тĕп Комитечĕн, СССР Министрсен Совечĕн, ВЦСПС-ăн тата ВЛКСМ Тĕп Комитечĕн **Хисеп грамотипе** наградăланă.

**1987 çул**

* 1986 çулхи экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕн планне ăнăçлă пурнăçлассишĕн пынă Пĕтĕм Союзри социализмла ăмăртура çĕнтернĕшĕн района КПСС Тĕп Комитечĕн, СССР Министрсен Совечĕн, ВЦСПС-ăн тата ВЛКСМ Тĕп Комитечĕн **куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне** панă.

* * *

* СССР экономикипе социаллă пурнăçне аталантармалли 1986 çулхи патшалăх планне ăнăçлă тултарнăшăн «Свобода» пĕрлешӳллĕ хуçалăха КПСС Тĕп Комитечĕн, СССР Министрсен Совечĕн, ВЦСПС-ăн тата ВЛКСМ Тĕп Комитечĕн **куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне** панă.

**1988 çул**

* Выльăх-чĕрлĕхе ăнăçлă хĕл каçарассишĕн, 1987 – 1988 çулсенчи хĕллехи тапхăрта выльăх-чĕрлĕх продукцийĕ туса илессине тата хатĕрлессине ӳстерессишĕн пынă Пĕтĕм Союзри социализмла ăмăртăва хутшăнса чи пысăк кăтартусем тунăшăн «Герой» пĕрлешӳллĕ хуçалăха КПСС Тĕп Комитечĕн, СССР Министрсен Совечĕн, ВЦСПС-ăн тата ВЛКСМ Тĕп Комитечĕн **Хисеп грамотипе** наградăланă.

**1992 çул**

* Пĕтĕм Раççейри конкурса хутшăнса ăратлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессипе 1991 çулта чи пысăк кăтартусем тунăшăн Суворов ячĕпе хисепленекен пĕрлешӳллĕ хуçалăха **1-мĕш степень дипломпа** наградăланă.

**2009 çул**

* Пĕтĕм Раççейри «Муниципалитет районĕн чи лайăх администрацийĕ» конкурса хутшăнса 3-мĕш вырăн йышăннăшăн район администрацийĕ **диплома** тивĕçнĕ.

**2010 çул**

* Пĕтĕм Раççейри «Обществăлла финанссене йĕркелесе пырассин сферинчи чи лайăх муниципалитет йĕркеленĕвĕ» 3-мĕш конкурса хутшăнса район **1-мĕш степень диплома** тивĕçнĕ.

**2011 çул**

* Пĕтĕм Раççейри «Обществăлла финанссене йĕркелесе пырассин сферинчи чи лайăх муниципалитет йĕркеленĕвĕ» 4-мĕш конкурса хутшăнса район «Бюджета планлассин тата бюджета пурнăçлассин пысăк пахалăхĕшĕн» номинацире çĕнтерсе **диплома** тивĕçнĕ.

**2013 çул**

* Пĕтĕм Раççейри «Обществăлла финанссене йĕркелесе пырассин сферинчи чи лайăх муниципалитет йĕркеленĕвĕ» 6-мĕш конкурса хутшăнса район **1-мĕш степень диплома** тивĕçнĕ.

**РЕСПУБЛИКА НАГРАДИСЕМ**

Района КПСС Чăваш обкомĕн, Чăваш АССР Министрсен Совечĕн, профсоюзсен область совечĕн тата ВЛКСМ обкомĕн **куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне тата пĕрремĕш степень дипломне** панă:

* **1985 çулта** – социализмла ăмăртура тунă пысăк çитĕнӳсемшĕн;

– суту-илӳ ĕçне лайăх йĕркеленĕшĕн.

* **1986 çулта** – пурăнмалли çурт-йĕр тата культурăпа социаллă объектсем тăвас енĕпе вун иккĕмĕш пилĕк çуллăхăн экономикăпа социаллă аталану планĕсене ăнăçлă тултарнăшăн.

* **1988 çулта** – 1987 çулхи тăваттăмĕш квартал итогĕсем тăрăх социализмла ăмăртура пысăк кăтартусем тунăшăн, пурăнмалли çурт-йĕр, социаллă тата культура пĕлтерĕшлĕ объектсем тăвассипе вун иккĕмĕш пилĕк çуллăхăн экономикăпа социаллă аталану планĕсене ăнăçлă пурнăçланăшăн.

* **1989 çулта** – ял пурнăçне çĕнетсе улăштарнăшăн.

**1987 çул**

* Социализмла ăмăртура пысăк кăтартусем тунăшăн, пилĕк çуллăх заданийĕсене ăнăçлă пурнăçланăшăн 1986 çул итогĕсем тăрăх района вун иккĕмĕш пилĕк çуллăх çĕнтерӳçисен **республикăри Хисеп кĕнекине кĕртнĕ.**

* * *

Района КПСС Чăваш обкомĕн, Чăваш АССР Министрсен Совечĕн, профсоюзсен область совечĕн тата ВЛКСМ обкомĕн **«Хастар ĕçшĕн» дипломне** панă:

* **1974 çулта** – выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлессине ӳстернĕшĕн;

– ĕнесенчен чи нумай сĕт суса илнĕшĕн;

– аш-какай туса илессине тата хатĕрлессине ӳстернĕшĕн (1-мĕш вырăн).

* **1975 çулта** – пысăк пахалăхлă выльăх апачĕ туса илессине тата хатĕрлессине ӳстернĕшĕн;

– пысăк пахалăхлă çăм туса илессине тата хатĕрлессине ӳстернĕшĕн;

– тĕш тырăпа пăрça йышши культурăсенчен пысăк тухăç илнĕшĕн;

– пысăк тухăçлă çĕр улмипе пахча çимĕç туса илнĕшĕн.

* **1978 çулта** – выльăх-чĕрлĕх фермисене комплекслă механизацилемелли плансене ăнăçлă тултарнăшăн;

– аш-какай туса илессине тата хатĕрлессине ӳстернĕшĕн.

* **1979 çулта** – органикăллă удобренисем пухассине тата тăпрана хывассине лайăх йĕркеленĕшĕн.

* **1982 çулта** – хуçалăхпа финанс ĕçĕ-хĕлĕн чи лайăх кăтартăвĕсемшĕн.

* **1983 çулта** – выльăхсен кĕтĕвне çĕнетсе пырассине лайăх йĕркеленĕшĕн тата çамрăк выльăхсене сыхласа хăварнăшăн;

– выльăх-чĕрлĕхе ăнăçлă хĕл каçарнăшăн, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем сутăн илессине лайăх йĕркеленĕшĕн;

– колхозсемпе совхозсен финанспа хуçалăх ĕçĕ-хĕлĕн чи лайăх кăтартăвĕсемшĕн.

* **1984 çулта** – эрозипе кĕрешес тĕлĕшпе республикăри социализмла ăмăртура пĕрремĕш вырăн йышăннăшăн;

– çĕр улмипе пахча çимĕç пухса кĕртес тĕлĕшпе чи пысăк кăтартусем тунăшăн;

– аш-какай туса илессине тата хатĕрлессине ӳстернĕшĕн.

* **1986 çулта** – колхозсемпе совхозсен хуçалăхпа финанс ĕçĕ-хĕлĕн чи лайăх кăтартăвĕсемшĕн;

– 1986 çулхи январь – сентябрь уйăхĕсенче выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илессине тата хатĕрлессине ӳстернĕшĕн;

– выльăх-чĕрлĕхе ăнăçлă хĕл каçарнăшăн, 1985 – 1986 çулсенчи хĕллехи тапхăрта выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илессине тата хатĕрлессине ӳстернĕшĕн.

* **1987 çулта** – 1986 çулта выльăхсене çулла кĕтӳре çӳретнĕ тапхăрта выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илессине тата хатĕрлессине ӳстернĕшĕн;

– 1986 çулхи тăхăр уйăхра выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илессине тата хатĕрлессине ӳстернĕшĕн;

– колхозсемпе совхозсен 1986 çулхи хуçалăхпа финанс ĕçĕ-хĕлĕн лайăх кăтартăвĕсемшĕн;

– 1987 çулхи пĕрремĕш кварталта социализмла ăмăртура пысăк кăтартусем тунăшăн, çынсен йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерес енĕпе вун иккĕмĕш пилĕк çуллăхăн экономикăпа социаллă пурнăç планĕсене ăнăçлă пурнăçланăшăн.

* **1988 çулта** – выльăх-чĕрлĕхе ăнăçлă хĕл каçарнăшăн, 1987 – 1988 çулсенчи хĕллехи тапхăрта выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илессине тата хатĕрлессине ӳстернĕшĕн.

* **1991 çулта** – районсем хушшинчи социализмла ăмăртăва хутшăнса 1991 çулхи виççĕмĕш кварталта пысăк кăтартусем тунăшăн.

**РАЙОН РЕСПУБЛИКА ДИПЛОМĔСЕНЕ ТИВĔÇНĔ**

* **1994 çулта** – 1994 çулта пысăк тухăçлă çĕр улми туса илнĕшĕн.

* **1995 çулта** – 1995 çулта сĕт туса илессипе тунă чи пысăк кăтартусемшĕн;

– 1995 çулта çĕр улми туса илессипе пысăк кăтартусем тунăшăн.

* **1996 çулта** – 1996 çулта аш-какай туса илессипе пысăк кăтартусем тунăшăн;

– 1996 çулта сĕт туса илессипе пысăк кăтартусем тунăшăн;

– 1996 çулта çĕр улми туса илессипе пысăк кăтартусем тунăшăн.

* **1997 çулта** – 1997 çулта аш-какай туса илессипе чи пысăк кăтартусем тунăшăн.

* **1998 çулта** – 1998 çулта тĕш тырă тата çĕр улми туса илессипе чи пысăк кăтартусем тунăшăн;

– 1998 çулта аш-какай тата сĕт туса илессипе чи пысăк кăтартусем тунăшăн.

* **1999 çулта** – 1999 çулта ӳсентăран продукцийĕ туса илессипе пысăк кăтартусем тунăшăн;

– «Чăваш Республикинчи чи хăтлă ял» конкурсра 1999 çулта 1-мĕш вырăн йышăннăшăн.

* **2000 çулта** – Чăваш Республикинчи районсем хушшинчи экономика ăмăртăвĕнче 1999 çул итогĕсемпе 1-мĕш вырăн йышăннăшăн.

* **2001 çулта** – Чăваш Республикинчи районсем хушшинчи экономика ăмăртăвĕнче 2000 çул итогĕсемпе 2-мĕш вырăн йышăннăшăн.

* **2002 çулта** – 2002 çулта ял хуçалăх продукцийĕ туса илессипе пысăк чикĕсем çĕнсе илнĕшĕн;

– Чăваш Республикинчи районсем хушшинчи экономика ăмăртăвĕнче 2001 çул итогĕсемпе 2-мĕш вырăн йышăннăшăн;

– ĕç сыхлавĕ енĕпе Чăваш Республикинчи хуласемпе районсен 2001 çулхи смотр-конкурсĕнче çĕнтернĕшĕн.

* **2004 çулта** – районсен экономика ăмăртăвĕнче 2003 çул итогĕсемпе 1-мĕш вырăн йышăннăшăн.

* **2008 çулта** – районсен экономика ăмăртăвĕнче 2007 çул итогĕсемпе 3-мĕш вырăн йышăннăшăн.

* **2010 çулта** – республикăри «2010 çулхи чи лайăх инвестици проекчĕ» конкурса хутшăнса «Чи лайăх муниципаллă проект» номинацире 1-мĕш вырăн йышăннăшăн.

* **2011 çулта** – ĕç сыхлавĕ енĕпе муниципалитет районĕсемпе хула округĕсен 2010 çулхи смотр-конкурсĕнче 2-мĕш вырăн йышăннăшăн;

– мобилизаци ĕçне-хĕлне йĕркелессипе муниципалитет районĕсемпе хула округĕсен 2010 çулхи конкурсĕнче 3-мĕш вырăн йышăннăшăн.

* **2012 çулта** – вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ĕçĕ-хĕлĕн эффективлăхне комплекслă хак панин кăтартăвĕсемпе.

* * *

**Гражданла оборона тата унăн сыпăкĕсен системине çĕнетсе лайăхлатас, аварисемпе стихийăллă инкексене пĕтерес енĕпе çитĕнӳсем тунăшăн район дипломсене тивĕçнĕ:**

* **2005 çулта** – 1-мĕш степень диплома;

* **2008 çулта** – 1-мĕш степень диплома;

* **2009 çулта** – 3-мĕш степень диплома;

* **2010 çулта** – 3-мĕш степень диплома;

* **2012 çулта** – 2-мĕш степень диплома.

# Çынсемшĕн тăрăшасси тĕп вырăнта пулнă

## Пурнăç пархатарĕ



Мари Республикин Горномари районĕн делегацине Муркаш çĕрĕ çинче çăкăр-тăварпа кĕтсе илеççĕ.

**Районăмăр 70 çул тултарчĕ. Районăн иртнĕ тапхăрти историйĕн манăçми страницисене уçнă май ăна аталантарса ӳсĕм çулĕпе илсе пыма чăннипех те пысăк тӳпе хывнисем куç умне тухаççĕ. Çавăн пек çынсенчен пĕри темелле те ĕнтĕ Валериан Семенович Краснова. Унăн пĕтĕм пурнăçĕ, ĕçĕ-хĕлĕ район пурнăçĕпе уйрăлми тачă çыхăннă. 1964 çултан тытăнса 1974 çулччен «Передовик» колхоз, кайран ăна «Ленинский путь» колхозпа пĕрлештерсен «Передовик» совхоз ертӳçинче ĕçлесе арканма тытăннă хуçалăха ура çине çирĕп тăратни, хыççăн икĕ çул çурă хушши районти ял хуçалăх управленине ертсе пыни, çавăн чухлех райĕçтăвком председателĕнче ĕçлени, вунă çул ытла КПСС райкомĕн 1-мĕш секретарĕ пулса района ертсе пыни, кайран 1990 – 1992 çулсенче Чăваш Республикин ял хуçалăх министрĕнче ĕçленĕ хыççăн тăхăр çул хушши Муркашри чăх-чĕп фабрикине ертсе пыни – Валериан Семеновичăн пурнăç çулĕн манăçми тапхăрĕ.**

**Ял хуçалăх наукисен кандидачĕн, ЧР тава тивĕçлĕ агрономĕн, РФ ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕн хисеплĕ ячĕсем, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав, «Хисеп палли» орденсемпе медальсем – унăн пархатарлă ĕçне çĕр-шыв шайĕнче пысăка хурса хакланин çирĕплетĕвĕ.**

**Район юбилейĕ умĕн Валериан Семеновичпа тĕл пулнă май хăй ял хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕнче, райĕçтăвком председателĕнче, КПСС райкомĕн пĕрремĕш секретарĕнче ĕçленĕ çулсене аса илсе куç умне кăларма ыйтрăм:**

– «Передовик» хуçалăха 10 çул хушши ăнăçлă ертсе пынă хыççăн КПСС Муркаш райкомĕн бюровĕ сĕннипе тата Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствин хушăвĕпе мана 1974 çулхи апрелĕн 12-мĕшĕнче – Космонавтика кунĕнче – районти ял хуçалăх управленине ертсе пыма çирĕплетрĕç. Пысăк шанăç – пысăк ответлăх. Çапах та ял хуçалăх управленийĕн ертӳçи пулса районăн ял хуçалăх отрасльне ертсе пырасси маншăн пĕлмен-туман çĕнĕлĕх пулса тăчĕ тесе калаймастăп. Вунă çул хушши пĕрлешӳллĕ хуçалăх ертӳçинче ĕçлени чылай пулăшрĕ. Çак вăхăта районти ытти хуçалăхсен ертӳçисемпе специалисчĕсене, ял хуçалăх управленийĕн ĕçченĕсене лайăх пĕлсе çитнĕччĕ ĕнтĕ. Сăмах май вара кайран ял хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕнче вăй хуни райĕçтăвком председателĕнче ĕçлеме тытăнсан, хăйне май ку тапхăр парти райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ пулса района ертсе пынă чухне те кирлĕ пулчĕ, ĕçре пулăшрĕ.

Çавна каласа хăварасшăн. Ял хуçалăх управленийĕнче вăй хуракан тĕп специалистсенчен чылайăшĕ ун чухне хăйсен ĕçне питĕ аван пĕлекен ăстасемччĕ. Эпĕ вĕсене яланах шанма пултарнă. Пурăна-киле вĕсенчен нумайăшĕ хăйсен ĕç профессийĕ енĕпе тава тивĕçлĕ ĕçчен пулса тăчĕ, наградăсене тивĕçрĕ. Акă ун чухне тĕп инженерта вăй хунă Иван Бушуев, Леонид Софронов тĕп зоотехник, Валерий Мульдияров тĕп агроном, Валентина Любимова тĕп экономист, тĕп ветеринари врачĕ Михаил Миронов, çĕр йĕркелӳçи Вячеслав Ярухин, тĕп бухгалтер Алексей Ефимов, кадрсен пайĕн пуçлăхĕ Игорь Крысин, ăратлăх енĕпе ĕçлекен зоотехник Раиса Пушкина, çĕнĕ техникăна пурнăçа кĕртессишĕн ответлă пулнă Петр Макаров, Александра Анисимова экономист пирки чи ырă сăмахсем кăна калама пултаратăп.

Мана ял хуçалăх управленине ертсе пыма çирĕплетнĕ вăхăт умри çур акипе пĕр килчĕ. Çавăнпа та пĕр тăхтаса тăмасăр пур хуçалăха та çитсе çаврăнса вырăнсенчи лару-тăрупа тĕплĕ паллашма тĕллев лартрăм. Çурхи уй-хир ĕçĕсене туса ирттерессипе хуçалăхсенче пулакан пĕрлехи пĕр пухăва та хутшăнмасăр тăман. Кунпа пĕрлех хуçалăхсенчи пур фермăра та пулса курма тăрăшаттăм. Колхоз-совхозсенчи выльăх-чĕрлĕх фермисенче ăратлăх ĕçĕ мĕнле шайра пулни, выльăхсене мĕнле рационпа тăрантарни, апат пахалăхĕ, мĕнле шăварни, ĕçсене механизацилессин шайĕ, ферма ĕçченĕсен кану условийĕсем кулленхи тимлĕхре пулнă. Хуçалăх ертӳçисемпе, уйрăмах тата вырăнсенчи специалистсемпе тăтăшах калаçма, ăнлантарма, ĕнентерме тивнĕ. Ку вăхăта пур хуçалăхсене те тенĕ пекех агроном, зоотехник, ветеринар, инженер, экономист, бухгалтер штачĕсемпе комплектласа çитернĕ пулнă ĕнтĕ.

Уйрăмах çурхи ака-суха ĕçĕсене агротехникăпа пăхнă вăхăтра, пахалăхлă ирттересси çине пысăк тимлĕх уйăраттăмăр. Кĕрхи тухăç никĕсĕ шăпах çурхи кун хывăнать вĕт-ха. Çурхи кун çулталăк тăрантарать тесе ахаль каламан. Кунпа пĕрлех 2 – 3 çул хушшинче пур хуçалăхра та тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсен районланă пысăк репродукциллĕ вăрлăхĕсене кăна акма тытăнма задача лартрăмăр. Чи малтанах çĕр улми, çĕр улми вăрлăхĕ туса илессине палăрăмлă çӳллĕ шая çĕклеме тăрăшрăмăр. «Свобода» (председателĕ А. Анисимов), «Знамя труда» (Е. Андреев), каярахпа «Ударник» (П. Давыдов) ку тĕлĕшпе ытти хуçалăхсемшĕн тĕслĕх пулса тăнă.

«Иккĕмĕш çăкăр» туса илессипе ун чухне республикăра пире çитекен пулман. Çĕр улми лаптăкĕсене 4800 гектара çитерме май килчĕ. Кашни гектарĕ вара вăтамран 180 – 200 центнертан кая тухăç паман. 1984 çулта районти хуçалăхсем 36 пин тонна ытла çĕр улми сутма пултарчĕç. 1984 çултан тытăнса 1990 çулччен район çĕр улми тухăçĕ тата ăна пĕтĕмĕшле пуçтарса кĕртессипе республикăра ялан 1-мĕш вырăнта пулнă. Пирĕн çĕр улмие, уйрăмах çĕр улми вăрлăхне туянакансем хушшинче республикăри хуçалăхсем кăна мар, Казахстанпа Таджикистан тата ытти союзлă республикăсенчи хуçалăхсем те пулнă. Вĕтĕ çĕр улмие сыснасене тăрантарма усă курнă. Ку вăл сысна амисен тухăçлăхĕшĕн пĕлтерĕшлĕ пулнă, самăртма хупнă сыснасене ӳт ытларах хуштарма май панă.

Паллă ĕнтĕ, çакă вăл тăрăшмасăр пулман. Механизаци ыйтăвĕсене кун йĕркинчен кăларман. Çĕр хатĕрлессине, çĕр улми лартассине, пăхса тăрассине, апатлантарассине, пухса кĕртессине, сортлассине пĕтĕмпех механизациленĕ. Ӳсен-тăран отраслĕнче ӳсĕмсем тума агротехника мероприятийĕсем çӳллĕ шайра пулни, органикăллă тата минераллă удобренисемпе шайлашуллă усă курни, мĕн акса-лартса хăварнине чир-чĕрпе сиенлĕ хурт-кăпшанкăран агротехника тата хими мелĕсемпе хӳтĕлени чылай пулăшрĕ.

Районти «Сельхозтехника» пĕрлешĕвне Александр Кушков ертсе пыратчĕ. Çавăн чухне хуçалăхсене органикăллă удобренисем хире турттарса кăларма пулăшма, çĕрсене удобрени хывма, извеçлеме тата фосфоритлама «Сельхозтехникăра» механизациленĕ отрядсем йĕркеленчĕç. Ку отрядсен ĕçне Вячеслав Алексеев йĕркелесе пыратчĕ. Ун чухне çĕр улми лартмалли лаптăксен кашни гектарĕ пуçне 60 тонна таран тислĕк, аммиак шывĕ чылай хывса хăварнă. Кайран асăннă механизациленĕ отрядсем «Сельхозхими» пĕрлешĕвне (Валерий Егоров) куçрĕç.

Ял хуçалăх культурисен пусă çаврăнăшĕнче пăрçа йышши культурăсем, люцерна чылай лаптăк йышăннă. Кĕрхи культурăсем пулмалли лаптăксем çине пĕр çул усă курмалăх клеверпа пăрçа акса ӳстернĕ. Вĕсен лаптăкĕсем сухалакан çĕрсен 25 – 30 процентĕ таран йышăннă.

Выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче те ӳсĕмлĕ ĕçлесе пытăмăр. Чи малтанах ăратлă сыснасемпе мăйракаллă шултра выльăхсен йышне ӳстерсе пыма задача лартрăмăр. Выльăхсене тăрантарассин тата тытса усрассин технологийĕсене лайăхлатни, фермăсенче вăй хуракансем валли ĕçлеме лайăхрах условисем туса пани ĕç кăтартăвĕсем çинче те лайăхпа палăрчĕ. Районта ăратлăх енĕпе ĕçлекен ятарлă хуçалăхсем йĕркеленчĕç. Ăратлă сыснасемпе мăйракаллă шултра выльăхсем ĕрчетессипе – «Знамя труда», «Свобода», «Передовик» хуçалăхсем, ăратлă ĕнесем ĕрчетессипе – «Ударник» хуçалăх. Асăннă хуçалăхсем ăратлă выльăхсемпе хамăр районти хуçалăхсене кăна мар, республикăри хуçалăхсене те тивĕçтернĕ. Ăратлă выльăхсем туянма республика тулашĕнчен те килетчĕç. Çакă хуçалăхсен, районăн экономика кăтартăвĕсене лайăхлатса пыма май пачĕ.

Хатĕрлекен утă пахалăхĕ çине ытларах тимлĕх уйăрни, клеверпа люцерна пысăк лаптăксем çинче çитĕнтерни, сенажпа анлă усă курни мăйракаллă шултра выльăхсене ĕрчетме пысăк тĕкĕ пачĕ. Районĕпе сăвăм пĕр ĕне пуçне вăтамран çулталăкне 3700 килограма çитрĕ. Мăйракаллă шултра выльăхсен йышĕ 21,5 пин пуç таран, вăл шутра ĕнесем 7000 пуç таран пулнă. Мăйракаллă шултра выльăхсем талăксерен вăтамран 750 – 800 грамм ӳт хушатчĕç. Хăш-пĕр хуçалăхсенче талăкри вăтам ӳт хушаслăх 1000 грамм урлă та каçнă. Кусем вĕсем «Знамя труда» (Е. Андреев), «Оринино» (В. Вязов), «Свобода» (А. Анисимов), Суворов яч. хис. (В. Павлов) хуçалăхсем.

Сысна ĕрчетессипе чи пысăк çитĕнӳсем тума пултартăмăр. Сысна ĕрчетесси Муркашсемшĕн вăл хобби пулнă темелле. Ку енĕпе «Знамя труда» колхоз тата унăн ертӳçи Социализмла Ĕç Геройĕ Евтихий Андреев ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăчĕ, ыттисене те çак отрасль çине çĕнĕлле пăхма май пачĕ.

Выльăхсене пĕлсе тата тĕрĕс тăрантарни, таса шывпа шăварни, витесенче йĕркеллĕ микроклимат тытни пĕлтерĕшлĕ самантсем пулнă. Ун чухне хальхи пек хушма микроапатсем пулман. Евтихий Андреев çапла вĕрентетчĕ:



1987 çул. Экономикăпа социаллă пурнăçа аталантармалли 1986 çулхи патшалăх планне ăнăçлă тултарнăшăн «Свобода» колхоз КПСС Тĕп Комитечĕн, СССР Министрсен Совечĕн, ВЦСПС-ăн тата ВЛКСМ Тĕп Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне тивĕçнĕ.

сыснасене паракан тырă фуражĕнче пĕр пек шайлашура урпа, сĕлĕ тата пăрçа пулмалла. Тулăпа, уйрăмах ырашпа тăрантармалла мар. Мĕншĕн тесен вĕсенче микроэлементсем – лизинпа тритофан çук. Уйрăмах вăл клевертан хатĕрленĕ курăк çăнăхĕпе анлă усă куратчĕ, ыттисене те çапла сĕнетчĕ. Мĕншĕн тесен унта витаминсем чылай. Унсăрăн апат сыснасен хырăмлăхĕнче ирĕлеймест, каяшпа каялла тухать. Пĕтĕм ĕç харама каять. Тăкаксем кăна ӳсеççĕ.

Сыснасене таса шыв ĕçтерни пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă. Сысна çурисем валли вара ăшă чей хатĕрленĕ. Сысна витисенче вентиляци пăрăхĕсене урайĕнчен 40 – 50 сантиметр çӳллĕшĕнче вырнаçтарнă. Кун пек тусан йывăр, таса мар сывлăш пăрăхпа тухса кайнă, çӳлте вара таса сывлăш тăнă.

Сысна амисене пĕр тапхăрта пĕтĕлентерсе хăварса çăвăрлаттарассине пурнăçа кĕртрĕмĕр. Çулталăкне икĕ хутчен – декабрь тата июнь уйăхĕсенче амасем массăллă çăвăрлатчĕç. 1989 çул тĕлне вара сыснасен талăкри вăтам ӳт хушаслăхне районĕпе 502 грама çитерме пултартăмăр. Кашни ама 15 – 18 çура паратчĕ. Акă 1985 çулта сыснасен йышне 40232 пуçа çитерме пултартăмăр. Çуллен 32 пин пуç таран сысна çури илнĕ. Сысна ĕрчетессипе уйрăмах ырă ята тивĕçнисене асăнса хăвармаллах. Кусем вĕсем Е. Андреев яч. хис. колхозри сысна фермин заведующийĕ Нина Киселева, «Свобода» колхозри Вячеслав Широков, «Сеятель» колхозри Руфим Данилов, К. Иванов яч. хис. колхозри Илья Григорьев, «Передовик» совхозри Виталий Васильев, «Нива» колхозри Петр Яргейкин тата ыттисем.

# Çынсемшĕн тăрăшасси тĕп вырăнта пулнă

Хуçалăхсене паха апатпа тивĕçтерессипе Çатракассинче тата Мăн Сĕнтĕрте комбикорм хатĕрлекен цехсем хута яни чылай пулăшрĕ. Вĕсен ертӳçисенче вăй хунă Джон Анисовпа Валентина Воробьевăна та ырăпа палăртмалла. Ку объектсене хута ярассипе, вĕсене тухăçлă ĕçлеттерессипе ун чухне ял хуçалăх управленине ертсе пынă Леонид Софронов нумай тăрăшрĕ. Талăксерен хуçалăхсем валли 18 пин тонна таран комбикорм туса хатĕрленĕ. Вĕсенче витаминлă курăк çăнăхĕ авăртмалли агрегатсем те тухăçлă ĕçленĕ. Çакă пĕтĕмпех обществăлла выльăх-чĕрлĕхе шайлаштарнă апатпа туллин тивĕçтерме май паратчĕ.

Хуçалăхсем экономика тĕлĕшпе çирĕп пулнă. Укçа-тенкĕне вара пĕтĕмпех ял хуçалăх производствине интенсивлă аталантарса пынипе, ял хуçалăх продукцийĕ туса илессине тата сутассине ӳстерсе пынипе тунă. Урăх çăл куç пулман. Ĕçлекене ĕç укçи яланах вăхăтра тӳлесе тăнă. Выльăх-чĕрлĕх витисем çĕнĕрен чылай тунă, киввисене юсаса реконструкциленĕ. Çуллен тракторсемпе автомашинăсем, ытти ял хуçалăх техники сахал мар туяннă. Пур хуçалăхăн та тĕш тырă, çĕр улми пухса кĕртмелли комбайнсем, тырă тасатса сортламалли, типĕтмелли пунктсем çителĕклĕ пулнă, тырă тата çĕр улми хранилищисем тунă.

Строительство ĕçĕсем анлă сарăлса пынине асăнтăм. Ун чухне чи малтанах выльăх-чĕрлĕх фермисемпе витисене тăвасси пĕлтерĕшлĕ пулнине тĕрĕс ăнланнă. Типлă йĕркепе 200 тата 400 пуç выльăх вырнаçмалăх сарайсемпе витесем тăвассине тимлĕхре тытрăмăр. Пĕрремĕш витесене «Новая Юнга», «Гигант», «Герой», Мичурин яч. хис., Дружба», Чапаев яч. хис., «Сеятель», Суворов яч. хис., «Сундырский» хуçалăхсенче хута ятăмăр. Çав çулсенче хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацине Николай Гусак ертсе пыма пуçларĕ. Унччен вăл «Сельхозтехника» пĕрлешӳвĕн ертӳçин Александр Кушковăн çумĕ пулса ĕçленĕччĕ. Çапла вара ытларах строительство ĕçĕсене асăннă строительство организацийĕн строителĕсем пурнăçланă. Кунпа пĕрлех «Чувашсельстрой» трест, 2-мĕш номерлĕ строительство тресчĕ те строительство ĕçĕсенче сахал мар пулăшу кӳчĕç.

Мăн Сĕнтĕр, Турай, Муркаш больницисен хальхи типлă çурчĕсене те колхоз-совхозсен укçи-тенкипех тума пуçланă. Кайран вара вĕсене туса пĕтерсе хута яма патшалăх укçа-тенкĕ уйăрса парса пулăшрĕ.

Шурчара, Ярапайкассинче, Калайкассинче, Шатракассинче, Нискассинче, Йӳçкассинче, Москакассинче, Тренккăра, Шетмĕпуçĕнче, Çатракассинче, Чуманкассинче, Мăн Сĕнтĕрте, Муркашçулсем тăвасси кал-кал пулса пычĕ. Мехколонна ертӳçи Василий Брайцев ăнланма пĕлекен тăрăшуллă çынччĕ.

Район Шупашкарти электроаппаратура заводĕпе туслă çыхăнура пулнă. Завод ертӳçинче малтан Глеб Бритвин, кайран Николай Соколов, ертӳçĕ çумĕ пулса Авенир Троицкий ĕçленĕ. Вĕсем пире кĕрхи ĕç çи вăхăтĕнче техникăпа, ĕç вăйĕсемпе сахал мар пулăшатчĕç. Эпир те парăмра юлман. Хутшăнусем пĕр-пĕриншĕн усăллă пулнă.

Социализмла ăмăрту чи çӳллĕ шайра пулнă. Пирĕн район Мари Республикинчи Горномари районĕпе ăмăртуратчĕ. Ăмăрту итогĕсене пĕрле пухăнса сӳтсе яваттăмăр, маттуррисене чыслаттăмăр, малашлăх планĕсем палăртаттăмăр. Икĕ еншĕн те усăллăччĕ ку. Çавăн пек ăмăртăвах пирĕн районти кашни хуçалăх кӳршĕ республика районĕнчи колхоз-совхозпа йĕркеленĕччĕ. Делегацисем те час-часах пĕр-пĕрин патĕнче пулатчĕç, пĕр-пĕрин опычĕпе паллашатчĕç, çĕннине, лайăххине пурнăçа кĕртме тăрăшатчĕç.

Çĕнĕлĕхсем пирĕн ĕçре пулман теместĕп. Çĕр улми пухса кĕртессине механизацилессипе те (çĕрлехи вăхăтра комбайнсемпе çĕр улми пухса кĕртнине те кăтартнă), выльăх апачĕ хатĕрлессипе те, сысна ĕрчетессипе те, пăрусене сивĕре пăхса ӳстерессипе те. Çавăнпах ĕнтĕ



**Тырри-пулли – ик куç тулли...**

Çав çулсенче пур хуçалăхра та тенĕ пекех столовăйсем уçма, фермăсенче выльăх-чĕрлĕх пăхакансен çурчĕсене йĕркелеме май килчĕ. Ферма ĕçченĕсем пушă вăхăтра унтах телевизор пăхма та, хаçат-журнал вулама та пултарнă.

Ялсем çĕнелсе, аталанса пыни куç умĕнчехчĕ. Çынсем хăйсем валли пурăнмалли çуртсем нумай тăватчĕç. Çав çулсенчех хваттерсем те тума пуçăнтăмăр. Пурăнмалли çуртсене, хваттерсене çут çанталăк газĕ кĕртесси вăй илсе пычĕ. Ялсенче шыв пăрăхĕсем хурассипе те çанă тавăрса ĕçленĕ.

Ялсене, урамсене тирпей-илем кĕртессипе çине тăрса ĕçлеттĕмĕр. Ял çыннин пурнăçĕ хула çыннинчен кая мар, лайăхрах та пулнă темелле.

Çĕнĕ шкулсем, Культура çурчĕсем хута яма тытăннипе пĕрлех ялсенче пĕрремĕш ача сачĕсем ĕçлеме пуçăнчĕç. Хуçалăхсен тĕп усадьбисенче врач амбулаторийĕсем уçăлма тытăнчĕç. Вĕсенче 2 –3-шер специалист вăй хуратчĕ. Нумай хуçалăхра мĕн пур инфратытăма пĕрлештерсе тăракан тĕп усадьбăсем йĕркеленчĕç. Вĕсенче администраци çурчĕ те, Культура çурчĕ те, шкулпа ача сачĕ те, амбулатори те, магазин та, механизаци паркĕ те, хăшĕсенче нумай хваттерлĕ пурăнмалли çуртсем те пурччĕ. Кунта чи малтанах «Сеятель» (С. Афанасьев, В. Рубцов), «Хлебороб» (В. Храмов), «Сундырский» (В. Воробьева, Г. Горланов), «Передовик» (Т. Шилов, В. Мерлов), «Герой» (В. Соловьев), «Дружба» (С. Зайцев, В. Паргеев) тата ытти колхоз-совхозсене асăнса хăвармалла.

Пĕрлешӳллĕ нумай хуçалăхăн перекет банкĕнче счетсем çинче ирĕклĕ укçа-тенкĕ ун чухнехи хаксемпе шутласан миллионшар тенкĕ упраннă. Каярахпа Евтихий Андреев ятне панă «Знамя труда» колхозăн счечĕ çинче ун чухне 3 млн. тенкĕ ытла, «Герой», «Сеятель», Суворов яч. хис. колхозсен, «Ударник» совхозăн тата ытти хуçалăхсен 1-шер млн. тенкĕ ытла пулнă.

ра, Тивĕшре, Тойкилтĕре çĕнĕ шкул çурчĕсем ӳссе ларчĕç. Москакассинче, Çатракассинче, Патаккассинче, Ярославкăра, Отарккăра, Мăн Сĕнтĕрте, Мăн Хураçкара, Муркашра, Ярапайкассинче, Сыпайра, Йӳçкассинче, Катькасра, Анаткассинче, Торинкассинче ача сачĕсем ĕçлеме пуçларĕç. Пĕр çулталăк хушшинче 5 шкулпа 2 ача сачĕ хута яни те пулнă. 3 – 4 çул хушшинче 8 врач амбулаторийĕ ĕçе кĕртнĕ. Вĕсене Шетмĕпуçĕнче, Уйкас Янасалта, Ярапайкассинче, Тренккăра, Мăн Хураçкара, Катькасра, Юнкăра, Нискассинче çĕнĕрен тунă. Çĕнĕ клубсемпе Культура çурчĕсем Шетмĕпуçĕнче, Тренккăра, Шурчара, Кашмашра, Апчарта, Мăн Тутаркассинче, Ваçкассинче, Калайкассинче, Атапайра хута кайрĕç.

Ача-пăчасен республикипе пĕрремĕш «Ромашка» санаторийĕ Шомикра хута кайрĕ. «Свобода» колхоз пулăшнипе республика Ял хуçалăх министерстви шучĕпе район центрĕнче Спорт çуртне хута яма май килчĕ.

Çулсене пурнăç артерийĕсемпе танлаштараççĕ. Çул ыйтăвĕ çивĕч тăратчĕ. Район территорийĕнче йĕркеллĕ çулсем пулман. Асфальт çулсем тăвассипе сахал мар тимлеме тиврĕ. Çулсем тăвассипе райĕçтăвком председателĕн строительство енĕпе ĕçлекен çумĕнче тăрăшнă Владимир Мефодьева палăртса хăвармалла.

Вак чул ыйтăвĕ ура хуратчĕ. Ăна хамăр кайса Уралтан эшелонĕ-эшелонĕпе кӳрсе килеттĕмĕр, чукун çул станцийĕнчен хамăрах турттараттăмăр. Асфальт сарнă пĕрремĕш çула «Дружба» хуçалăх территорийĕнче хута ятăмăр. Кайран Юнкăна, Çатракасси витĕр Шетмĕпуçнелле, Хорнуйне, Муркашран Отарккăна, Йӳçкассине, Уйкас Янасала çулсене асфальт сарма май килчĕ.

Çул тăвассинче Шупашкарти ДПМК строителĕсем тăрăшатчĕç. Çул тума вĕсен вак чулсăр пуçне пĕтĕмпех пурччĕ. Эпир вара вĕсене вак чулпа хамăр тивĕçтереттĕмĕр. Çавăнпа та тĕрлĕ ыйтупа республика шайĕнчи семинарсемпе канашлусене пирĕн районта тăтăшах йĕркелетчĕç. Хамăр та хуçалăх ертӳçисемпе тата специалисчĕсемпе ыттисен опычĕпе паллашма сахал мар тухса çӳренĕ. Брянск облаçĕнче çĕр улми туса илессипе, Тюмень облаçĕнчи «Большевик» колхозра (хуçалăха пирĕн ентеш – Матьăкра çуралса ӳснĕ Павел Прокопьев ертсе пыратчĕ) выльăх апачĕ хатĕрлессипе, çĕр ĕç культурипе паллашнăччĕ. Павел Прокопьев кăштахран хăй те пирĕн пата çитсе курнăччĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессипе паллашма вара Мускава ВДНХ-на, Мускав облаçĕнчи ăратлăх енĕпе ĕçлекен заводсене те пĕрре кăна мар кайса килнĕ.

Кадрсене вĕрентсе хатĕрлессине, суйласа илессине манăçа кăларман. Мĕншĕн тесен малашлăх, ыранхи кун пирки те шухăшлас пулать. Парти райкомне, райсовет ĕçтăвкомне, комсомола ĕçлеме килнисем, хуçалăх тилхепине тытса пыма пуçăннисем, каярахпа татах та ответлă вырăнсенче ĕçлеме тытăннисем хушшинче çамрăксем сахал мар пулнă. Владимир Рубцов, Валерий Вязов, Альберт Иванов, Юрий Иванов, Людмила Майкова, Алексей Иванов, Михаил Пушкин, Валерий Егоров, Александр Федотов, Ардальон Егоров, Геннадий Горланов, Кронид Сретинский, Михаил Петров, Георгий Симаков, Леонид Ильгечкин тата ыттисем кашниех район аталанăвне хăйĕн тӳпине хывнă.

Пурнăç малаллах шăвать. Иртнине те, хальхине те тĕрлĕрен хаклакан пур. Аталану çулĕ тумхахсăр пулмасть. Район утса тухнă 70 çул пĕчĕк тапхăрах мар. Çапах та çавна çирĕплетсех каласшăн. Район, епле пулсан та, малаллах аталаннă, аталанĕ те. Çитĕнӳсем мĕнле пуласси вара пирĕнтен кашнинченех килнине манас марччĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ калаçнă.**
**Сăн ӳкерчĕксене В. Краснов çемье архивĕнчен илнĕ.**

Район историйĕнчен

# Муркаш енĕ паян

Хальхи вăхăтра районта 177 ял, 16 ял тăрăхĕ. Район территорийĕ 84,5 пин гектар лаптăк йышăнать. Вăл шутра пур категорие кĕрекен ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсем 63 пин гектар, вăл шутра сухалакан çĕрсем 49,3 пин гектар.

Район территорийĕнче ял хуçалăх предприятийĕсем 16, промышленноç тата пулăшу сферин предприятийĕсем 8, потребитель обществисем 2, хресчен (фермер) хуçалăхĕсем 93, районти çыхăну узелĕ тата çыхăну уйрăмĕсем 20, АТС-сем 24.

Районта транспорт çыхăнăвне 19 маршрутпа йĕркеленĕ. Кунсăр пуçне 17 маршрутпа уйрăм предпринимательсем çынсене илсе çӳрессине йĕркеленĕ.

Çынсен харпăрлăхĕнче 5309 çăмăл автомобиль, груз турттармалли автомашинăсем 1109, 168 автобус, 123 мотоцикл, 117 прицеп, 38 çурма прицеп, 536 трактор, тĕш тырă пухса кĕртмелли 17 комбайн, выльăх апачлĕх культурăсене пухса кĕртмелли 2 комбайн, çул-йĕр строительствин тата мелиораци машинисем 11. Район территорийĕнчи автомобиль çулĕсен тăршшĕ 579,7 километр, вăл шутра асфальт сарнă çулсем 297,2 километр.

Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсем 26. Вăл шутра вăтам шкулсем 13, тĕп шкулсем 9, пуçламăш шкул-ача сачĕсем 4, ача сачĕсем 15, информаципе культура центрĕсем 15, ял тăрăхĕсен территорийĕсенчи культурăпа кану учрежденийĕсен структура подразделенийĕсем (филиалĕсем) 86, ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотека 1, тури чăвашсен музейĕ 1, район больниципе участок больницисем 1-шер, пĕтĕмĕшле врач практикин уйрăмĕсем 10, фельдшерпа акушер пункчĕсем 38, спорт залĕсем 26, клубсемпе Культура çурчĕсем 46, тĕслĕх библиотекăсем 30.

Уйрăм çынсен килти хуçалăхĕсем 13372. Районта пĕтĕмпе 34365 çын пурăнать. Ĕçлес ӳсĕмри çынсен шучĕ 20278. Садиксене çӳрекен ачасен шучĕ 1655. Шкулсенче 3371 ача вĕренет. Пенсионерсем 9967 çын, вăл шутра ĕçлекен пенсионерсем 2634 çын.

**Архив тата статистика материалĕсем тăрăх.**

Паллă ентешсем

# Совет Союзĕн Геройĕсем

**Григорий Алексеевич АЛЕКСЕЕВ** 1903 çулта Исетерккĕ ялĕнче çуралнă. 1925–1927 çулсенче Хĕрлĕ Çарта пулнă. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче 1941 çулхи ноябрьтенпе. Центральнăй фронтра çапăçнă. Рядовой. 1943 çулхи октябрĕн 16-мĕшĕнче Днепр урлă каçнă чухне палăрнă. Лоев поселокĕ çывăхĕнче сылтăм çыранра плацдарма тытса тăнă. Совет Союзĕн Геройĕ ята 1943 çулхи октябрĕн 30-мĕшĕнче панă. Ленин орденĕпе наградăланă.

**Яков Анисимович АНИСИМОВ** 1906 çулта Уйкас Апаш ялĕнче çуралнă. Чуманкассинчи вулав çуртĕнче ĕçленĕ. Сĕнтĕр райкомĕн секретарĕ, Сĕнтĕр çар комиссарĕ пулнă. Хĕрлĕ Çарта 1938 çулхи октябрьтенпе. Украинăна, Румыние, Венгрие ирĕке кăларнă. Гварди капитанне Я.А. Анисимова Совет Союзĕн Геройĕ ята 1945 çулхи мартăн 24-мĕшĕнче вилнĕ хыççăн панă. Ленин, 1 степень Отечественнăй вăрçă, Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕсемпе наградăланă.

**Борис Михайлович ВАСИЛЬЕВ** 1913 çулта Çĕмĕртлĕх Чемей ялĕнче çуралнă. Кашмаш шкулĕнче учительте ĕçленĕ. Хусанти авиаци институтĕнче вĕреннĕ. Хĕрлĕ Çарта 1937 çултанпа. Çар летчикĕсен Борисоглебскри шкулне (1938 ç.), комиссар-летчиксен Каллинскри çар авиаци шкулне (1941 ç.) пĕтернĕ. Кăнтăр Хĕвел анăç, Сталинград, 1 Белоруссии фрончĕсенче çапăçнă. Истребительсен эскадрильин комиссарне Б.М. Васильева Совет Союзĕн Геройĕ ята 1941 çулхи ноябрĕн 20-мĕшĕнче панă. Истребительсен авиаци полкĕн командирĕ Б.М. Васильев подполковник çĕнтерĕве Берлин тӳпинче кĕтсе илнĕ. Ленин, 1, 2 степень Отечественнăй вăрçă орденĕсемпе наградăланă.

**Алексей Иванович ВОРОБЬЕВ** 1915 çулта Çурлатри ялĕнче çуралнă. Муркаш шкулĕнче вĕреннĕ. Хĕрлĕ Çарта 1936–1939 тата 1941–1945 çулсенче пулнă. Центральный, Брянск, Воронеж, 1 Украина фрончĕсенче çапăçнă. Взвод командирне – гварди старшинине А.И. Воробьева Совет Союзĕн Геройĕ ята 1945 çулхи июнĕн 27-мĕшĕнче панă. Ленин, Хĕрлĕ Çăлтăр, 2 степень Отечественнăй вăрçă (икĕ хут) орденĕсемпе наградăланă.

**Илья Григорьевич МЕШАКОВ** 1924 çулта Пăсăрман ялĕнче çуралнă. Оринин шкулĕнче, Чăваш педагогика институтĕнче вĕреннĕ. Хĕрлĕ Çарта 1942 çулхи августранпа. Автоматчиксен ротин рядовойне И.Г. Мешакова Совет Союзĕн Геройĕ ята 1944 çулхи июнĕн 3-мĕшĕнче панă. Çĕнтерӳ парадне хутшăннă. Ленин, «Хисеп палли» орденсемпе наградăланă.

**Александр Артемьевич БЫКОВ – Мухтав орденĕсен тулли кавалерĕ**. 1921 çулта Хуракасси выççăлккинче çуралнă. Кашмаш шкулĕнче вĕреннĕ. Хĕрлĕ Çарта 1942 çулхи апрелĕн 7-мĕшĕнченпе. Старшина Калинин, Брянск, Хĕвел анăç, 2 тата 1 Белоруссии фрончĕсенче çапăçнă. Артиллерист.

# «Муркаш тăрăхĕпе 1958 çултах паллашрăм»



**Леонид Софронов (варринчи) хăйĕн малтанхи вĕрентекенĕсене – Мичурин яч. хис. хуçалăха ертсе пынă Алексей Петрович Петрова тата унăн мăшăрне – Шетмĕпуçĕнчи ветеринари участокне ертсе пынă Римма Михайловнăна халĕ те манмасть.**

Çапла пĕлтерчĕ Леонид Софронов хăйĕн ĕç пурнăçĕн 16 çулне Муркаш районĕнче ирттерни пирки каласа пама ыйтсан. Леонид Софронович Элĕк районĕнчен, ĕç биографине ун чухне Алексей Петров ертсе пынă Мичурин ячĕпе хисепленекен колхозра техник-осеменаторта пуçланă пулин те, 1958 – 1961 çулсенче аслă классенче Йӳçкасси шкулĕнче вĕреннĕ, кунтах ăна комсомола илнĕ, икĕ çул шкулти комсомол организацине ертсе пынă.

Мичурин ячĕпе хисепленекен колхоза «пырса çакланни» çапларах пулса тухнă. (Сăмах май Леонид Софронович çавăн пек ăста, пултаруллă ертӳçĕ патĕнче ĕç биографине пуçлама шăпа пӳрнишĕн тав сăмахĕ кăна калать). Мăшăрне Раиса Александровнăна зоотехника вĕренсе тухсан направленипе Мичурин ячĕпе хисепленекен хуçалăха ĕçлеме ярсан унăн та пĕрле ку хуçалăха çул тытма тивнĕ. Çапла вара мăшăрĕ тĕп зоотехникра, хăй техник-осеменаторта ĕçлеме пуçăннă.

1967 – 1970 çулсенче техник-осеменаторта вăй хунă вăхăтрах заочнăй майпа зоотехник профессине алла илнĕ. Хыççăн икĕ çул хушши, мăшăрĕ декрет отпускĕнче пулнă чухне, колхозăн тĕп зоотехникĕнче тăрăшнă.

Леонид Софронович епле пултаруллă та ăста специалист пулнине пĕр тĕслĕхпе кăна çирĕплетер. 1969 çул итогĕсемпе вăл техник-осеменаторсем хушшинче палăрма ĕлкĕрсе СССР Халăх хуçалăх çитĕнĕвĕсен выставкине (ВДНХ) хутшăнса кĕмĕл медале тивĕçнĕ.

1971 çулта ăна районти ял хуçалăх управленине тĕп зоотехникра ĕçлеме çирĕплетнĕ, мăшăрĕ Муркаш шкулĕнче ĕçлеме тытăннă.

«Хуçалăхсене ытларах чухне çуранах тухса çӳреме тиветчĕ. Май килнипе вара ун чухне районти ветеринари станцине ертсе пынă Михаил Мироновпа (унăн служба автомашини пурччĕ) пĕрле çула тухма тăрăшаттăм. Вăл хăйĕн ĕçĕнче ăста специалистчĕ», – аса илет халĕ Леонид Софронович.

1974 çулхи декабрьте Леонид Софронова ял хуçалăх управленийĕн выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем сутăн илесси тата вĕсен пахалăхĕ енĕпе ĕçлекен тĕп патшалăх инспекторĕ пулма çирĕплетнĕ, районти ял хуçалăх управленине ертсе пынă Валериан Краснова 1976 çулхи октябрьте райĕçтăвком председателĕ пулма суйланă май вара ял хуçалăх управленине ертсе пыма шаннă. 1979 çулхи сентябрьте ăна депутатсен сессийĕнче райĕçтăвком председательне суйланă. Ку должноçра вăл хăйне 1983 çулхи декабрĕн 22-мĕшĕнче РФ ял хуçалăх министрĕн хушăвĕпе Чăваш Республикин ял хуçалăх министрĕн пĕрремĕш çумĕ пулма çирĕплетиччене тăрăшнă.

Çак çулсем район аталанса çирĕпленнĕ, çĕнĕрен çĕнĕ чикĕсем çĕнсе илнĕ, ура çине çирĕп тăнă тапхăр пулнине палăртать ĕç ветеранĕ, Етĕрне районĕн хисеплĕ гражданинĕ (министерствăра ĕçленĕ хыççăн вăл Етĕрне район администрацине ертсе пынă, 1985 çултанпа Етĕрне хулинче пурăнать) Леонид Софронович Софронов. Шăпах çак çулсенче районта колхоз-совхозсенче производство объекчĕсем, выльăх-чĕрлĕх фермисем, социаллă объектсенчен шкулсемпе ача сачĕсем, спорт сооруженийĕсемпе фельдшер пункчĕсем, больница çурчĕсем, пурăнмалли çурт-йĕр, уйрăмах çулсем тата ыттине те сахал мар туса хута янă. Пĕрлешӳллĕ пур хуçалăхсен тĕп усадьбисене йĕркеллĕ çулсем туса çитернĕ. Район территорийĕнче капиталлă миçе кĕпер туса хута яма пултарни – хăйне уйрăм калаçу.



**Тĕрлĕ çулсенче районшăн вăй хунă В.С. Краснов, В.М. Рубцов, В.И. Вязов тата Л.С. Софронов.**

«Мĕн туни пĕтĕмпех çынсем, кунта пурăнакансем валли пулать тата юлать – çак принципа тĕпе хурса ĕçленĕ ун чухне эпир, – аса илĕве тăсать Леонид Софронович. – Актай патĕнчен Элĕк районне тухма çырма урлă тӳрĕ çул тăвас шухăшлăччĕ – май килмерĕ, вăхăт çитеймерĕ, халĕ ăна тума йывăртарах ĕнтĕ».

Вăл вăхăтра аталану ӳсĕмне тивĕçтермелли çĕнĕлĕхсемпе, çĕнĕ майсемпе, мелсемпе анлăн усă курма тăрăшнă. Акă ун чухне районта строительство объекчĕсене йышăнассипе технокомисси йĕркелени пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртать Леонид Софронович. Ун шутне ял хуçалăх управленийĕн, капиталлă строительство пайĕн тата ытти шайри тĕп специалистсене пурне те кĕртнĕ. Комисси членĕсем ку е вăл объекта тума тытăнса хута яричченех строительство ĕçĕсем мĕнле пынине, пахалăх шайне тĕрĕслесе тăнă. Çакăн усси пулман мар.

Хуçалăхсем валли ӳсен-тăран, выльăх-чĕрлĕх продукцийĕ туса илсе хатĕрлесе пама плансем çирĕплетсе парассипе те çĕнĕлĕхсем пурнăçа кĕртнĕ. Хуçалăхсенче тĕрлĕ çĕрте çĕр пулăхлăхĕн шайĕ пĕр пек мар вĕт-ха. План хатĕрленĕ чухне çавна та шута илнĕ. Малтанах вăтам пулăхлăхăн шайне палăртнă. Пулăхлăх ку шая çитеймест пулсан ку хуçалăхăн хатĕрлев планне 10 процент чакарнă, лайăхрах пахалăхлă çĕр çинче ял хуçалăх культурисем ӳстерекен хуçалăхсен планĕсене вăтам шайран 10 процент ӳстернĕ. Çакă хуçалăхсене пĕр пек условисене лартнă. Çитменнине плансене мĕн виçепе çирĕплетессин ыйтăвне пĕччен-иккĕн мар, председательсемпе директорсен канашĕнче пĕрле татса панă. СПИД (совет председателей и директоров) тенĕ ку канаша ун чухне. Çапла вара çирĕплетнĕ плансем тĕлĕшпе никамăн та урăхла шухăш, килĕшменлĕх пулман. План пур – ăна пурнăçлассишĕн çанă тавăрса ĕçлемелле пулнă. Ĕçленĕ те.

Кадрсен ыйтăвне, специалистсен ăсталăх шайне ӳстерсе пыма кирлине манăçа хăварман. «Тĕп специалистсемпе кăна мар, хуçалăхсенчи вăтам сыпăкри специалистсемпе те кашни кварталта пĕр хутран кая мар семинарсемпе канашлусем, вĕренӳсем ирттереттĕмĕр, пĕрпĕрин опычĕпе паллаштараттăмăр. Ку мероприятисене район ертӳçисемпе ял хуçалăх управленийĕн тĕп специалисчĕсем те хутшăнатчĕç. Çитменнине асăннă мероприятисене яланах вырăнсене тухса йĕркелеттĕмĕр. Çакă вара юларах пыракансене ыттисене курса малалла туртăнма хистетчĕ», – ун чухнехине кăмăлпа аса илет Леонид Софронович.

Тепĕр саманта та палăртрĕ ĕç ветеранĕ. Пур чухне те «çӳлтен» хушни-кăтартни вырнаçуллă, ăна нимĕн шутламасăр йышăнни тĕрĕс пулса тухмасть. Çавăнпа та малалларах пăхма, пуçа шухăшлаттарма пĕлес пулать.

Кунта та пĕр тĕслĕх илсе кăтартар. Акă «Свобода» хуçалăхра Эстони тĕслĕхĕпе усă курса 24 пин пуç вырнаçмалăх сысна ĕрчетмелли 2 хутлă комплекс тума палăртнă пулнă. Апла пулсан çывăхри хуçалăхсен фермисене хупма, çынсене ĕçсĕр тăратса хăварма тивнĕ. Ун чухне «Знамя труда» колхоз ертӳçинче ĕçленĕ Евтихий Андреев та ку сĕнĕве хирĕç пулнă. Çакă тĕрĕс çул пулас çуккине вăхăтра ăнланса çынсемпе канашланă хыççăн ку проекта йышăнманни пирки проект институтне çырупа тухнă. Çапла туни тĕрĕс пулнине вăхăт кăтартса пачĕ. Сысна фермисене те, ĕç вырăнĕсене те сыхласа хăварнă.

Хуçалăхсенче, районта строительство ĕçĕсем анлăн сарăлса пыни «Моргаушская» строительство организацине (ун чухне Юнкăри МПМК) ертсе пыма Николай Гусака çирĕплетнипе те тачă çыхăннă. 1977 çулта ăна район фондĕнчен çĕнĕ УАЗ-469 автомашина уйăрса панă. Çакă унăн авторитетне «Чăвашколхозстрой» пĕрлешĕвĕн ертӳçисем умĕнче палăрмаллах ӳстернĕ (пĕрлешĕве ун чухне Николай Иванов ертсе пынă). Чи малтанах районти строительство организацийĕн Юнкăри çирĕп базине йĕркеленĕ. Кунта администраци çурчĕ, гараж, строительство материалĕсен склачĕсем, спортзал, ĕçлекенсем валли Юнкăра тата Москакассинче нумай хваттерлĕ пурăнмалли çуртсем туса лартнă. Ĕçлекенсен шучĕ 300 çынна та çитнĕ. Çынсене ĕçлеме объектсене тата каялла автобуссемпе илсе çӳренĕ. КПСС райкомĕпе райсовет ĕçтăвкомĕ вара районти строительство ыйтăвĕсене куç ытамĕнчех тытнă. Ĕçсен пахалăхĕшĕн, объектсене палăртнă вăхăтра хута ярассишĕн ыйтасси пуринчен те пĕр пекех пулнă: подрядчикран та, заказчикран та.

Кунта пĕлтерĕшлĕ самант – строительство ĕçĕсен сезонлăхĕнчен хăпма пултарни. Юнкăри МПМК-н производство базинче козловой кран вырнаçтарнă май хĕл кунĕсенче строительсем строительство материалĕсем, тимĕрбетон изделисем тата ыттине кӳрсе килессипе тăрăшнă. Çавăнпа та кайран çу кунĕсенче строительство ĕçĕсене кал-кал туса пыма чăрмав пулман. Объектсене яланах госпланпа çирĕплетнĕ вăхăтра хута яма пултарнă. «Ку енĕпе Муркашсем республика ертӳçисем умĕнче никăçан та шанăçран тухман», – тет Леонид Софронов.

Кунсăр пуçне вăл çакна пĕлтерĕшлĕ самант тесе палăртать. Закзчик та, подрядчик та пĕр тĕллевпе ĕçленĕ – объекта палăртнă вăхăтра хута ямалла, çавна валли пĕтĕмпех тумалла. Укçа-тенкĕ ыйтăвĕ ун чухне те пулман мар. Чылай объектри строительство ĕçĕсене мехколоннăн хăйĕн укçи-тенкипе пуçăнма тивнĕ. Е хуçалăхсем строительство ĕçĕсен хакĕн 50 процентне таран МПМК счечĕ çине аванс шучĕпе куçарса панă. Çапла вара строительство материалĕсем маларах кӳрсе килме, объектра малтанхи ĕçсене пуçлама май пулнă. Çапла майпах Мăн Сĕнтĕр больницине, районти тĕп больницăна, Суворов яч. хис., Киров яч. хис., «Новая Юнга», «Оринино», Мичурин яч. хис. колхозсенче, «Сундырский» совхозра тата ытти çĕрте 200 – 400 пуç выльăх вырнаçмалăх ферма витисемпе сарайĕсене чылай хута яма май килнĕ.

Район центрĕнче те объектсем сахал мар ĕçе кĕртнĕ. Акă Çар комиссариачĕн çуртне ун чухне «Свобода» колхозăн общежитийĕ, гостиница çуртне «Знамя труда» колхозăн общежитийĕ, Муркашри сĕт заводне «Свобода» колхозăн сĕт блокĕ шучĕпе, район больницине К. Иванов яч. хис. колхоз пуçарăвĕпе, район хаçачĕн редакцийĕпе типографи çуртне мехколоннăн хăйĕн çаврăнăшĕнчи укçи-тенкипе тума пуçăннă. Районти МПМК коллективĕ ун чухне çулталăкне 3 млн. тенкĕлĕх ĕç пурнăçланă, кӳршĕ районсенче вара ку кăтарту 1 млн. тенкĕне те çитеймен.

Ӳсен-тăран отраслĕнче Муркашсен тĕш тырăпа çĕр улми, выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче ашкакайпа çĕр улми туса илесси тĕп вырăнта пулнă. Хăмла çитĕнтересси, сурăхсемпе кроликсем ĕрчетесси майĕпен пăрахăçа тухса пынă.

Тĕш тырă сутассипе плансене май пур таран ирттерсе тултарасси тĕп задача пулман. Ăна ытларах выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илме уйăрма тăрăшнă. Çапла майпа выльăх апачĕ çителĕклĕ пулнă, тепĕр енчен çынсен хĕл кунĕсенче те ĕçлеме ĕç çитнĕ.

Мăн Сĕнтĕрте сехетре 15 тонна, Çатракассинче 30 тонна комбикорм хатĕрлеме пултаракан цехсем хута яни хуçалăхсемшĕн питĕ пĕлтерĕшлĕ шутланнă. Çумăрлă çулсенче Евтихий Андреев та хуçалăхăн пĕтĕм тыррине унта ăсатнă, хĕл тăршшĕпе сыснасене пахалăхлă комбикормпа тăрантарса чылай ӳт хуштарнă, продукци илнĕ.

«Иртни манăçмасть. 4 çул хушши манăн Мичурин яч. хис. хуçалăхра А.П. Петров ертсе пынипе ĕçлеме тиврĕ. Опыт сахал мар илтĕм унран. Вăл маншăн лайăх вĕрентекен пулнă. Кайран опытлă аграрник В.С. Краснов ертсе пынипе ĕçлерĕм. Тавах вĕсене. Кашнин хăйĕн тивĕçĕпе ответлăхĕ пулнă. КПСС райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ – финансист специальноçне илнĕ В.Ф. Григорьев финанспа экономика блокĕшĕн, агроном специальноçне илнĕ В.С. Краснов, ял хуçалăх наукисен кандидачĕ – райĕçтăвком председателĕ – çĕр ĕçĕпе çыхăннă ыйтусемшĕн, районти «Сельхозтехника» пĕрлешĕвĕн директорĕ А.И. Кушков тата ял хуçалăх управленийĕн тĕп инженерĕ И.Ф. Бушуев çынсен ĕçне çăмăллатассишĕн, механизацилессишĕн, эпĕ зоотехника вĕренсе тухнă май выльăх-чĕрлĕх отраслне тăнăç аталантарассишĕн яваплă пулнă. Пурте ăнланса, пĕр çыхăра ĕçлесе пынă. Çавăнпа та темĕнле йывăр ыйтусене те татса пама майсем тупма пултарнă. Ӳсĕмĕсем те пĕрлехи ӳсĕмсем пулнă», – вĕçлерĕ хăйĕн сăмахне Леонид Софронович Софронов.

Вăл Муркашсем хăйне манманшăн, шаннăшăн, ĕненнĕшĕн пысăк тав сăмахĕ калать. Акă 1990 çулта çĕр-шывра пĕрремĕш хут альтернативлă майпа РСФСР халăх депутачĕсен суйлавĕ иртрĕ. Ун чухне вăл Етĕрнере ĕçленĕ ĕнтĕ. 894-мĕш Етĕрне хула округĕпе (унта Етĕрнепе Муркаш, Хĕрлĕ Чутайпа Çĕмĕрле районĕсем тата Етĕрнепе Çĕмĕрле хулисем кĕнĕ) депутата суйлама 7 кандидат тăратнă. Вĕсем хушшинче Леонид Софронов та пулнă. Депутата Леонид Софронович суйланнă. Муркаш районĕнчи суйлавçăсен 72 процентĕ хăйсен сассисене уншăн панă.

Леонид Софроновăн пархатарлă ĕçне пысăка хурса хакланă. ВДНХ кĕмĕл медалĕсĕр пуçне вăл 1973 тата 1975 çулсенче «Социализмла ăмăрту çĕнтерӳçи» паллăна, 1965 çулта Аслă Отечественнăй вăрçăра çĕнтернĕренпе 20 çул çитнĕ ятпа юбилей медальне, 2000 тата 2001 çулсенче Чăваш Республикин Президенчĕн Тав çырăвне тивĕçнĕ. Чи пĕлтерĕшли вара – 1987 çулта Раççейăн пĕрремĕш Президенчĕ Борис Ельцин унăн кăкăрĕ çине Туслăх орденне çакса янă.

Пенсире пулсан та Леонид Софронович Софронов алă усса ларма хăнăхман, обществăлла ĕçсенче хастар. Тĕрлĕ ыйтупа Етĕрне район администрацийĕнче тăтăшах пулать. Ăнсăртран мар. Вăл – район администрацийĕн пуçлăхĕн советникĕ, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕн Николай Маловăн пулăшаканĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

# В. ВЯЗОВ: «Пирĕн опыта вĕренме таçтан та килетчĕç»

***Муркаш районĕн самоуправлени пуçлăхĕ пулса района 1996 – 2004 çулсенче ертсе пынă Валерий Ивановичăн çав çулсенчи ĕç-хĕлне пысăка хурса хакланине вăл тивĕçнĕ наградăсем те лайăх çирĕплетеççĕ. Вăл – Чăваш Республикин ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, РФ вĕрентĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ, 2-мĕш степень «Çĕр-шыв умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» орден медальне, çĕр-шыв тата республика шайĕнчи ытти нумай наградăсене тивĕçнĕ. Апла пулин те вĕсенчен чи хакли тесе хăйне «Муркаш районĕн хисеплĕ гражданинĕ» ят пани тесе шутлать.***

***Валерий Иванович район историйĕпе çыхăннă çав çулсенчи ĕç-хĕл пирки аса илсе каласа пама кăмăл турĕ:***



– Район çыннисем шаннипе Муркаш районĕн самоуправлени пуçлăхĕ пулса сакăр çула яхăн ĕçлерĕм. Аса илмелли, чăннипех те, сахал мар. Çак аса илӳсем вара чĕрере ырă туйăм, ăшă кăмăл çуратççĕ пулсан ун чухне ĕçлени харама кайман, усăсăр пулман.

Эпĕ хама çĕр çынни тесе шутлатăп. Çавăнпа та çĕр ĕçĕ, ял хуçалăхĕ маншăн пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çĕр çыннин вара çывăрма вăхăт çук. Хам ас тăвасса, уйрăмах хĕл кунĕсенче, эпĕ ĕç вырăнне çитнĕ чухне Муркашра чылай хваттерте çутă та курăнмастчĕ-ха. Çапла ĕçленĕ ун чухне.

Чи малтанах хам ума çирĕп дисциплина, йĕркелĕх тума тĕллев лартрăм. Çакна администрацири пирки кăна каламастăп, пĕтĕм район шайĕнчех, кашни ĕç коллективĕнчех. Ответлисенчен ыйтасси те çирĕп пулнă. Çакна пĕр çын кăна тивĕçтереймест. Çавăнпа та йывăрлăхсене татса пама, ĕçлеме пултаракан çирĕп команда йĕркелеме тиврĕ. Енчен те вырăнсенче дисциплина, тивĕçлĕ йĕрке пулмасан производство, аталану пирки калаçни те пуш сăмах кăна. Хама ĕçре пулăшса пынăшăн, пĕрле пĕр чăмăрта пулнăшăн ун чухне самоуправлени пуçлăхĕн çумĕнче ĕçленĕ Альберт Иванов тата Нина Петрова, ял хуçалăх управленине ертсе пынă Владимир Калинин, Игорь Николаев, финанс пайĕн пуçлăхĕ Валентина Иванова, капиталлă строительство управленийĕн пуçлăхĕ Владимир Никитин, информаципе тивĕçтерекен пай пуçлăхĕ Валерий Лаврентьев, вĕренӳ пайĕн пуçлăхĕ Валерий Васильев, самоуправлени ĕçĕсен управляющийĕ Александр Краснов, «Ударник» хуçалăх ертӳçи Платон Давыдов, «Свобода» хуçалăх ертӳçи Кронид Сретинский, «Герой» хуçалăх ертӳçи Алексей Иванов, Суворов яч. хис. колхоз председателĕ Владислав Трофимов, чăх-чĕп фабрикин ертӳçисем Валериан Краснов, Николай Ванеркин, Çатракассинчи комбикорм хатĕрлекен цех ертӳçи Джон Анисов, пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăх пайĕн ертӳçи Николай Любимов, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ Владислав Данилов, районти газ пĕрлешĕвне ертсе пынă Владимир Рубцов ячĕпе тав сăмахĕ каланă пулăттăм. Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕсем Ирина Павлова, Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Петр Воробьев, Оринин ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Михаил Просов, Уйкас Янасал ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Виктор Егоров, Хорнуй ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Валентина Любимова та вырăнсенчи пурнăçа тивĕçлипе йĕркелессипе çине тăрса ĕçленĕ. Вĕсенчен хăшĕсем паян пирĕнпе çук ĕнтĕ.

Вăл вăхăтри пĕр ырă пулăма асăнса хăварас кăмăл пур. Эпир ун чухне пуçласа районти самоуправлени пуçлăхĕ çумĕнче ятарлă коллеги, старейшинăсен районти канашне йĕркелерĕмĕр. Ячĕшĕн мар. Район шайĕнчи экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕпе çыхăннă тĕрлĕ ыйтусене татса панă чухне пысăк опытлă, пурнăç пурăнса курнă çынсен шухăш-кăмăлне пĕлни, вĕсен сĕнĕвĕсене шута илни нихăçан та ытлашши мар. Района ертсе пынă май мана çакă кулленхи пурнăçра пулăшман тесе калама пултараймастăп.

Çав çулсенче Шупашкар хула администрацийĕпе килĕшӳ туса пĕрле çыхăнса ĕçлеме пуçăнтăмăр. Муркаш районĕ валли ун чухне Шупашкарта Калинин районĕнче ял хуçалăх продукцийĕпе сутă тума пасар йĕркелесе пачĕç. Колхоз-совхозсем кăна мар, ял çыннисем те хăйсен килти продукцине унта ирĕклĕнех тата вырăншăн тӳлемесĕрех сутма пултарнă. Çурçĕр пасарĕнче те ял хуçалăх продукцийĕ сутассипе ярмăрккăсем йĕркелеттĕмĕр. Муркашсен пултарулăх ушкăнĕсем хула çыннисене хăйсен таши-юррипе савăнтаратчĕç. Район кунĕсене иртнерĕ чухне вара ĕç коллективĕсем хулари тĕрлĕ предприятисемпе организацисенче экскурсисенче пулса куратчĕç, вĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллашатчĕç. Ку мероприятисене хула администрацийĕн ертӳçисем те яланах хутшăнатчĕç.

Ĕçлĕ хутшăнусене, туслăх çыхăнăвĕсене Пушкăрт Республикинчи Шаран районĕпе те йĕркеленĕ. Делегацисем пĕр-пĕрин патĕнче тăтăшах пулнă, пĕрпĕрин опычĕпе паллашнă, лайăххине пурнăçа кĕртнĕ. Пушкăрт Республикин Президенчĕпе Мустам Рахимовпа та тĕл пулма тивнĕччĕ. Пушкăртсем пирĕн хуçалăхсенчен ăратлă мăйракаллă шултра выльăх, сысна сахал мар туяннă. Культура тĕлĕшпе те çыхăнусем çирĕпленсе пычĕç. Пирĕн художество пултарулăх коллективĕсем вĕсем патĕнче, вĕсен коллективĕсем пирĕн патра тăтăшах пулатчĕç, хăйсен пултарулăхĕпе савăнтаратчĕç.

Районти колхозсемпе совхозсем хамăр республикăри Етĕрне, Красноармейски, Хĕрлĕ Чутай районĕсенчи, Мари Республикинчи Горномари районĕнчи хуçалăхсемпе килĕшӳсем туса туслăн ăмăртса ĕçленĕ. Çакă пĕр-пĕрне ĕçре пулăшса пынă.

Ялсене çут çанталăк газĕ кĕртессипе вăл вăхăтра çине тăрса ĕçлерĕмĕр. Акă 1997 çулта район территорийĕнче газ кĕртессипе пĕтĕмпе 12 организаци ĕçленĕ. Çуллен 50–100 çухрăм газ пăрăхĕ хурса хăвараттăмăр. Республикăри ытти районсем хушшинче эпир чи малтан ялсене газ кĕртсе пĕтертĕмĕр. Кунта пирĕн районта ялсен шучĕ ытти районсенчинчен самай нумайрах пулнине те шута илес пулать. Асфальт сарнă çулсем, нумай хваттерлĕ пурăнмалли çуртсем Муркашра тата Мăн Сĕнтĕрте сахал мар хута янă, япăххисене юсанă.

Районти вĕренӳ ĕçĕ-хĕлĕ тимлĕхре пулнă. Ытлашши пысăк мар тапхăр хушшинчех япăхнă пур шкула та авариллĕ лару-тăруран кăларма май килчĕ. Çавăн чухнех ĕнтĕ пĕрремĕш вĕренӳпе культура центрĕсем йĕркелеме пуçăнтăмăр. Ку енĕпе Муркашсем республикăра кăна мар, Раççей шайĕнче те пĕрремĕшсем пулнă. Кун пек центрсем Турайра, Атапайра, Вăрманкассинче, Юнкăра, Очăкассинче, Сосновкăра ĕçлеме пуçларĕç. Асăннă учреждени-сенче вĕренӳ, культура учрежденийĕсем, библиотекăсем, спортзалсем, ачасене вăхăтлăх усрамалли уйрăмсем пĕр вырăнта вырнаçрĕç.

Вĕренӳре уйрăмах ăнăçлă ĕлкĕрсе пыракан ачасем валли хăйсен пĕлӳ шайне тарăнлатма май туса парас тĕллевпе Муркашра лицей уçрăмăр. Сăмах май унтан вĕренсе тухакан ачасем 100 процентĕпех тĕрлĕ аслă вĕренӳ заведенийĕсене вĕренме кĕретчĕç.

Вĕренӳпе культура комплексĕсем уçассипе пирĕн опыт пур çĕрте те сарăлчĕ темелле. Çак ĕçпе паллашма Муркаш тăрăхне çав вăхăтра Раççей Федерацийĕн вице-премьерĕ Галина Карелова та, РФ вĕренӳ министрĕсем Владимир Филипповпа Андрей Фурсенко та, экономика министрĕ Евгений Ясин та, финанс министрĕн çумĕ Эльвира Набиуллина та, РФ субъекчĕсен пуçлăхĕсен çумĕсен 80 çынран тăракан делегацийĕ те, кунсăр пуçне тата ют çĕршывсен делегацийĕсем те пĕрре кăна мар килнĕччĕ.

Сывлăха сыхлас ĕç отраслĕнче пулса пынă ырă улшăнусене те палăртма кăмăллă. Республика программине пурнăça кĕртсе пынă май ун чухне вырăнсенче пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕсене йĕркелеме тытăнтăмăр. Малтанхи офиссене Нискассинче, Ярапайкассинче йĕркелерĕмĕр. Кунпа пĕрлех районти тĕп больница, пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕсемпе фельдшерпа акушер пунктĕсем хальхи çĕнĕ оборудованипе пуянланса пычĕç.

Çынна ĕç кăна мар, чун çимĕçĕ те кирлĕ теççĕ. Культурăра та палăрăмлă улшăнусем пулни куç кĕрет. Вырăнсенче пултаруллă, ăста художество пултарулăх коллективĕсемпе ушкăнĕсем, ансамбльсем йĕркеленчĕç. Вĕсен ăсталăх шайĕ кунран-кун ӳссе пычĕ. 10 коллектив таран халăх ятне тивĕçрĕ. Коллективсем валли костюмсем, атă-пушмак туянма ытларах чухне укçа-тенкĕ район бюджетĕнчен уйăраттăмăр. Муркашсен пултарулăх коллективĕсем ытти республикăсем, ют çĕр-шывсем таранах тухса çӳренĕ.

Музейсем уçассипе ĕçлерĕмĕр. Муркашра краеведени музейĕ ĕçлеме тытăнчĕ, Сосновкăра Никольский музейне уçрăмăр, Купăрляра Никольский паркĕнче йывăçсем лартрăмăр, сцена турăмăр, пĕвене йĕркене кĕртрĕмĕр, çулне юсарăмăр. Никольский музейне уçассипе Татьяна Степанова библиотекарь, Анатри Панклире музей уçассипе Николай Яковлев чылай тимлерĕç.

Спорт ĕçĕ-хĕлĕ ăнăçлă аталанса пычĕ. Районти самоуправлени пуçлăхĕн кубокĕсене, Олимп вăйăисен чемпионки Валентина Егорова парнисене çĕнсе илессишĕн иртекен ăмăртусем вăй илчĕç. 1000 çын таран хутшăнатчĕ ку ăмăртусене. Район бюджетĕнчен вара тĕрлĕ ăмăртусем, спорт мероприятийĕсем йĕркелеме 1 млн. тенкĕ таран укçа уйăраттăмăр.

Хальхи «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕн чылай çул юхăнса ларнă çуртне ун чухне сӳтме тытăнасси патнех çитнĕччĕ. Газ кĕртсе çуртăн пĕр пайне ăшă пама тытăнтăмăр. Спорт мероприятийĕсем иртме пуçларĕç. Çакăнтан пуçланчĕ те ку объекта ĕçе кĕртесси. Муркашри рынок çак вăхăтра хута кайрĕ.

Район центрĕ, Муркаш урамĕсем малтанхи вăхăтра епле шайра пулнине чылайăшĕ лайăх ас тăвать пулĕ. 1 – 2 çул хушшинче унăн сăн-сăпачĕ палăрмаллах улшăнчĕ. Çулсене çĕнĕрен сарнă, бордюрсене сăрласа илемлетнĕ, картасене çĕнĕрен тытнă, урамсенче çуллен çуркунне пин-пин тĕп чечек лартма тытăннă. Тирпей-илем енĕпе смотр-конкурса хутшăнса район центрĕ республикăра кашни çулах 1 – 3-мĕш вырăнсене йышăнма тытăнчĕ. Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Николай Никитин çак ĕçе кайран малалла тăсрĕ.

Район центрĕнче ача-пăча паркне те уçнăччĕ, Çĕнтерӳ паркĕнче сцена йĕркелерĕмĕр, çĕнĕрен йывăçсем лартса илем кĕртрĕмĕр. Муркашра чиркӳ никĕсне те çав çулсенче хывнăччĕ. Ку тĕлĕшпе ун чухне Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕнче тимленĕ Виталий Семенов пуçарулăх кăтартрĕ.

Ĕçне кура хисепĕ теççĕ. Пысăк чикĕсене çĕнсе илме пултарнă май çав çулсенче район конкурссемпе ăмăртусене хутшăнса чылай наградăна тивĕçрĕ. Çĕр-шыв, республика шайĕнчисем те пур вĕсем хушшинче. Ас тăвасса пĕр çулхине кăна тĕрлĕ отрасль ĕçĕсен кăтартăвĕсемпе район 6 награда илме пултарнăччĕ.

Çак ӳсĕмсенче вара çав çулсенче районта шанса панă ĕç участокĕнче ответлăха туйса вăй хунă кашни çыннăнах тӳпи пур тесе шутлатăп. Ахальтен мар ĕнтĕ вĕсенчен чылайăшĕ республика, çĕр-шыв наградисене, хисеплĕ ятсене çĕнсе илме пултарчĕç. Хама ĕçре уйрăмах пысăк пулăшу кӳнисене, манăн вĕрентекенсем пулнисене вара уйрăмах пысăк тав сăмахĕ калатăп. Кусем вĕсем КПСС Муркаш райкомĕн пĕрремĕш секретарĕсем пулнă Владимир Григорьев, Валериан Краснов, Мичурин яч. хис. колхоз председателĕ пулнă Алексей Петров, «Ударник» совхоза ертсе пынă Платон Давыдов, «Свобода» колхоз председателĕнче ĕçленĕ Кронид Сретинский тата ыттисем. Районăн 70 çулхи аталану историйĕнче вĕсен кашнийĕнех ячĕ манăçми çырăнса юлнă. Пурне те район юбилейĕ ячĕпе саламлатăп, ăнăçусем сунатăп.

**В. ШАПОШНИКОВ çырса илнĕ.**




**Сăн ӳкерчĕксенче: Шупашкар хула администрацийĕн, И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн представителĕсемпе пĕрле районта иртнерĕ канашлу хыççăн; Чăваш Республикин Президенчĕ Н. Федоров, РФ ял хуçалăх министрĕ А. Гордеев Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи Вăрманкассинчи вĕренӳпе культура центрĕн ĕçĕ-хĕлĕпе паллашаççĕ.**

# Ырă ĕç ырă йĕр хăварать

Тăван районăмăр 70 çул тултарнă вăхăтра унăн ятне çӳле çĕкленĕ ĕçчен те паттăр ентешĕмĕр çинчен аса илмесĕр майĕ те çук. Аса илӳ çăмхине сӳтме тытăнсан Муркашсемшĕн те, республикăшăн та паллă, Раççей шайĕнче те унăн ятне пĕлнĕ Платон Павлович Давыдов сăнарĕ куç умне тухать. Унăн ĕçтешĕсемпе ентешĕсен аса илĕвĕпе çак çĕр ĕç паттăрĕн сăнне тата кун-çулне халăхăмăр умне кăларас терĕм.

– Манăн ĕмĕрĕм – 1937 çулта Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи Çĕмĕрткассинче хресчен çемйинче çуралнă çамрăкăн пурнăçĕ – пĕтĕмпех çĕр ĕçĕнче иртрĕ. Ялсенчи уйрăм колхозсем пĕрле пуçтарăнса пысăкланни, вăхăт иртнĕ май хăшĕсем каялла уйрăлни, çĕр ĕçченĕ патне ял хуçалăх техники килме пуçлани, ĕлĕкрех уй-хирте алăпа кăна ĕçленĕ хресчен техникăна алла илни тата унăн пулăшăвĕпе усă курса ӳсĕмсен çĕнĕ картлашкисене çĕнни – манăн кун-çулăн уйрăлми пайĕ. Паян «Ударник» сăнавлă производство хуçалăхне вуншар çул çирĕп алăра тытса пынă П. Давыдов пирки сăмах тапратнине ырлатăп кăна. Ăна районта манманни, унăн ĕçне шута хуни çапла тума ыйтать те. Пирĕн ен хамăр тăрăха П. Давыдов ертсе пыма пуçличчен епле шайра пулни тата «Ударник» хуçалăх тилхепине вăл 30 çул ытла тытса пынă хушăра епле улшăнни, çакăн хыçĕнче мĕнле ĕç тăни – йăлтах ман куç умĕнчи ӳкерчĕксем, – Платон Павлович патне инçетрен çаврăнса тухма пуçларĕ ĕç ветеранĕ З. Кутузов.

Зиновий Михайлович çуралса ӳснĕ ялта пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем йĕркеленнĕ вăхăтра Киров яч. хис. колхозчĕ. Вăхăт иртсен çывăхри ялсенчи колхозсене пĕр чăмăра пухсан Матьăк тăрăхĕнче «Ударник» хуçалăх ĕçлеме пуçлать. Пурнăç аталаннă май ял хуçалăхĕ те унăн урапи çинчен ӳксе юлмасть. Çапла вара иртнĕ ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсенче Матьăк тăрăхĕнчи «Ударник» тата Вăрманкассинчи «Труд» колхозсене Йӳçкассинчи «Знамя коммунизма» хуçалăхпа пĕрлештереççĕ. Çĕнĕ хуçалăха Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин участникĕ Семен Архипович Архипов ертсе пыма тытăнать.

– Йывăр вăхăтсемччĕ çав ун чух. Эпĕ вăл вăхăтра хамăр ялти уй-хир бригадине ертсе пыраттăм. Пĕрлештернĕ колхозра 9 уй-хир бригадиччĕ. Колхозĕпе пĕр ГАЗ-51 автомашинăччĕ, нумай ĕçе пурнăçлама лашапа усă кураттăмăр, алăпа ĕçлеттĕмĕр. Асфальт çулсем, çут çанталăк газĕ, хăватлă техникăпа капмар çуртсем, ялсенчи илемлĕ Культура керменĕсемпе хăтлă магазинсем, Сурăм шывĕ çинчи пысăк плотинасем вăл вăхăтра юмах çеç пулнă. Вĕсем пурнăçа кĕресси ĕмĕтре те пулман. Çавăнпа та умри йывăрлăхсем пĕрлешнĕ колхозсене каялла уйрăласси патне те илсе çитеретчĕç, – аса илĕвне малалла тăсать пĕлĕшĕм. – 1965 çулта пирĕн ялти колхозра çĕр улми тухăçĕ районти чи пысăк кăтарту пулнăран мана республикăри ял хуçалăх институчĕ çумĕнчи колхозсемпе совхозсен ертӳçисене хатĕрлекен шкула вĕренме ячĕç. Çав хушăрах эпĕ куçăмсăр майпа агронома вĕренме кĕтĕм. Çакăн хыççăн пĕтĕм ĕç ĕмĕрĕ тăван ен аталанăвĕшĕн иртрĕ. Тĕрлĕ çулсенче агрономра, парти комитечĕн секретарĕнче, «Ударник» хуçалăх ертӳçинче, çĕр улми вăрлăхĕ туса илекен лаборатори пуçлăхĕнче вăй хума тӳр килчĕ. Ĕç ĕмĕрĕн ытларах пайне П. Давыдовпа юнашар ирттертĕм...

Çулсем иртнипе сарăхнă хут çине машинкăпа пичетлени те, алăпа хушса çырни те, Пĕтĕм Раççейри çĕр улми вăрлăхĕпе ĕçлекен производствăпа наука пĕрлешĕвĕн пуçлăхĕ Д. Заикин алă пусни те пĕрре пăхсан ĕнер çырнă пек çеç курăнаççĕ. Анчах... Мускавра кун çути курнă çак приказ 1981 çулхи утă уйăхĕн 23-мĕшĕнче çырăннă. Унти йĕркесем: «Куçăм йĕркипе Платон Павлович Давыдов юлташа Чăваш АССР-не кĕрекен Муркаш районĕнчи «Ударник» совхоз директорне лартас. Унăн должность окладне 250 тенкĕ çирĕплетес». Çак хут çине эпĕ паян Платон Павлович Йӳçкасси тăрăхĕшĕн 31 çул хушшинче пурнăçланă пысăк ĕçсем урлă пăхатăп. Пĕрре пăхсан ĕнерхи пек кăна, анчах ĕç паттăрĕ тата тăван еншĕн çĕр тĕрлĕ йывăрлăх витĕр тухнă П. Давыдов иккĕмĕш çул ĕнтĕ пирĕн хушăмăрта çук. «Пурнăçа Турă хушнă пек тивĕçлĕ пурăнса ирттересчĕ. Кунсем хыçа юлнă май хамран ырă ят хăварасчĕ. Укса леш тĕнчере кирлĕ пулмĕ, мухтав та хăвăрт ирĕлсе кайĕ. Çын вилет те унран ырă ячĕсĕр пуçне нимĕн те юлмасть. Çак тĕллевшĕн ĕçлесе пынă эпĕ, çавăншăнах паян та куллен ĕçе тухатăп», – тенĕччĕ Платон Павлович чуна уçса калаçнă самантра хăйĕн кашни хусканăвĕнче çĕр ĕçченĕн çирĕплĕхĕ, хресчен пурнăçĕн юратăвĕ пуррине палăртса.

Хăйĕн умне лартнă тĕллеве Сурăм каччи туллин пурнăçларĕ. Районти ял хуçалăх управленийĕн ертӳçинче, кӳршĕллĕ Ильич яч. хис. хуçалăх председателĕнче ĕçлесе ертӳçĕ опытне пухнă ентешĕмĕр тата юлташăмăр «Ударник» хуçалăха 31 çул ертсе пычĕ. Çак вăхăтра Сурăм тăрăхĕ илемленсе, хăтлăланса, вăйланса пынине паян çак тăрăхра пурăнакан тата çак енпе çыхăну тытнă кашни ĕçчен уйрăм тĕслĕхсемпе çирĕплетме пултарать.

31 çул вăл 31 кун мар. Вăт шăпах çавă шухăшлаттарать те паян. Хуçалăх тилхепине çавăн чухлĕ тытса пынă хыççăн та хамăр хутшăнура Платон Павлович ыйтусем нумаййине пытармастчĕ.

– Тĕрĕсех турăм-и-ха эпĕ «Ударник» хуçалăха çавăн чухлĕ ертсе пырса? Теприсем «Çав Давыдов валли урăх ĕç çук-ши? Пĕр ĕç тупнă та унран ниепле те хăтăлаймасть» теççĕ пулĕ. Вĕсен шухăшĕпе кайсан хама та çапла туйăнать. Анчах ку вăл çиелтен пăхсан кăна, – тенĕччĕ вăл мана хуçалăх тилхепине 30 çул тытса пынине паллă тунă чух...



**1982 çулхи кăрлач уйăхĕ. П. Давыдовпа З. Кутузов (варринчи) Шупашкар – Йӳçкасси автобус маршручĕ уçăлнă ятпа яла килнĕ пĕрремĕш автобус водительне çăкăр-тăварпа кĕтсе илнĕ самант. Платон Павловичăн тепĕр ĕмĕчĕ пурнăçа кĕчĕ.**

Çак тăрăхрах Анатри Панклире нумай ачаллă хресчен çемйинче çуралса ӳснĕскерĕн хăй ăссĕн шутлама пуçласанах ял çыннин пурнăçне лайăхлатасси, унăн аталану шайне тĕрлĕ енлĕ йĕркелесси, йывăр ĕçне çăмăллатасси пуçра йăва çавăрнă. Улăм витнĕ çуртсемлĕ урамра ӳссе çитĕннĕрен, амăшĕсен çĕр ĕçĕнчи йывăрлăхне тăтăш куç умĕнче тытнăран ялта пурăнакансен пурнăç шайне лайăхлатассине вăл хăйĕн пурнăç никĕсĕ туса хучĕ. Çавăнпа та хăйне ЧР Правительствине ял хуçалăхĕпе ĕçлеме чĕнсен те, Чăваш АССР-ĕн Аслă Канашĕн тата ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсем пулнă çулсенче (3 хут) Чăваш Республикин Правительство пуçлăхĕн çумĕ пулма ыйтсан та Платон Павлович хăй çуралнă тăрăхра татса паман ыйтусем нумаййине тата хăй пулмасан вĕсем сывлăшрах юласси пирки шутланипе тăван ялтан кайман. Çапла вара пĕтĕм ĕç ĕмĕрне тăван ен аталанăвĕшĕн, кунти ĕçченсен пурнăçне лайăхлатассишĕн ирттерчĕ. Паян вăл ĕмĕтленнĕ ĕмĕтсем пурнăça кĕни Йӳçкасси тăрăхĕнче П. Давыдовăн пурнăç сукмакĕ евĕрех туйăнаççĕ. Кашни ял патне пыракан тата ял витĕр выртакан асфальт çулсем, çĕнĕ ферма çурчĕсем, производствăпа культура объекчĕсем, шкулсемпе сывлăх учрежденийĕсем, обществăлла суту-илӳ центрĕ, столовăйсем, продукци упрамалли складсем, техника вырнаçтармалли гаражсем т. ыт. те...

– Уй-хире тухсан унăн анлăшĕ, çĕр ĕç культури çӳллĕ шайра пулни куç умĕнчен пăрăнса юлаймасть. Çакăнта хуçалăх ертӳçин ĕçĕ, вăл ыйтни малта тăратчĕ. Пĕрре мар асăрханă, хĕвел çинче пиççе хăмăрланнă, ĕç пурнăçĕнче пиншер çухрăм хирпе çӳресе çил çинче кушăрханă аллисемпе çĕр ĕçне чунĕпе парăннă Платон Павлович хирпе пыракан çăмăл автомашинăна чарса ырашпа тулă пучаххисене ыталатчĕ, çĕр улмин шап-шурă чечеке ларнă çеçкисене ачашлатчĕ. Чĕлхи çинче вара унăн пĕр сăмах кăначчĕ: «Тавах, Çĕр-аннемĕр, пуянлăхушăн. Куça курăнаканнине кĕлете кĕртме май панишĕн, унпа тухăçлă усă курма пулăшнишĕн», – аса илчĕ хуçалăхра нумай çул агрономи службине ертсе пынă Иван Тихонов.

Иван Тихонович каласа панинчен. 1981 çулхи утă уйăхĕн 23-мĕшĕнче «Ударник» совхоз тилхепине тытсан П. Давыдовăн пĕрремĕш тĕллевĕ çулсем тăвасси пулчĕ. «Начар çулсемпе производствăна тухăçлă аталантарма çук», – тетчĕ вăл инçĕше тинкерсе. Лартнă тĕллев пурнăçланчĕ. Паян «Ударник» хуçалăх территорийĕнче 40 çухрăм ытла асфальт сарнă çулсем. Çакă йăлтах – ял çыннин пурнăç условийĕсемшĕн, тăван хуçалăх аталанăвĕшĕн. Аса илетĕп те, хăш-пĕр çулсенче пирĕн патăмăрта çул тăвассипе 3-шер подрядчик вăй хуратчĕ. Çулталăкне 10 çухрăм çул туни те – пурнăçри чăнлăх. Çулсем юхан шывсем урлă иртнĕ май Панклире тата Вăрманкассинче металран тата тимĕрпе бетонран пысăк кĕперсем турăмăр, плотинасем пĕвелерĕмĕр. Çапла вара Панклири шыв хранилищи хăй кăна районта чи пысăккисенчен пĕри пулса тăчĕ: шыв çиййĕ 40 гектар ытла лаптăк йышăнать. Ку тăрăх– паян районшăн та, республикăшăн та чи илемлĕ вырăнсенчен пĕри. Вĕсене пăхсан кашнийĕнчех Платон Павловичăн тӳпи курăнать.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсем вĕçĕнчен тытăнса çĕр-шывра çĕр улми вăрлăхĕпе ĕçлессине мала кăларсан Чăваш Республикинче çак ĕçе «Ударник» хуçалăх никĕсĕнче йĕркелеме йышăну пулчĕ. Пирĕн тĕп тĕллев – çĕр улмин паха вăрлăхне 1000 тонна туса илсе сутассиччĕ. Çак ĕçе аталантарассинче П. Давыдов ырми-канми вăй хучĕ. Тĕллевлĕ ĕçлени 80-мĕш çулсем вĕçленнĕ тĕле пиншер тонна «иккĕмĕш çăкăрăн» паха вăрлăхне туса илсе мал туртăмлă хуçалăхсене реализацилемелли çул уçрĕ.

Платон Павловичăн пурнăçĕ ялта çуралса ӳснĕ пиншер ачаннинчен нимĕнпех те уйрăлса тăмасть. Ăна амăшĕ 50 çулта çуратнă. Вăл çемьере 11-мĕш ача пулнă. «Анне колхозра ĕçлени, уй-хиртен ывăнса таврăнни, çав вăхăтрах вăрмана вутă патне çӳрени паян та куç умĕнче. Вăрмантан аннепе пĕрле хул пуççи çине хурса вутă-шанкă йăтни – манăн ачалăхăмăн уйрăлми пайĕ. Хăрăк-марăкпа пӳрт ăшăтсах ӳсрĕмĕр, ачалăхран тухрăмăр. 1965 çулта вăтам шкул пĕтерсен тепĕр çулне салтака илсе кайрĕç. 1969 çулта çартан таврăнсан малалла вĕренме условисем çитсех каймарĕç. Чирлĕ аннене пăхмалла тесе клуб заведующине вырнаçрăм. Ĕç укçи 67 тенкĕ те 50 пусчĕ. Ĕçпе парăнăши, пĕлместĕп, анчах клубра нумай вăй хураймарăм: КПСС райкомĕ мана партипе совет шкулне экономиста вĕренме ячĕ», – каласа панăччĕ П. Давыдов.

Парти шкулĕнчен вĕренсе тухсан çамрăк коммунист Муркашра ĕç вырăнĕ пулманран 2 çул Элĕкри парти райкомĕнче вăй хурать. 1974 çулхи кăрлачра тин Муркаш райкомне куçать. Çак çулхи утă уйăхĕнчех парти райкомĕ ыйтнипе Платон Павлович ял хуçалăхĕпе ĕçлеме пуçлать. Ильич яч. хис. колхоз председателĕнче, районти ял хуçалăх пайĕнче, райĕçтăвком председателĕн Л. Софроновăн çумĕнче тимленĕ хыççăн ăна «Ударник» хуçалăха ертсе пыма шанни пирки пĕлтереççĕ те.

– Тулли кăмăлпа хамăн тăван енре ĕçлеме килĕшрĕм. Йывăрччĕ паллах, анчах тăван ене аталантарассипе çыхăннă ачалăхри шухăш-ĕмĕт кунсерен вăй парса тăчĕ. Çапла вара 30 çул хушшинче гектартан 11 центнер тыр-пул илнĕ хуçалăхра тухăça 40 центнера çитертĕмĕр, çĕр улми вăрлăхĕ туса илессипе паллă ят çĕнсе илтĕмĕр, ялсене тĕпрен çĕнетрĕмĕр, ял çыннисен пурнăçне çĕнĕ варкăш кĕртрĕмĕр. Пурăнмалла, ĕçлемелле, тулăх пурнăçшăн савăнмалла, – аса илтĕм П. Давыдов сăмахĕсене.

Йывăрлăхсене çĕнтерсех Платон Павлович кӳлĕннĕ хуçалăх çулсерен ӳсĕм çулĕпе малтан мала утăмларĕ, ыттисемшĕн районта та, республикăра та, Раççейре те ырă тĕслĕх çĕнсе илчĕ. Çапла вара малтанхи çулсенче 100-шер тонна паха çĕр улми вăрлăхĕ туса илнĕ хуçалăх иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсенче пиншер тонна кăтарту çине тухрĕ. 1989 çулта «иккĕмĕш çăкăрăн» паха вăрлăхне Йӳçкассисем 3636 тонна туса илсе реализацилерĕç. Мал ĕмĕтпе ĕçлекеншĕн çакă та чикĕ пулмарĕ. Тепĕр 5 çултан ку кăтарту 3793 тоннăна, 1995 çулта 5790 тоннăна çитрĕ. Хуçалăхра çак çулсенче çĕр улми лартса ӳстерессипе тата кăларса кĕртессипе пĕтĕмпех çĕнĕ техника ĕçлеме пуçларĕ. Шывпа тулнă çырмасемлĕ, çĕр ишĕлекен вырăнсенче вăй илнĕ вăрман тăрăхĕсемлĕ ен çĕр ĕçĕнче çĕнĕ технологисене çул парса вăрлăхлăх çĕр улмине упрассине те наука вĕрентнĕ пек йĕркелесе ячĕ. Хуçалăх ĕçченĕсен ĕç укçийĕ те палăрмаллах ӳсрĕ.

Тăрăшуллă ĕçченĕн, мал туртăмлă ертӳçĕн, хăйĕн ĕçне пĕлекен экономист-йĕркелӳçĕн Платон Павлович Давыдовăн çак тапхăрти ĕçне çĕр-шыв та пысăка хурса хакларĕ. «Ударник» хуçалăхăн ертӳçи Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ ял хуçалăх ĕçченĕ, «Хисеп Палли» орденпа «Чăваш Республики умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» орден медалĕн кавалерĕ пулса тăчĕ.

– «Ударник» сăнавлă производство хуçалăхĕ пек пысăк территорире йĕрке туса производствăна çирĕп алăра тытса пыма çăмăл маррине кашниех ăнланатпăр. Анчах Платон Павловича çакă хăратман. Ăна тăван çĕр вăй парса тăнă. Çакна эпир сисеттĕмĕр. Ăнланаттăмăр та май пур таран ăна пулăшма тăрăшаттăмăр, – малалла сăмах хушрĕ И. Тихонов. – Платон Павлович хăй хресчен ачи, ял çынни пулнишĕн мухтанатчĕ. «Маншăн урăхла çул çук. Мана çĕр-шыв тупăшшăн мар, ял çыннисен пурнăçне лайăхлатассишĕн ĕçлеме вĕрентсе воспитани панă. Çак воспитанипе пурнăçăма ирттеретĕп те», – тетчĕ вăл...

– Пирĕн хуçалăхра ял çыннисен 800 ытла хушма хуçалăхĕ. Вĕсене вутă патне кайма, уголь-брикет кӳрсе килме, ялти магазинсене тавар патне тухса кĕме автомашинăпа тивĕçтересси – директорăн тивĕçĕччĕ. Сисеттĕм, тăтăшах хумхантаратчĕ ăна çак ыйту. Никама та кӳрентерес килместчĕ унăн. Кулленхи ыйтусене татса парассипе ĕçленĕ хушăрах директор тилхепине тытсан хуçалăха çут çанталăк газĕ кĕртесси ăна канăç пами пулчĕ. Хамăр хуçалăх урлă газ пăрăхĕ иртсе кайнă май çав çулсенче Куславккара палăртнă газ пайламалли станцие те вăл хамăр пата куçарма пултарчĕ. Çапла вара 1988 – 1993 çулсенче пирĕн хуçалăхри 13 яла та çут çанталăк газне илсе çитертĕмĕр. Çакăн хыççăн ачалăхри улăм витнĕ пӳртсем çĕнелме, çут çанталăк газĕпе ăшăнма пуçларĕç. Ялсенче 2-шер хутлă пӳртсем курăнма тытăнчĕç, нумай çын пӳртсене те шыв кĕртрĕ, – хăйĕн аса илĕвне тăсрĕ З. Кутузов.

Хуçалăхри çĕр ĕç аксакалĕсем каласа панă тăрăх П. Давыдов ăста экономист-йĕркелӳçĕ пулнипе пĕрлех пĕр вăхăтрах агрономччĕ те, инженерччĕ те, зоотехникчĕ те, строительччĕ те. Çăмăл мар пулин те, ертӳçĕн пурне те пĕлмелле тесе пире те кашни ĕçрех ответлăха туйма вĕрентетчĕ. Хăй вара ĕç мелĕсене Социализмла Ĕç Геройĕнчен Евтихий Андреевич Андреевран, «Сеятель» хуçалăха ăнăçлă ертсе пынă Сергей Афанасьевич Афанасьевран, райкомăн 1-мĕш секретарĕнчен Валериан Семенович Красновран, Мичурин яч. хис. колхоз председателĕнчен Алексей Петрович Петровран тăтăш вĕренсе пыратчĕ.

Платон Павлович малашлăха пăхма пĕлнипех ялсене çĕнĕ пурнăç варкăшĕ килсе кĕчĕ. Хуçалăх ĕçченĕсемпе вĕсен ачисене пурăнма, вĕренме тата усăллă канма пирĕн вăхăтра совхоз вăйĕпе тунă 2 хваттерлĕ çуртсем, магазинсем, спорт залĕллĕ Культура çурчĕ, шкул-сад, медпункт, ача сачĕсемпе пĕрлех Йӳçкассинчи вăтам шкул, ветерансен çурчĕ, участокри больница, суту-илӳ центрĕ, Йӳçкассинчи 3 хутлă 27 хваттерлĕ çурт, клубсемпе Анатри Панклири краеведени музейĕ хута кайрĕç. Çырмасем шывпа тулчĕç, ишĕлекен вырăнсенче вăрман тăрăхĕсем вăй илчĕç.

Тыр-пул тухăçне 4 хута яхăн ӳстернĕ хыççăн хуçалăх хирĕсене районта пуринчен малтан «Дон-1500» комбайнсем тухрĕç. Аталанăвăн çак çулĕ çинче патшалăх пулăшăвĕпе хуçалăхри тăрăшулăх пĕр шайрах пычĕç. Йăлтах хуçалăх ĕçлесе илнĕ укçа-тенкĕпе тунă, ял халăхне те пулăшнă.

Платон Павлович мал ĕмĕтлĕ ертӳçĕ пулнине юлашки çулсенче Йӳçкассинче çĕкленнĕ чиркӳ те çирĕплетет. Çак çĕнĕлĕхре – хуçалăхăн тӳпи тĕп вырăнта. 2005 çулта унта ĕçленĕ больница вата çынсемпе инвалидсен çуртне куçрĕ. Ун хыççăн пушанса юлнă çуртра чиркӳ уçас шут тытнă ертӳçĕ пĕррехинче З. Кутузова хăй патне чĕнсе илет.

– Чылай сăмахланă хыççăн вăл мана çав ĕçе ертсе пыма сĕнчĕ. Килĕшрĕм. 110 çул каялла уçнă чиркӳ 2012 çулхи çурла уйăхĕн 1-мĕшĕнче çĕнĕрен ĕçлеме пуçларĕ. П. Давыдов йĕркелесе пынипе «Ударник» хуçалăх çак сăваплă ĕçе 4–5 миллион тенкĕ хыврĕ. Вăл халăхшăн усăллă пуласса, чиркӳ çитĕнекен ăрăва тĕрĕс воспитани пама пулăшасса паян пирĕн тăрăхра кашниех шанать. Укçа-тенкĕ кăна мар, чун апачĕ те кирлĕ-çке пире, – тет паян З. Кутузов.

Пурнăç пĕр вырăнта тăмасть, тăтăш аталанса пырать. Ялсем çирĕп утăмпа малалла кайччăр, ял хуçалăхĕ çĕнĕ аталану шайне çĕклентĕр, çамрăксем ял хуçалăхĕнчех юлса ĕçлеччĕр тесен паянхи ялсенче тĕрлĕ производство йĕркелемелле, çĕнĕлле ĕçлекен кооперативсем уçмалла, вĕсене çителĕклĕ пулăшу памалла. Кашни çын хăй ĕçлени хăйĕншĕн пулнине куртăр. Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче те çак çулпа кайса пĕрисем выльăх ĕрчетчĕр, теприсем çĕр улмипе ĕçлеччĕр, виççĕмĕшсем механизацие аталантарччăр, тăваттăмĕшсем туса илнĕ продукцие реализацилессине тĕпе хурччăр. Çакна лайăх шухăшласа йĕркелени ял хуçалăхне аталанăвăн çĕнĕ шайне çĕклĕ. Çакнашкал тĕллевлĕччĕ Платон Павлович.

**А. БЕЛОВ.**

**Сăн ӳкерчĕке З. Кутузовăн çемье архивĕнчен илнĕ.**

# «Вӑл вӑхӑтсем паян та асра»

Йӑла ыйтӑвӗсен Муркашри предприятийӗ районта вырнаҫнӑ икӗ промкомбинатран пуҫланса кайрӗ. Промкомбинатсем вара районти пӗчӗк промысла артелӗсем пӗрлешнипе пулса кайнӑ. Пӗри Муркаш, тепри Мӑн Сӗнтӗр салисенче вырнаҫнӑ. Промкомбинатсем ытларах вырӑнта усӑ курмалли таварсем кӑларнӑ тата халӑха пӗчӗк йӑла пулӑшӑвӗсем туса панӑ.

Йӑла ыйтӑвӗсен Муркашри комбинатӗнче эпӗ 1964-мӗш ҫулта ертӳҫӗре ӗҫлеме пуҫларӑм. Эпӗ ун чухне 30 ҫултаччӗ. Унччен вара Мӑн Сӗнтӗрти комбинатра тӗп инженер пулса тимлерӗм. Комбинатра ҫав вӑхӑтра пӑта цехӗ, тимӗртен тӗрлӗ ытти япала ӑсталаса кӑларакан мастерской ӗҫлетчӗ. Ҫавӑн пекех ҫӗвӗ мастерскойӗ, парикмахерски тата сӑн ӳкермелли пӳлӗм пулнӑ. Сурӑм тӑрӑхӗнчи Вӑрманкасси ялӗ патӗнче ҫуна ӑсталатчӗҫ. Унпа ытларах колхозсем усӑ курнӑ ӗнтӗ. Ҫуна ӑсталама каллех вӑрман ӗҫлемелле пулнӑ. Кив Матьӑк тата Шетмӗпуҫ ялӗсенче ҫӗвӗ мастерскойӗсем ӗҫлетчӗҫ. Турайри чиркӳ ҫуртӗнче ҫӑкӑр тата пӗремӗк пӗҫеретчӗҫ, кӗсел тӑватчӗҫ.

1962 ҫулта республикӑра Халӑха йӑла ыйтӑвӗсемпе тивӗҫтерекен уйрӑм министерство туса хучӗҫ. Ҫапла вара районти икӗ промкомбинатран халӑха йӑла ыйтӑвӗсемпе тивӗҫтерекен комбинатсем туса хучӗҫ. Вӗсен тӗп тӗллевӗ районти ӗҫ ҫыннисене ытларах йӑла пулӑшӑвӗ парасси пулчӗ.

1967 ҫулта Муркашра 45 ҫын ӗҫлемелӗх Йӑла ҫуртне ҫӗнӗрен туса лартрӑмӑр. Ҫапла вара унта тӗрлӗ мастерской ӗҫлеме пуҫларӗ, ҫакӑнта вӑй хуракансен условийӗ те лайӑхланчӗ. Муркашра пушаннӑ йывӑҫ ҫурта тепӗр ҫулхине Турай участокне кайса вырнаҫтартӑмӑр. Унта ҫӗвӗ мастерскойӗ, парикмахерски ӗҫлеме пуҫларӗ.

1970 ҫулта пирӗн системӑра нумай улшӑну пулса иртрӗ. Мӑн Сӗнтӗрти кирпӗч заводне уйрӑм предприяти туса хучӗҫ. Вӑл вара урӑх министерствӑна пӑхӑнма пуҫларӗ. Пирӗн те Вӑрманкассинчи ҫуна тӑвакан участока, кирпӗч кӑларакан ҫак завода хамӑртан уйӑрма тиврӗ. Ҫавӑн пекех пӑта тӑвакан цеха Сӗнтӗрвӑрринче ҫӗнӗрен пӑта тӑвакан цеха патӑмӑр. Ҫапла вара пӗтӗм станока унта ӑсатма лекрӗ.

1974 ҫулта пушанса юлнӑ цех ҫуртне тӗпрен юсарӑмӑр та трикотаж цехӗ уҫрӑмӑр, унта тӗрлӗ тум ҫыхатчӗҫ, ҫӗнӗ оборудовани вырнаҫтартӑмӑр. Халӑх питӗ кӑмӑллатчӗ ҫакӑнта кӑларакан продукцие. Цехра 40 ҫынна яхӑн ӗҫлетчӗ.

Ҫапла вара ҫултан-ҫул йӑла пулӑшӑвӗ парасси, ҫавӑнпа пӗрлех тупӑш илесси те ӳссех пычӗ. Каллех производство лаптӑкӗ ҫитми пулчӗ.

1980 ҫулта Муркашри Йӑла ҫуртне пристрой туса пысӑклатрӑмӑр. Газпа хутса ӑшӑтмалла турӑмӑр. Кашни ял Совет территорийӗнчех йышӑну пӳлӗмӗ ӗҫлеме пуҫларӗ. Вӗсенче парикмахерскисем, сӑн ӳкерӗнмеллисем ӗҫленӗ, ҫавӑн пекех унта телевизор, холодильник юсассине йӗркеленӗ. Йышӑннӑ ытти заказа пурнӑҫламашкӑн диспетчерскине ярса панӑ. Ҫак пунктсенчи ӗҫе йӗркелесе пыма диспетчер службине туса хунӑ. Кашни пункта график тӑрӑх ятарлӑ икӗ автомашина заказсемпе рейса тухнӑ. Йышӑну пункчӗсене уҫнӑ ӗҫре пире колхоз тата совхоз ертӳҫисем нумай пулӑшрӗҫ. Хӑшӗсем ҫӗнӗ ҫурт туса пачӗҫ, теприсем хӑйсем усӑ курман ҫурт уйӑрчӗҫ. Ҫав вӑхӑтра ӗҫленӗ ертӳҫӗсене пӗр-пӗрне ӑнланса тимленӗшӗн паян та пулин тав сӑмахӗ калас килет.

Ҫапла вара юлашки ҫулсенче районта икӗ Йӑла ҫурчӗ, трикотаж цехӗ, ҫурт лартакан тата юсакан участок, 25 йышӑну пункчӗ, диспетчер служби ӗҫлетчӗ. Пӗтӗмпе пирӗн коллективра 200 яхӑн ҫын вӑй хунӑ. Эпир сӗннӗ пулӑшу тӗсӗсене вара асӑнса та пӗтереймӗн. Коллективра нумай ҫул ӳсӗмлӗ ӗҫлекенсем чылайӑн пулнӑ. Хӑшӗсене ятранах асӑнас килет: Г. Виноградова – Йӑла ҫурчӗн маҫтӑрӗ, Л. Пудова – трикотаж цехӗн маҫтӑрӗ, Н. Скворцов – РСУ маҫтӑрӗ, З. Романова – сехет юсакан, Л. Пушкина, М. Грачева, А. Мастерова – ҫӗвӗҫсем, Н. Барминов – атӑ-пушмак юсакан тата ыттисем те тӑрӑшуллӑ ӗҫленӗ, кашнин ятне палӑртса та пӗтереймӗн.

Ӗҫри пысӑк ӳсӗмсемшӗн Катькасри йышӑну пункчӗн приемщицине О.Тяминӑна Чӑваш тата Раҫҫей халӑх ыйтӑвӗсене тивӗҫтерессин тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ ят панӑ тата "Хисеп палли" орденпа чысланӑ. Н. Барминов – «Чӑваш Республикин халӑх ыйтӑвӗсене тивӗҫтерессин тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ" ятлӑ пулчӗ. Эпӗ вара 1996 ҫулта тивӗҫлӗ канӑва тухнӑ май ӗҫлеме пӑрахрӑм.

**П. ИСАЕВ,**
**йӑла предприятийӗнчи ветерансен канашӗн ертӳҫи, "Чӑваш Республикин халӑх ыйтӑвӗсене тивӗҫтерессин тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ" .**



**Сӑн ӳкерчӗкре: коллективӑн пӗр ушкӑнӗ Ильинкӑри кану ҫуртӗнче каннӑ вӑхӑтра.**

# «Ҫапла аталанчӗ культура ӗҫӗ»



Район йӗркеленнӗ тапхӑрта 3 библиотека, 14 вулав ҫурчӗ, 6 клуб ӗҫленӗ. Муркаш ялӗнчи библиотекӑна 1945 ҫулта уҫнӑ. Кунти пӗрремӗш ӗҫчен Александра Григорьева пулнӑ, каярах тепӗр штат хушса панӑ. Библиотека чиркӳ кил хушшинчи просвир тӑвакан ҫуртра вырнаҫнӑ. Ял Совечӗ ҫумӗнчи Муркашри вулав ҫурчӗ те хӑй ӗҫне пӑрахман.

1949 ҫулта Муркаш ялӗнчи клубпа библиотека тата Тивӗшри клуб кӑна уйрӑм ҫуртра пулнӑ. 1950 ҫултан пуҫласа ятарлӑ пӗлӳ илнӗ ҫын нумайланса пынӑ. 1953 ҫулта кӗҫӗн ӑрурисен фондне тӗп фондран уйӑрса ача-пӑча библиотеки туса хунӑ. Кунти пӗрремӗш библиотекарь Нина Жидкова пулнӑ.

Чӑваш АССР Министрсен Совечӗ 1949 ҫулхи декабрӗн 23-мӗшӗнче «Муркаш районӗнчи культурӑпа ҫут ӗҫ учрежденийӗсен ӗҫӗ-хӗлӗ ҫинчен» постановленин йышӑннӑ. Унта районта культура учрежденийӗсем уйрӑм ҫуртсенче пулмаллине, ҫӗнӗ клубсемпе библиотекӑсем тумаллине палӑртнӑ.

1955 ҫулта Муркашри клубӑн ҫӗнӗ ҫуртне туса пӗтернӗ. 1956 ҫулта иккӗмӗш хутне библиотека фондне куҫарнӑ. Утмӑлмӗш ҫулсенче тӗп библиотека хӑйӗн фондӗнче 16106 кӗнеке тытса тӑнӑ. Ялти библиотекӑсенче 4000 – 6000 кӗнеке пулнӑ. Район бюджетӗнчен Муркаш библиотекине тытса тӑма 6 пин тенкӗ уйӑрса панӑ. Унсӑр пуҫне централизациленӗ майпа татах тепӗр 6 пин тенкӗ укҫа уйӑрса панӑ. Ҫак укҫа шутӗнчен 3 пин тенкӗлӗх тӗрлӗ издани ҫырӑннӑ. Тӗп библиотекӑна кӑна тӗрлӗ 15 хаҫатпа 48 журнал килсе тӑнӑ. 1965 ҫул тӗлне районта библиотекӑсен хисепӗ 29-а ҫитнӗ.

Ҫапах та культура сфери 80 ҫулсенче вӑйлӑ аталаннӑ тапхӑр шутланать. Ҫак ӗҫе районта 1980 – 1993-мӗш ҫулсенче чылай ҫул Роза Седатлова ӑнӑҫлӑ ертсе йӗркелесе пынӑ. Ҫавна май эпӗ район юбилейӗ умӗн хисеплӗ ҫыннӑмӑрпа тӗл пулса калаҫма васкарӑм. Роза Егоровна культура ӗҫӗ-хӗлӗпе паллаштарма кӑмӑл турӗ:

– «Культура» ӑнлав питӗ анлӑ пӗлтерӗшлӗ. Вӑл этемлӗх цивилизацийӗнче нумай ӗмӗр хушшинче туса ҫитернӗ илемлӗх хаклӑхӗсене кӑна палӑртмасть, вӑл ҫынсен хутшӑнӑвӗнчи мӗн пур сферӑна пырса тивет. Культурӑна, ҫавӑн пекех унӑн пӗлтерӗшне ӑнланса куллен ӳстерсе пырасси норма шайӗнче пулмалла. Пӗтӗмӗшле культурӑсӑр этемлӗх малалла аталанаймасть. Кӑҫал Культура ҫулталӑкӗ пулни питӗ кӑмӑллӑ, апла пулсан ҫак сфера ҫине ытларах тимлӗх уйӑрасса шансах тӑрӑпӑр.

Вӑйлӑ аталаннӑ 80-мӗш ҫулсенче район шайӗнче библиотека системи централизациленчӗ, клуб ӗҫӗ-хӗлӗ ял Совечӗсенче анлӑланчӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн библиотекӑн централизациленӗ пӗр системи (ЦБС), клубӑн централизациленӗ вун ҫичӗ системи вӑя кӗчӗ. Библиотекӑсенчи кӗнеке хисепӗ хулари шая ҫитрӗ. Ваҫкассинчи, Шурчари, Турайри, Тренккӑри, Юнкӑри, Матьӑкри Культура ҫурчӗсене колхозсен укҫи-тенкипе ҫӗнӗрен ҫӗклерӗҫ. Ҫак типлӑ ҫуртсенче ятарлӑ тӗрлӗ пӳлӗм, вӑл шутра библиотека, курав залӗ тата ытти уйрӑм турӗҫ. Ҫавӑн пекех 5 клуб лартрӗҫ, районти тата ытти Культура ҫурчӗсене тӗпрен юсаса ҫӗнетрӗҫ. Мичурин ячӗллӗ хуҫалӑх ертӳҫи А. Михайлов тимленипе Шетмӗпуҫӗнчи тата Тивӗшри Культура ҫурчӗсене реконструкцилерӗҫ. Ҫавӑн пекех вӑл тӗрлӗ тум, музыка инструменчӗ туянма тата вырӑнти, район шайӗнчи мероприятисем ирттерме чылай пулӑшрӗ.

КПСС ЦК Пленумӗн 1983 ҫулхи июньти хушӑвӗпе килӗшӳллӗн культурӑпа воспитани тата физкультурӑпа сывлӑх сыхлавӗн ӗҫӗсене хутшӑнакан патшалӑх, профсоюз, ведомство учрежденийӗсемпе организацийӗсен пӗрлехи ӗҫӗ районта 1984 ҫултан тытӑнса татах та ытларах вӑйланчӗ. Ҫак вӑхӑтран пуҫласа мӗн пур массӑллӑ культура, спорт мероприятийӗ обществӑлла кооридинаци канашӗ ҫирӗплетнӗ планпа, сценарипе пурнӑҫланчӗ. Культура пайӗ тӗллевлӗ ятарлӑ социаллӑ культура программине йышӑнчӗ. Ҫапла вара «Пӗрремӗш суха», «Пӗрремӗш кӗлте», «Ҫӗнӗ тыр-пулран пӗрремӗш ҫӑкӑр» тата урампа ял уявӗсем, ҫавӑн пекех «Ҫӑкӑр – пуриншӗн те пуҫ» курав ирттересси йӑлана кӗме пуҫларӗ. Клубпа библиотека ӗҫне чылай ҫӗнӗлӗх кӗчӗ. Культура ӗҫченӗсем хутшӑннипе тата йӗркеленипе питӗ нумай мероприяти иртрӗ.

Культура учрежденийӗсенче вӑй хуракансем валли колхозсемпе совхозсен укҫи-тенки шучӗпе тӗп оклад ҫумне 30 процент хушма хавхалантару кӗртме май килчӗ.

Культура ӗҫне аталантарма йышӑннӑ хушусем ытларах тухнӑ май ял хуҫалӑхӗнче тимлекенсем те тӗп ӗҫ вырӑнӗнчех агитбригадӑсемпе тӗл пулчӗҫ, тӗрлӗ информаци илме пултарчӗҫ. 1985 ҫул пуҫламӑшӗ тӗлне районта 2 автоклуб, 1 библиобус, культура пайӗ ҫумӗнчи агитбригадӑн икӗ ушкӑнӗ тата ялсенчи Культура ҫурчӗсем ҫумӗнчи агитбригадӑн 7 ушкӑнӗ ӑнӑҫлӑ ӗҫлесе пычӗ. 1990 ҫул вӗҫне вара 17 Культура ҫурчӗ агитбригада ӗҫне йӗркелесе ячӗ.

Чӑваш АССР-ӗн Министрсен Совечӗн 1983 ҫулхи 168 № постановленине вӑя кӗртсе пынӑ май музейсем ҫине ытларах тимлӗх уйӑрасси пуҫланчӗ. Шкул музейӗсем тӗрлӗ экспонатпа пуянланчӗҫ. 1985 ҫулта «Ударник» хуҫалӑхра музей уҫӑлчӗ, 1987 ҫулта Муркашра краеведени музейӗ валли шкул ҫуртне юсас ӗҫ пуҫланчӗ.

Чӑваш АССР-ӗн Министрсен Совечӗн 1985 ҫулхи 460 № постановленине пурнӑҫланӑ май ялсенчи тӗп Культура ҫурчӗсем ҫумӗнче парксем валли уйрӑм лаптӑксем палӑртрӗҫ. Йывӑҫсем лартса 4 парк, 5 аллея турӗҫ тата ытти ҫӗрте те ку енӗпе тимлерӗҫ.

Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑра ҫӗнтернӗренпе 40 ҫул ҫитнине халалланӑ конкурса тӑватӑ культура учрежденийӗ ЧАССР Культура министерствин Хисеп грамотине тивӗҫрӗ. Ҫавӑн пекех ҫак тапхӑра чысланӑ Пӗтӗм Союзри халӑх пултарулӑхӗн смотрӗнче Орининти халӑх театрӗ, культура ӗҫӗнче вӑй хуракан хӗрарӑмсен ансамблӗ, Мӑн Шашкарти ял клубӗ ҫумӗнчи фольклор ансамблӗ лауреат пулса тӑчӗ, дипломатсем те йышлӑн пулчӗҫ.

Халӑх пултарулӑхне аталантарассинче ответлӑ ӗҫченсем пысӑк тӳпе хыврӗҫ. Вӗсене ятранах асӑнса хӑварас килет: Ю. Иванов, Л. Хораськина, Н. Петров, М. Рубцов, А. Скворцов, В. Данилов, Л. Самушков, В. Басяев, Е. Расторгуева, А. Андреева, В. Яриков, В. Игнатьева, Э. Петрова, В. Вязов, А. Егоров, Л. Ильгечкин, М. Петров, ҫавӑн пекех эпӗ тата ытисем те.

Районти Культура ҫуртӗнче методканаш йӗркеленчӗ. Кӑмӑл тӑвакансемшӗн ҫулсеренех 15 тӗрлӗ кружок ӗҫлерӗ. Уйрӑмах «Шурӑмпуҫ» халӑх юрӑпа ташӑ ансамблӗ (хормейстерсем Ю. Жуковпа В. Александров, балетмейстерсем С.Каликовпа Л. Киселева), районти культура ӗҫченӗсен хорӗ (ертӳҫи В. Александров) ӑнӑҫлӑ ӗҫлерӗ.

Район историйӗнче пӗрремӗш хут 1981 ҫулта ача-пӑча бал ташшисен ансамблӗ (ертӳҫи Р. Софронова) йӗркеленчӗ. Вӑл тӑрӑшнипе ансамбль «халӑх» ята тивӗҫрӗ. Ҫавӑн пекех районти кирек епле ача-пӑча мероприятийӗ те вӑл тӑрӑшнипе иртрӗ. Вӑлах тумне ҫӗлетчӗ, сценари хатӗрлетчӗ, ыттисене тӗрлӗ пулӑшу паратчӗ. 1989 ҫулта Ярославкӑри ача-пӑча хорӗ (ертӳҫи Ю. Усов) «халӑх» ята тивӗҫрӗ.

Хор коллективӗсем те питӗ пултаруллӑччӗ, кашни ушкӑна 30 ытла ҫын хутшӑнатчӗ, ташӑ мӑшӑрӗ те пиллӗкрен кая пулман. Ҫӗнӗ ушкӑнсем йӗркеленсе ӗҫлеме пуҫларӗҫ: вокалпа инструмент ансамблӗсем Культура ҫурчӗсем ҫумӗнче 10, клубсем ҫумӗнче 2. 1981 ҫулта ҫакӑн йышши ансамбль 1 пулнӑ пулсан, 1990 ҫулта вӗсен шучӗ 15-е ҫитрӗ. Халӑх инструменчӗсен ансамблӗ культурӑн 9 учрежденийӗ ҫумӗнче, тата духовой оркестр 6 учреждени ҫумӗнче йӗркеленчӗ. Культура учрежденийӗсем 5-шер е унтан та ытларах ҫул сумлӑ ята тытса тӑчӗҫ.

1990 ҫулта халӑх пултарулӑхӗн Пӗтӗм Союзри фестивалӗ иртрӗ. Ҫак мероприятире Орининти хор (ертӳҫи В. Александров), Мӑн Сӗнтӗрти художество пултарулӑх ушкӑнӗ (ертӳҫи А. Захарова), Орининти ташӑ ушкӑнӗ (ертӳҫи С. Каликов), Е. Андреев ячӗллӗ хуҫалӑхӑн халӑх инструменчӗсен оркестрӗ (ертӳҫи Ф. Григорьева), хут купӑсҫӑсен Тойкилтӗри ансамблӗ (ертӳҫи Д. Егорова) лауреат пулса тӑчӗҫ.

Тава тивӗҫлӗ ӗҫсемшӗн СССР Культура министерствин значокӗпе Ф. Григорьевӑна, А. Николаева, Т. Ивановӑна, ЧАССР Культура министерствин значокӗпе Г. Голубевӑна, В. Илларионова, А. Захаровӑна, Л. Кроликовӑна, В. Александрова, Л. Вишневӑна, Н. Романовӑна, Г. Фадеевӑна чысларӗҫ ҫав ҫулсенче. Вӗсенчен чылайӑшӗ халӗ те культура ӗҫӗнче ӑнӑҫлӑ тӑрӑшать.

80-мӗш ҫулсенче ӑнӑҫлӑ вӑй хунӑ художество пултарулӑх ушкӑнӗсем тата уйрӑм ӗҫченсем халӗ те тӗрлӗ юрӑ-кӗвӗпе, хӑйсен ӑсталӑхӗпе савӑнтарма пултарнишӗн эпӗ питӗ савӑнатӑп, – калаҫӑва вӗҫлерӗ Роза Егоровна.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА**
**калаҫнӑ.**

**Сӑн ӳкерчӗкре: Р. Седатлова культура ӗҫӗпе паллаштарать.**

# Вĕренӳ аталанăвĕсĕр пуласлăх çук

***Хăй вăхăтĕнче халăха вĕрентес ĕçĕн тивĕçлĕ аталанăвĕ пулман пулсан пирĕн районăн хальхи те, пуласлăхĕ те шанчăклă алăра пулаймĕччĕ. 1987 çултанпа районти вĕренӳ сферине 19 çул Валерий Михайлович Васильев (паян Чуманкассинчи вăтам шкул директорĕ) ертсе пынă. Çав тапхăра вăл акă мĕнле аса илет:***

– 1987 çулта пирĕн çĕр-шывра çĕнĕ вĕренӳ реформин никĕсĕсене палăртса хунăччĕ. Çав çулхи сентябрь уйăхĕнче мана Муркаш райĕçтăвкомĕн халăха вĕрентес ĕç пайĕн пуçлăхĕ пулма суйласа лартрĕç. Тепĕр çултан, 1988 çулхи декабрь уйăхĕнче, Пĕтĕм Союзри вĕренӳ сферинче ĕçлекенсен съезчĕ пулса иртрĕ. Муркашпа Етĕрне районĕсен вĕренӳ сферинче ĕçлекенсем унта делегат пулса кайма Муркашри вăтам шкулта вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекен Людмила Герасимовна Кондратьевăна суйларĕç.

Съездра вĕренӳ ĕçне çĕнетсе улăштармалли принципсене çирĕплетсе хăварнă. Вĕсем вĕренĕве демократизацилессипе çыхăннă пулнă. Çавăн пекех вĕренĕве гуманизацилес тата гуманитаризацилес ыйтăва малти вырăна кăларнă. Съездра çавăн пекех тăван чĕлхепе вĕрентес тата вĕренӳ ĕçне регионсем хăй тĕллĕн улшăнусем кĕртме пултарассине те пăхса тухнă. 1991 çулта Совет Союзĕ арканнă май çак реформăна пурнăçа кĕртесси куç умĕнчех чарăнса ларчĕ. Çĕр-шывăн экономики, социаллă сфери калама çук пысăк йывăрлăха кĕрсе ӳкрĕ. Вĕренӳ ĕçĕнче ĕçлекенсен те йывăрлăха халăхпа пĕрле чăтса ирттерме тиврĕ.

«Рынок тапхăрĕнчи» вĕренӳ реформи 1992 çулхи январьте пуçланчĕ. Унăн тĕп шухăшĕ – вĕренӳ ĕçне аталану çулĕ çине кăларасси, вĕренӳ сферинче ĕçлекенсен ĕç укçине çĕнĕлле тӳлесси, вĕренӳ ĕçĕн патшалăх стандарчĕсене вăя кĕртесси тата ытти те пулса тăчĕ. Вĕренӳ çинчен калакан саккунсене йышăннă хыççăн ялти шкулсене çĕнетсе улăштарас ыйту малти вырăна тухса тăчĕ. Вăл чи малтанах пĕчĕк комплектлă шкулсен йывăрлăхĕсене çиеле кăларса тăратрĕ. Раççей патшалăхĕн 2001 çулхи декабрь уйăхĕнче правительствăн «О реструктуризации сети общеобразовательных учреждений, расположенных в сельской местности» текен 871-мĕш номерлĕ постановленийĕпе килĕшӳллĕн пирĕн республикăра вĕренӳпе культура центрĕсем тăвассипе пухнă опыта çĕр-шывĕпех сарассине пăхса хăварнăччĕ. Пирĕн республика пилот регионĕ пулнă май эпир пилот районĕсен шутне кĕнĕччĕ вăл вăхăтра. Çак эксперимента пуçарса яраканĕсем эпир, Муркашсем, пултăмăр. Район администрацийĕн ун чухнехи пуçлăхĕ Валерий Иванович Вязов йĕркелесе пынипе çакăн пек комплекссем Турайра, Атапайĕнче, Юнкăра, Вăрманкасра уçрăмăр. Пирĕн опытпа паллашма ун чухне çĕр-шыври чылай ертӳçĕ килсе кайрĕ, вĕсен йышĕнче РФ Правительствин председателĕн çумĕ Галина Карелова, Раççей вĕренӳ министрĕсем Владимир Филиппов, Андрей Фурсенко тата ыттисем те. Вăрманкассинчи пуçламăш шкулта, Атапай, Сосновка, Муркаш шкулĕсенче пулса курчĕç. Раççей шайне тухма пултарнă çак проектпа тĕплĕ ĕçлерĕмĕр. Ĕç ушкăнĕнче халĕ вĕренӳ пайне ертсе пыракан З. Дипломатова та пулнăччĕ.

Çак тапхăртах районта 15 шкулпа пристройсем, 17 ача сачĕ хута янă (Тойкилтĕре, Турайра, Матьăкра, Шоркассинче, Шатракассинче, Çатракассинче, Чемейре, Сыпайра тата ытти ялсенче), Муркашра – лицей.

2000 çулсен пуçламăшĕнче пур вĕренӳ учрежденине те çут çанталăк газĕпе хутса ăшăтасси çине куçарма пултартăмăр.

Шкул директорĕсен те сахал мар тăрăшма тиврĕ. Çак хастар çынсенчен нумайăшĕ Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ ĕçченĕсем пулма тивĕçрĕç: И. Кабуркин (Ильинка шкулĕ), В. Прокопьев (Çатракасси), Н. Кудряшов (Ярапайкасси), В. Ильина (Ильинка), Т. Вязова (Атапай), А. Андреев (Çамрăк техниксен станцийĕ).

Патшалăх пĕрлехи экзаменĕсем пуçланнă тапхăрта Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкул директорĕ С. Сапожникова унта ĕçлекен учительсен коллективĕпе пĕрле вĕренӳ тытăмĕнчи çĕнĕлĕхе питĕ лайăх йĕркелесе яма пултарчĕ. Шаннă должноçра пысăк ответлăхпа ĕçленĕ вăл – Раççей Федерацийĕн вĕрентĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ. Çак ята пирĕн районти сахал мар педагог тивĕçнĕ. Вĕсен йышĕнче Йӳçкассинчи шкул директорĕ Ю. Яковлев, Шетмĕпуçĕнчи шкул директорĕнче ĕçленĕ В. Степанов, халĕ директорта вăй хуракан А. Степанова, Муркаш шкулĕн директорĕнче вăй хунă В. Ялушкин, Орининти шкул директорĕ В. Иванов, Тойкилтĕри шкул директорĕнче тăрăшнă И. Сергеев, маларах асăннă Çатракасси тата Ярапайкасси шкулĕсен директорĕсем те, çамрăк техниксен станцине ертсе пынă А. Иванов та, района ертсе пынă В. Вязов та.

Пирĕн район ял хуçалăх институчĕпе, педагогика институчĕпе тачă çыхăнура ĕçлесе пыратчĕ. Калайкассинчи, Москакассинчи шкулсенче педклассем пулнă, Муркашра – медицина класĕ те. Муркашри лицей вара Чăваш патшалăх университечĕпе килĕштерсе ĕçлетчĕ. Кадрсем енĕпе пăхас пулсан вăл вăхăтра çамрăк учительсем шкулсене ĕçлеме нумаййăн килетчĕç, вăтăршар çамрăк специалиста ĕçлеме йышăнни те пулнă.

Районта ресурс шкулĕсем, база шкулĕсем йĕркелеме тытăнтăмăр, шкулсене çĕнĕ йышши оборудованипе тивĕçтерессине вĕсенчен пуçланă.

Хальхи вăхăтра шкулсем çумĕнчи ертсе пыракан канашсем пирки, учительсене хавхалантарасси пирки, вĕренӳ стандарчĕсем пирки калаçу пуçарни çĕнĕлĕх мар, унăн никĕсне вара 2000 çулта РФ вĕрентӳ ĕçченĕсен конференцийĕнче хурса хăварнă темелле. Ун чух эпĕ те делегатсен йышĕнче пултăм. Вăл вăхăтра В. Путин Правительство председателĕччĕ. Пирĕн умра вăл маларах асăннă ыйтусемпе тухса калаçрĕ. Документсен пакетне хатĕрленине пĕлтерчĕ. Çапла вара 21 ĕмĕрти вĕренӳ тытăмне çĕнĕлĕхсем кĕртесси çавăнтан пуçланчĕ.

**В. Васильевпа пĕр вăхăтрах, 1986 çулта, вĕренӳ пайĕнче Г. Борисова ĕçлеме тытăннă. Вăл вара кашни учитель пирки каласа пама пултарать. Галина Захаровна учительсен ĕçĕ çинче чарăнса тăма кăмăл турĕ:**

– Пирĕн районта вĕренӳ ĕçне тивĕçлĕ шайра йĕркелесе пынине республикăра та асăрхаса хакланă: эпир ку енĕпе чи малтисен шутĕнче пулнă, темиçе хутченех республика наградисене тивĕçнĕ. Çак ĕçре вара кашни учителĕн тӳпи пур. Кашни учитель хăйне май истори, анчах та район аталанăвĕн вĕренӳ ĕçĕнче палăрнисем пирки каламасăр иртме çук.

Муркашри вăтам шкулти хими учителĕ Г. Андреева ачасене лайăх вĕрентнипе кăна мар (унăн вĕренекенĕсем республика шайĕнче палăрнă), хăйĕн пуян ĕç опычĕпе ытти учительсене паллаштарнипе палăрса тăрать. Р. Шишкина, биологи учителĕ, районти биологи учителĕсен методпĕрлешĕвĕн ертӳçи пулса нумай ĕçленĕ. Республикăра иртнĕ олимпиадăсене ачасене тарăн пĕлӳ парса хатĕрлетчĕ. А. Ильина нумай çул хушши директор çумĕ пулса ĕçлерĕ. Хăйĕн предмечĕсене, биологипе химие, питĕ лайăх пĕлетчĕ. Вăл вĕренӳ ĕçĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ ята тивĕçрĕ. Ĕç урокĕсене ертсе пынă Н. Антонов арçын ачасен юратнă учителĕ пулнă. Тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн вĕрентӳ ĕçĕн отличникĕ ята тивĕçрĕ. Г. Волков, Л. Кондратьева тĕлĕнмелле пултаруллă учительсем пулнă, вĕсене ачасем питĕ юрататчĕç.

Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулти О. Копусова учителĕн вĕренекенĕ Антон Волков район, республика шайĕнче кăна мар, Раççейри биологипе иртнĕ олимпиадăра пĕрремĕш вырăн йышăнса çав «титула» 2–3 çул тытса тăчĕ, кайран Новосибирскри университета вĕренме кĕме тивĕçлĕ пулчĕ. Ольга Лазаревнăна вара РФ вĕренĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ ят пачĕç.

Ильинкăри вăтам шкул вĕрентекенĕ Н. Паймановна тăрăшнипе вара шкул лесничестви, вăрманти экологи сукмакĕ йĕркеленĕччĕ. Шкул лесничествисен республикăри слечĕсенче те вĕсем пĕрремĕш вырăн йышăнатчĕç. Нина Никитична вĕрентӳ ĕçĕн отличникĕ тата ЧР вĕренĕвĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ ятсене тивĕçрĕ.

**(Вĕçĕ 12-мĕш стр.)**

# Вăл Паша Ангелина парнине тивĕçнĕ

– Иртнĕ тапхăрти нушаллă пурнăç, вăрçă çулĕсенче тата хыççăнрах, хĕрарăмсене те арçынсемпе пĕр виçене лартнă, йывăр ĕçе кӳлĕнтернĕ. Вĕсем трактор рулĕ умне ларса кунне-çĕрне пĕлмесĕр уй-хирте ака-суха тунă тата ытти ĕçре пилĕк авнă. Вăрçă çулĕсенче кашни хуçалăхрах хĕрарăм механизаторсем пулнă тесен йăнăшмăп.

Районта чылай çул хушши машинăпа трактор станцийĕ (МТС) ĕçленĕ. Çакăнтан механизаци валли ăста кадрсем туптанса тухнă. Ун чухне пур механизатор та çак станци ĕçченĕ шутланнă. 50-мĕш çул вĕçĕнче вара унран юсавпа техника станцийĕ (РТС) туса хунă. Тĕрлĕ техника, унпа пĕрлех ĕçлекенĕсем те хуçалăхăн шутланнă. Пултаруллă хĕрарăм механизаторсем арçынсенчен те ытларах ĕçленĕ, вĕсемшĕн ырă тĕслĕх пулнă, чылай çамрăка ку енĕпе вĕрентнĕ. Хĕрарăм механизаторсем хушшинче 1937 çулта Мăн Сĕнтĕр енчи Марфа Пузырева бригадирта ĕçленĕ. 70 – 80 çулсенче районта хĕрарăм механизаторсем çирĕм ытла та пулнă, – каласа парать чылай хушă ял хуçалăх управленийĕн планпа экономика пайĕн ертӳçинче тимленĕ Валентина Любимова.

Вĕсенчен пĕри – Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи Иштерекри Раиса Калинина **(сăн ӳкерчĕкре)**. Тăрăшуллă хĕрарăм пирки маларах та илтнĕччĕ-ха. Унпа тĕплĕнрех паллашассине ытла кая хăварас мар тесе çак кунсенче асăннă яла çитрĕм. Вăл сумлă çулхи ватă çын пулма пултарассине шута илсе пĕчĕк тăпăл-тăпăл йывăç çуртлă хуçалăх шырарăм. Йăнăшнă иккен эпĕ. Çак урамри пĕр ырă кинемей мана икĕ хутлă капмар çуртлă çирĕп хуçалăха илсе çитерчĕ, умĕнче «хурçă ут» ларатчĕ.

Выльăх-чĕрлĕх патĕнчен тин кăна кĕнĕ Раиса Ивановна, вĕри чейпе сăйланаканскер, эпĕ мĕн сăлтавпа килнине пĕлсен пĕр самантрах ман ума сăн ӳкерчĕксен пысăк пуххине кăларса хучĕ. Çакăнта ачалăхран пуçласа паянхи кунчченхи тапхăр курăнать те ĕнтĕ.

... Чурикассинчи Варварăпа Иван Григорьевсен çемйи ыттисем пекех ял хуçалăх ĕçĕнче ырми-канми тимленĕ. 1944 çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕ. Паллă ĕнтĕ, мĕн пур çыншăн йывăр тапхăр, апла пулин те пурнăç малаллах шăвать-ха. Çак кун Григорьевсен çемйинче иккĕмĕш ача çуралать, ăна Раиса ят хураççĕ. Унăн пиччĕшĕ вара саккăрта. Тĕнчене хăрушă вăрçă кисретнĕ тапхăрта чылай çемье арçынсăр тăрса юлать. Раиса та ашшĕ тимлĕхĕпе хӳттине кураймасть.

– Пурнăçĕ нушаллă пулчĕ çав ун чухне. Шкулта вĕренме те май çукрахчĕ, нимĕнле ĕçрен те хăраса тăман вăл вăхăтрисем. Пĕр çулхине пирĕн сарай йăтăнса анчĕ. Атти çук, апи питĕ кулянать. Атăл леш енчен вăрман ĕçлесе килме ирĕк пачĕç. Пирĕн тăрăхра Нина Столярова пултаруллă трактористка пурччĕ. Атăл урлă хамăр валли ĕçленĕ йывăçа турттарса килме мĕн хак тӳленипе кăсăклантăм. Çав вăрăм çулшăн 75 ĕç кунĕ лартнине, уншăн 3 килограмм чухлĕ тырă панине, 7 тенкĕ укçа тӳленине пĕлтĕм. Çапла вара унчченех тракторпа çӳреме кăштах сĕмленнĕскер çак ĕçе вĕренетĕпех тесе шухăшларăм. Çапла вара мана нушаллă пурнăç трактор рульне тыттарчĕ, – аса илет Раиса Ивановна.

Çапла вара вăл Кораккассинче 24 çул механизаторта ĕçленĕ Нина Филипповнăпа плугарьте ĕçлеме кăмăл тунă. Пысăк ĕçе пуçăннишĕн тем пекех хĕпĕртенĕ. Çуллахи ĕçсене вĕçлесен вĕрентекен ăна хăйпе пĕрле «Сельхозтехника» мастерскойне юсава илсе кайнă. Çавăнтанпа трактор-машинăпа татах та çывăхарах паллашнă вăл.

Тăпăл-тăпăл кĕлеткеллĕ хĕр ача хăюлăхĕпе, вăр-варлăхĕпе арçын ачасенчен самай ирттернĕ. Кирлех пулсан вĕсене хăваласа çитсе те «тăн кĕртнĕ». Çапла пулма, паллах, пурнăç ыйтнă. Çавăнпа та пулас профессие арçын ачасем хушшинче вĕренесси ăна пачах та хăратман. Йывăр лару-тăру пулнине шута илсе çав çулсенче «Хĕрсем, трактор çине!» текен чĕнӳпе йыхравланă. Çапла вара сакăр класс хыççăн вăл 1962 çулта Етĕрнери 3-мĕш номерлĕ профессипе техника училищине çул тытнă, механизаци уйрăмĕнче пĕлӳ илнĕ. Çак заведенинче ун чухне пĕтĕмпе 12 хĕр ача вĕреннĕ. Пирĕн районтан тракториста хатĕрленекенсем хушшинче вăл çулсенче Матюшкина, Полякова, Григорьевăсем иккĕн, Горшкова пулнă. Вĕренӳ тапхăрĕ практика сехечĕсемпе пĕрле сакăр уйăха тăсăлнă. Çакăн хыççăн техника вăрттăнлăхне аван ăнкаракан хĕр «хурçă утпа» «Колос» колхозра уй-хир ĕçне пикенет.

1966 çулта Альберт Михайловичпа Раиса Ивановна çĕнĕ çемье çавăрнă, икĕ ывăл ӳстернĕ. Качча тухсан та йывăр ĕçрен уйрăлман вăл, çăмăлраххипе улăштарассине те тĕлленмен.

– Йывăр çын пулнине те пăхман, колхоз ĕçĕнчен юлман, – калаçăва тăсать хисеплĕ трактористка.

Вăл ĕç çулĕсенчи хăш-пĕр самантa аса илчĕ. 1972 çул, çанталăк типĕ килнĕрен тырă, утă-улăм туса илме май килмен. Çавна май ял çыннисем уйра пĕр пĕрчĕ тырă хăварас мар тесе хире тухнă, трактористка волокушкăпа ĕçленĕ. Тепĕр çулхине вара тулăх çул пулнă. Раиса Ивановна каланă тăрăх 45 гектар çĕр çинче улăмран 50 ура купаланă.

Тепĕр саманта та аса илчĕ вăл. Хуçалăх агрономĕ Александр Павлович утă-улăм, çĕр улми пухса кĕртес ĕçе хăвăртлатса сентябрь уйăхĕнче вĕçлеме тата çийĕнчех сухаласа хăварма план панă. Анлă уй-хире вара ахальтен Алтай уйĕ темен ĕнтĕ, ытла та пысăк пулнă вăл. Кам тухса ĕçлеме пултарнă, йăлтах колхоз хирне васканă. Çапла вара пĕрле кар тăрса ĕçленипе 3 кун хушшинче агроном хушăвне пурнăçлама пултарнă. Т-25 тракторпа тимлекен Раиса Ивановнăна ырăпа палăртнă.

Çапла вара пысăк çитĕнӳсем тунăшăн вăл Мускав хулинче иртнĕ Пĕтĕм Союзри хĕрарăм механизаторсен семинар канашлăвне хутшăнма тивĕçнĕ, пирĕн ентешпе пĕрле республикăран тепĕр представитель пулнă. Семинарта ял хуçалăх министрĕ Д. Полянский малашлăх планĕсемпе паллаштарнă. «РСФСРăн хура тăпраллă мар зонăри ял хуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем çинчен» постановлени кун çути курнă. Совет влаçĕн малтанхи çулĕсенче 100 пин трактор çинчен ĕмĕтленнĕ пулсан, асăннă постановленипе килĕшӳллĕн çак зонăри облаçсемпе автономиллĕ республикăсене 380 пин трактор, тыр-пул пухса кĕртмелли 94 пин комбайн, тиев турттармалли 230 пин автомашина хушса пама йышăннă. Çапла вара çĕкленӳллĕ кăмăл-туйăмпа таврăннă механизатор каллех ĕçе пикеннĕ, ыттисене те тăрăшуллăрах тимлеме хистенĕ.

Калинина вара уйрăмах сухаламалли культурăсем ӳстерме ăста пулнă. Пĕр çулхине вăл ĕçленĕ ана çинче кашни гектартан 250 центнер ытла çĕр улми, 600 центнер выльăх кăшманĕ, 300 центнер сахăр кăшманĕ пухса илнĕ. Хуçалăхсем майĕпен тĕрекленсех пынă. 1975-мĕш çул пуçламăшĕнче «Правда» колхоз Карл Маркс ячĕпе хисепленекен колхозпа пĕрлешсе пысăкланать. Каярах вара ăна «Дружба» ят панă.

1979 çулта унăн мăшăрĕн Альберт Михайловичăн кун-çулĕ вăхăтсăр татăлнă. Пысăк хуйхă вара кирек кама та хавшатать çав. Хуçалăх ĕçĕнчен пĕр кун та юлман хĕрарăм йывăр чире кайса больницăна чылай вăхăтлăх лекнĕ. Уншăн йывăр тапхăр пуçланнă.



Вăхăт сиплет, теççĕ халăхра. Каллех вăл хăнăхнă ĕçе пикеннĕ. Ĕçлекенсем çитменнипе партипе правительство хĕр механизаторсен звенине йĕркелеме хушнă. «Сахалтан та виçĕ трактористка хатĕрлемелле!» пулнă чĕнӳ. Кирек епле ĕçе та тӳрĕ чунпа пурнăçлакан Раиса Ивановна М. Мамаевăна, А. Кожановăна, Л. Яковлевăна, Л. Горбуновăна, Р. Кудряшовăна тракторпа ĕçлеме вĕрентнĕ.

Çĕр çинче пурăнакан этем хăйне тăрантарса, тумлантарса усракан çĕре яланах юратма тивĕç. Çавăнпах-тăр Раиса Ивановнăн ĕç кунĕ кăвак шуçăмпа пуçланса сĕм-çĕрлеччченех пулнă. Хăш чух вара çак икĕ тапхăр сисмесĕрех пĕрлешнĕ. Кашни ĕçе хăй вăхăтĕнче тумаллине аван пĕлсе тăнă хастар хĕрарăм. Çулленхи плана 150 процентчĕпех е ытларах та тултарнă. Вăл пилĕк тĕрлĕ трактора итлеттернĕ хăй ĕç ĕмĕрĕнче. Çапла вара хăй телейне Раиса Ивановна механизатор ĕçĕнче тупнă.

Ӳсĕм хыççăн ӳсĕм тунă вăл, ĕçне кура вара – хисепĕ. Республика тата Раççей шайĕнче пĕрре кăна мар унăн пултарулăхне пысăка хурса хакланă. Тĕрлĕ мероприятие, вăл шутра съезда, конкурса, слета тата ытти ĕçе хутшăнма чылай хулана çитнĕ. Хĕрарăм механизаторсен республикăри социаллă ăмăртăвĕн чемпионĕ пилĕк хутчен пулнă. Курск хулинче иртнĕ ăмăртăва хутшăннине те çирĕплетрĕ сăн ӳкерчĕк. Пĕррехинче хăйне «сенкер экранпа» кăтартнине те аса илчĕ вăл. Çапах та чи сумлă парне уншăн – Паша Ангелина призне тивĕçни. Çак чыса çĕр-шыври хĕрарăм механизаторсен ăмăртăвĕнче мала тухнисем тивĕçнĕ. Çапла вара пултаруллă Раиса Ивановна çитĕнĕвĕсем пирки республикăри хаçат-кĕнекере те çырнă.

Кирек епле ĕçре те правурлăхпа палăракан тата ял çыннин хуйхи-суйхине аван ăнланакан хĕрарăма тĕрлĕ шайри депутат пулма шанаççĕ. Паллах, хастар çыннăн мĕн пур çитĕнĕвне асăнса та пĕтерейĕмĕн, вĕççĕр-хĕрсĕр вĕсем.

Мĕнле ĕç кăна пурнăçламан пулĕ вăл? Атăл леш енчен те çурт-йĕрлĕх йывăç турттарнă. Тивĕçлĕ канăва тухнă хыççăн та вăл хуçалăх ĕçĕнчен уйрăлман, пĕр хăнăхнă ĕçре тимленĕ.

Халĕ вара Раиса Ивановна Андрей ывăлĕн çемйипе пурăнать. Сумлă çулхи хастар хĕрарăм паян та хĕрӳ ĕçре. «Хурçă утне» чĕртет те ака-суха тăвать, сулать, пуçтарать, çĕрĕ вара ĕçлемелĕх çитет.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Паллă ентешсем

# Раççей Федерацийĕн Геройĕсем

**Николай Валерьевич СМИРНОВ**

Николай Валерьевич Смирнов 1967 çулта Кашмаш ялĕнче çуралнă.

Совет Çарне 1986 çулта кайнă. Афганистанри çар операцийĕсене хутшăннă. Салтакран килнĕ хыççăн Шупашкарти агрегат заводĕнче слесарь-наладчикра ĕçленĕ.

1994 çулта контрактпа Таджикистан территорийĕнчи Мускав погранотрядĕнче службăра тăнă. Таджик оппозицийĕн боевикĕсемпе тата Афган моджехечĕсемпе çапăçса пуçне хунă. РФ Президенчĕн 1994 çулхи октябрĕн 3-мĕшĕнчи указĕпе отделени командирне Н.В. Смирнова Раççей Федерацийĕн Геройĕ ятне панă.

**Евгений Германович БОРИСОВ**

Евгений Германович Борисов 1980 çулта Шупашкар хулинче çуралнă. Тивĕш шкулĕнчен вĕренсе тухнă.

Раççей Çарне 1998 çулта кайнă. Çурçĕр Кавказ округĕнче службăра тăнă. Саккунлă мар çар формированийĕсене пĕтерне чухне паттăрлăх кăтартнăшăн Е. Борисов рядовоя РФ Президенчĕн 2000 çулхи февралĕн 21-мĕшĕнчи указĕпе Раççей Федерацийĕн Геройĕ ятне панă.

# Социализмла Ĕç Геройĕсем

**Евтихий Андреевич АНДРЕЕВ**

1912 çулхи майăн 25-мĕшĕнче Муркаш районĕнчи Варпуç ялĕнче çуралнă. Мăн Чурашри ял çамрăкĕсен шкулĕнче 6 класс вĕренсе пĕтерне хыççăн «Сеятель» колхозра счетоводра ĕçленĕ. Хыççăн1941 çулччен асăннă колхоз правленине ертсе пынă.

Евтихий Андреевич – Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕ. 1946 – 1951 çулсенче СССР Хатĕрлев министерствин Муркаш районĕнчи уполномоченнăйĕ пулса тăрăшнă. 30 çул хушши (1951 – 1981 ç.ç.) пĕр улшăнмасăр «Знамя труда» колхоза ертсе пынă. Обществăлла хуçалăхăн пĕтĕм отрасльне пысăк тухăçлă ĕçлессипе тивĕçтернĕ.

Ял хуçалăх производствин аталанăвĕнчи çитĕнӳсемшĕн 1966 çулта ăна Социализмла Ĕç Геройĕн ятне панă. Çавăн пекех вăл Ленин орденĕн, Октябрьти революцин тата Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕсен кавалерĕ, медальсене те тивĕçнĕ.

Е.А. Андреевăн хуçалăх экономикине çирĕплетессипе тата çынсен пурнăç шайне лайăхлатассипе тунă пархатарлă ĕçне тивĕçлипе хакласа вăл ертсе пынă хуçалăха унăн ятне панă.

Евтихий Андреевич Андреев 1981 çулхи июнĕн 4-мĕшĕнче çĕре кĕнĕ.

**Ольга Федоровна ФЕДОРОВА**

1929 çулхи сентябрĕн 7-мĕшĕнче Муркаш районĕнчи Çатракасси ялĕнче çуралнă. Çатракассинчи вăтам шкултан вĕренсе тухнă. Тăван колхозра уйхир бригадинче, пăрусем пăхнă çĕрте, дояркăра ĕçленĕ.

Кайран Чул хула облаçĕнчи Воротынски районĕнчи «Волжанка» колхоза куçса кайнă. Кунтах дояркăра тăрăшнă. Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илессинчи ӳсĕмсемшĕн, продукци туса илессипе хатĕрлессине ӳстернĕшĕн 1966 çулта Социализмла Ĕç Геройĕн ятне тивĕçнĕ.

# Унăн ячĕ паян та асра

«Ĕмĕр пурăн – ĕмĕр вĕрен», – тет халăхăмăр ăслăлăхĕ. Çакна алла илнисем хăйсем хыççăн пурнăçра тарăн йĕр хăвараççĕ. Мал туртăмлă ĕçченсен ырă ячĕпе çыхăннă вăл. Районăмăр 70 çул тултарнă май халăх хуçалăхĕн кирек хăш отраслĕнче те ырă ят хăварнă çынсем пуррине палăртас килет. Муркаш енри сывлăх сыхлавĕ те халĕ каланинчен айккинче тăмасть.

Нумай врач-тухтăрпа калаçатăп та вĕсем хăйсен сывлăх хуралçи пулас ĕмĕчĕ ачалăхра тĕвĕленнине палăртаççĕ. Мĕн акатăн – çавă шăтать. Çулсем иртнĕ май ачалăхри çирĕп ĕмĕт те хăйĕн çимĕçĕпе савăнтарма пуçлать. Ырă вăрлăхăн апачĕ те техĕмлĕрех. Çак чăнлăх пурнăçăн кашни утăмĕнчех куç умне пулса пырать. Ыррине вара нумай çул иртсен те лайăхпах аса илеççĕ, ыттисемшĕн тĕслĕхе лартаççĕ.

Муркаш çыннисем районти сыватмăшра нумай çул хирург тата тĕп врач пулса ĕçленĕ Николай Арсентьевич Аршуткина лайăх пĕлеççĕ тата ырăпа кăна аса илеççĕ. Районăмăр историйĕнче çирĕп йĕр хăварнă çак хастар çын 1924 çулта Вăрнар районĕнчи Мăн Явăшра çуралса пурнăç çулĕ çине тухнă. Çĕр-шыври кун-çул аталанăвĕн анлă тапхăрне лекнĕскер ачаранах пурнăç урапинчен катара юлман.

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче çар фельдшерĕ пулнă ентеш хăйĕн тăрăшулăхĕпе фронтра аманнă çĕршер салтакпа офицера сиплесе ура çине тăратнă. Сывалнисем вара каллех малти позицисене тухса кайнă, çĕр-шывăмăра ирĕке кăларассишĕн тата унăн пуласлăхĕшĕн çапăçăва кĕнĕ.

Фронтран таса-сывă таврăннă арçын мирлĕ пурнăçра та алă усса лармасть. Çарти пĕлĕвне малалла тăсса ĕнерхи фронтовик Хусанти медицина институтĕнче вĕренсе хирург профессине алла илнĕ. Хăйĕн ĕç ĕмĕрĕн тĕп пайне Николай Арсентьевич Муркаш çыннисене халалланă. 1959 – 1965 çулсенче районти сыватмăшăн тĕп врачĕ пулнăскер 1958 – 1972 çулсенче кунта хирург пулса вăй хучĕ.

Пурнăç мана Н. Аршуткинпа ăнсăртран паллаштарчĕ. Темĕн те пулать çын ĕмĕрĕнче. 1958 çулта манăн янах шăмми сикнĕччĕ. Сикнĕ шăмăсене вырнаçтаракан ялти кинемей патĕнче те пултăмăр, вырăнти сыватмăшра ĕçлекен тухтăрпа та канашларăмăр, анчах янах пурпĕрех сипленмерĕ.

Вăл вăхăтра ялсенче автомашина тытакан çын çукчĕ. Колхоз ертӳçисене турттаракан автомашина çеç пурччĕ. Шăпах çак автомашинăпа пĕр каçхине мана Муркашри сыватмăша илсе кайрĕç. Кунта пире шăпах Н. Аршуткин кĕтсе илчĕ. Манăн хуйхăпа паллашсан сывлăх хуралçи аллине таса пит шăллипе чĕркерĕ те çăвара чиксе янаха аялалла пусрĕ: янах самантрах вырнаçрĕ. Мĕн тери савăнтăм эпĕ!

Çулсем иртнĕ май манăн Н. Аршуткинпа пĕрре мар тĕл пулма тиврĕ. Кашнинчех эпĕ унăн ăсталăхне курса тĕлĕнеттĕм.

Пĕррехинче эпир, ялти вăй питти арçынсем, ферма витисем тунă çĕрте усă курма 6,5 метр тăршшĕ пĕренесене тиеме кайрăмăр. Каялла таврăннă чухне пирĕн прицеп ӳпĕнчĕ. Эпир прицеп çинче пулнăран манăн урасене пĕренесем хĕссе лартрĕç. Юлташăмсем пĕрене тыткăнĕнчен кăларсанах мана Муркашри сыватмăша илсе кайрĕç. Унта пире Н. Аршуткин йышăнчĕ. Сывлăх хуралçи атта хывса пăхсан манăн ура лаппи 5 сантиметр çурăлни, шăмă ванни палăрчĕ. Çитменнине тепĕр ури те хуçăлнă иккен.

Çак инкеке пула икĕ уйăх сыватмăшра выртмалла пулчĕ. Николай Арсентьевич кашни сиплев ĕçне вăхăтлă пурнăçласа мана йĕркеллех утса çӳрекен турĕ. Эпĕ ăна уншăн паян кун та тав туса пурăнатăп. Н. Аршуткинăн çынлăх туйăмĕ пысăкчĕ çав, çирĕп те çемçе алăсемччĕ, пуян ăсталăхĕ хăй патне чĕнетчĕ.

Пулса иртнĕ ĕçсем пирки эпĕ хамăн пиччене Н. Яковлева каласа патăм. Çавăн хыççăн вăл Н. Аршуткинпа паллашса-туслашса кайрĕ. Паян кунччченех вĕсем хушшинче килĕшӳ хуçаланать. Хальхи вăхăтра сывлăх хуралçи 90 çулта. Н. Яковлев вара январĕн 31-мĕшĕнче 90 çула кайрĕ. Арçынсем иккĕшĕ те политика ыйтăвĕсемпе ӳнер искусстви çине пĕрешкел пăхни, çулĕсемпе пĕр вăхăтрисем пулни вĕсен туслăхне çирĕплетет.

Туссем паян та ĕлĕкхиллех алкоголь культне хирĕç пулнипе палăрса тăраççĕ. Эрех-сăра сиенĕ çинчен Мускаври тата республикăри хаçатсенче Н. Аршуткин чылай статья пичетлерĕ. Нумай кĕнеке кăларчĕ вăл. Паян та алă усса лармасть. Унăн тусĕ Н. Яковлев та кĕнекесем кăларассинчен катара тăмарĕ. Кăранташпа тунă ӳкерчĕкĕсемпе критикăлла статйисем нумай хаçат-журналта кун çути курчĕç, вулакансене эрех сиенĕ пирки ăнлантарчĕç. Хăйĕн ӳкерчĕкĕсемпе вăл 52 выставкăна хутшăнма мехел çитерчĕ. Тури Панкли ялĕнче музей уçнă пиччене «Муркаш районĕн хисеплĕ çынни» ят пани те – пысăк чыс.

Муркашри сыватмăшра паян та аслă ăрурисен ĕçне çирĕп алăра тытса пыраççĕ. Хальхи ăстасенчен пĕри – Владислав Данилов. Турă çырнă çулпа пынине кура ăна 2002 çулта Муркашри сыватмăшăн тĕп врачĕ пулма шанчĕç. Темиçе хутчен те Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ пулнăскер паян та хăйĕн рульне çирĕп алăра тытать. Темиçе хутчен те Муркашри сыватмăша республика шайĕнче тĕслĕхе кăларса вăл 2006 çулта «Чăваш Республикин Тава тивĕçлĕ врачĕ» ята тивĕçрĕ.

В. Даниловпа Н. Аршуткин хирургсем паян та тачă çыхăну тытаççĕ. Çакнашкал ырă çынсем пурри районăн аталанăвне çул уçать, ыттисене хавхалану кӳрет.

**Илья ЯКОВЛЕВ.**

Хурăнкасси ялĕ.

# Аса илӳсем, аса илӳсем...

***Халĕ Çатракасси ял тăрăхĕнче пурăнакан Александра Анисимовăна 1966 çулта шăпа Шăмăршă районĕнчен Муркаш тăрăхне илсе çитернĕ. Ял хуçалăх техникумĕнче вĕреннĕ çамрăк специалист вара ял хуçалăх ĕçĕпе тимлеме пуçланă. Çавна май Александра Федоровна район аталанăвне курса-пĕлсе тăнă тесен йăнăшмăп эпĕ. Ял хуçалăх ĕçĕнчи ответлă тĕрлĕ должноçра ырми-канми тăрăшнă, халĕ тивĕçлĕ канура, апла пулин те обществăлла ĕçре питĕ активлă çыннăмăр хăй шухăшне çапларах пĕлтерчĕ:***



– Вăхăчĕ унтанпа самай улшăнчĕ ĕнтĕ, тен çĕр ĕçĕ çине те урăхларах пăхма пуçларăмăр пулĕ. Малтанхи тапхăрта ял хуçалăхĕ çине чăннипех те пысăк тимлĕх, колхозсене аталантарма тăрăшни яр уççăн палăратчĕ. Ун чухне районта 36 ял хуçалăхĕ пулнă. Ĕç ушкăнĕпе те, пĕччен те вăл колхозсене тăтăшах çитнĕ. Колхозри лару-тăрăва питĕ лайăх пĕлсе тăнă, паллах, ферма тата уй-хир ĕçченĕсене те. Пысăк укçа-тенкĕшĕн çунман, çирĕп йĕркешĕн вара чăннипех те тăрăшнă, чылай чухне кил-çурт пирки шухăшлама та вăхăт пулман.

Çапах та манăн вăл вăхăтра ĕçленĕ хуçалăх ячĕсене, вĕсен ертӳçисемпе агрономĕсене асăнмасăр иртес килмест. Вĕсем çĕр ĕçĕшĕн хăйсене те шеллемен. Жданов ячĕпе хис. хуç.(«Нива») ертӳçи Ю. Ильин, агрономĕ В. Белов; «Новая Юнга» ертӳçи И. Салдакеев, агрономĕ А. Салдакеев; «Заря» хуç. ертӳçи Д. Лаптев, агрономĕ Е. Матвеева; Ленин яч. хис. хуç. ертӳçи Д. Николаев; «Красный Октябрь» хуç. ертӳçи А. Скворцов; Киров яч. хис. хуç. ертӳçи И. Николаев, агрономĕ Р. Петрова; «Восход» хуç. ертӳçи Д. Петров, агрономĕ Р. Портнова; «Сеятель» хуç. ертӳçи С. Афанасьев; «Путь Ильича» хуç. ертӳçи И. Ванюшкин, агрономĕ А. Никонова; Ильич яч. хис. хуç. ертӳçи В. Васильев, агрономĕ И. Михеев; «Хлебороб» хуç. ертӳçи В. Храмов, агрономĕ К. Федосеева; «Волга» хуç. ертӳçи В. Мерлов; «Знамя труда» хуç. ертӳçи Е. Андреев, агрономĕ Е. Ильина; «Красное Сормово» хуç. ертӳçи В. Котельников; «Восток» хуç. ертӳçи А. Калинин; «Заветы Ильича» хуç. ертӳçи И. Ковалев; «Аврора» хуç. ертӳçи В. Сорокин; «Свобода» хуç. ертӳçи А. Фадеев, агрономĕ К. Белов; К. Иванов яч. хис. хуç. ертӳçи Ю. Егоров, агрономĕ В. Михайлов; К. Маркс яч. хис. хуç. ертӳçи М. Паргеев, агрономĕ Павлов; Мичурин яч. хис. хуç. ертӳçи А. Петров, агрономĕ А. Васильев; «Тиуши» хуçалăх ертӳçи Ю. Волков, агрономĕ Т. Петров; Чапаев яч. хис. хуç. ертӳçи В. Ильин, агрономĕ А. Павлов; Чкалов яч. хис. хуç. ертӳçи Н. Андреев, агрономĕ Н. Охотников; «Герой» хуç. ертӳçи В. Соловьев; «Ленинский путь» хуç. ертӳçи Н. Галкин, агрономĕ В. Леонтьев; «Передовик» хуç. ертӳçи В. Краснов; «Ударник» хуç. ертӳçи И. Николаев; «Знамя коммунизма» хуç. ертӳçи Т. Скворцов, агрономĕ М. Кириллов; «Ленинец» хуç. ертӳçи Г. Иванов, агрономĕ И. Тихонов; «Труд» хуç. ертӳçи Д. Алексеев; «Рассвет» хуç. ертӳçи В. Воробьева, агрономĕ А. Филиппова; «Гвардия» хуç. ертӳçи М. Трофимов; «Россия» хуç. ертӳçи Ю. Петров, агрономĕ А. Игнатьев; «Колос» хуç. ертӳçи Г. Кузьмин, агрономĕ В. Краснов. Хăш-пĕр хуçалăхра ун чухне уйрăм агроном пулман. Шутласа пăхăр-ха, мĕн чухлĕ колхоз ĕçленĕ. Паянхи кун тĕлне çӳлерех асăннă ертӳçĕсенчен С. Афанасьев, Ю. Егоров, В. Краснов, Г. Иванов, Г. Кузьмин кăна пирĕн хушăра ĕнтĕ, ыттисем вара пирĕнтен уйрăлса кайрĕç.

Çулсем кайнă майăн колхозсем те пĕрлешсе пысăкланчĕç, вĕсен шучĕ пĕчĕкленчĕ. Вăйсăртараххисене вăйлăраххисемпе пĕрлештерчĕç. Çапла туни анлăрах аталанма пулăшрĕ, паллах.

Çĕр пахалăхне ӳстересси, çĕр ĕç культурин технологине çирĕп тытса пырса ял хуçалăх культурисен тухăçне хăпартасси пире питĕ канăçсăрлантарнă. Малтанхи çулсенче районта вăрлăх пахалăхне тĕрĕслесе тăракан икĕ лаборатори пулнă. Мăн Сĕнтĕрти лабораторие нумай çул хушши А. Уткина ертсе пынă, каярахпа вара Н. Прокопьева тимленĕ. Муркашри вăрлăх тĕрĕслемелли лаборатори ертӳçинче М. Полянова, ун хыççăн З. Савельева тăрăшнă. Çак лаборатори каярахпа Муркашри вăрлăх инспекцийĕ пулчĕ, ун хыççăн ку учреждение «Россельхозцентр» филиалăн Муркаш районĕнчи уйрăмĕ турĕç. Ăна халĕ ял хуçалăх ĕçĕшĕн тăрăшакан пултарулă специалист А. Павлов ертсе пырать. Асăннă центр ĕçне пысăк опыт пухнă аслă пĕлӳллĕ пултарулă специалист П. Замятина ертсе пычĕ, хăйĕн пĕлĕвне çамрăк агрономсене пачĕ, çавна май вĕсемшĕн чăн-чăн вĕрентекен пулса тăчĕ.

Паллах, район аталанăвĕшĕн ырми-канми тăрăшнă мĕн пур çыннăн ятне асăнса пĕтерме май çук. Уйрăмах ял хуçалăх ĕçĕнче тимлекенсене район 70 çул тултарнă ятпа саламлатăп, пурнăç çулĕ такăр та вăрăм пултăр, ĕмĕтленнисем пурнăçланччăр, сĕтел çинче вара ял хуçалăхĕнче туса илнĕ пуянлăх хуçалантăр.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА калаçнă.**

**Сăн ӳкерчĕкре: колхозниксен республикăри конференцине хутшăнма тивĕçнĕ делегатсем.**

# Вĕренӳ аталанăвĕсĕр пуласлăх çук

(Вĕçĕ. Пуçл. 10-мĕш стр.)

Йӳçкассинчи вăтам шкулти Ю. Герасимова районти хими учителĕсен методпĕрлешĕвне нумай çул ертсе пычĕ, çĕнĕлĕхсемпе чылай паллаштаратчĕ. Ачасене паян кун та тарăн пĕлӳ парать.

Тивĕшри вăтам шкулта (шкул пулнă вăхăтра) вăй хунă В. Порфирьев ачасемшĕн кăна лайăх учитель пулман, вăл районти физика вĕрентекенĕсемшĕн те пулăшуçă выраннех пулнă, вĕсен методпĕрлешĕвне ертсе пынă. Ĕçтешĕсене районта тата республикăра иртекен физика урокĕсен фестивальне явăçтаратчĕ. Тĕрлĕрен награда сахал мар унăн.

Директор çумĕсем пулса ĕçленĕ Р. Ершовăна (Турай), Г. Александровăна (Калайкасси), Г. Ильдеровăна (Çатракасси), Н. Ершова (Кашмаш), Е. Зиновьевăна (Панкли), К. Сорокинăна (Москакасси), П. Федоровăна (Ярапайкасси) ырă ятпа асăнмалла. Йӳçкассинчи вăтам шкул директорĕн çумĕ пулса Н. Смирнова, шел пулин те, вăл пирĕн хушăмăрта çук ĕнтĕ, В. Аникина (халĕ районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçи) аван ĕçлетчĕç. Вĕсен Сыпай шкулĕнчи ĕçтешĕ Д. Хлашева та тӳрĕ кăмăллă ĕçпе палăрса тăрать. Матьăкри шкулта çак должноçра В. Кутузова чылай тимлерĕ. Питĕ пултаруллă ĕçчен. Шкул çуртне ниме майĕпе туса лартма пултарнăччĕ. Юнкăри шкулта ĕçленĕ А. Николаевăна та ăнăçлă ĕçленипе палăртмалла. Ильинкăри директор çумĕн, физика урокĕсене ертсе пыракан Г. Дмитриевăн тăрăшулăхĕ те куç умĕнчех. Унăн вĕренекенĕсем Раççей шайĕнче малтисен ретĕнче пулнă. Нискасси шкулĕнче ĕçленĕ Ф. Яранский пирки каламасăр май çук. Математика учителĕ директорăн çумĕ пулса та тимленĕ. Унăн вĕренекенĕсем халĕ паллă çынсем. Хăй вара вăл вăрçă ветеранĕ.

Юнкă шкулĕнче вăй хунă Н. Маряшкин туризм енĕпе, çамрăк армеецсене хатĕрлессипе хастар пулнă, унăн вĕренекенĕсем республикăра, Раççейре мала тухатчĕç. Чемей шкулĕнче Е. Расторгуева вĕрентекен вĕренӳпе сăнав участокне хастар ертсе пыратчĕ. Вĕсем хăйсем туса илнĕ продукципе ВДНХна та çитнĕччĕ. Панкли шкулĕнче ĕçленĕ Е. Соловьева «Хисеп палли» ордена тивĕçме пултарнăччĕ. Кун пекки районти тепĕр педагогăн пулнă – Д. Даниловăн (Тойкилтĕ шкулĕ). Йӳçкасси шкулĕнчи географи учителĕ Ю. Герасимов, Т. Антонова, Турай шкулĕнче историпе обществознани предмечĕсене вĕрентекен И. Иванова яланах тĕслĕх выранĕнче. Турай шкулĕн вĕрентекенĕ Ю. Ершов вара районта ачасене радиоспорта явăçтаракан пĕрремĕш учитель пулнă, вĕренекенĕсем республикăра мала тухатчĕç. Халĕ çак шкулта ĕçлекен А. Герасимова – районти пултаруллă педагогсенчен пĕри. Чуманкассинчи вăтам шкулта И. Перлов ертсе пынипе судомодель кружокĕ вăйлă аталаннăччĕ, ачасем республикăра палăрса тăратчĕç. Учительсем пирки питĕ нумай калама пулать, паллах, кунта пурне асăнса та пĕтерееc çук.

Вĕренӳ тытăмĕ пирки каланă чух районти ачасене хушма пĕлӳ паракан ача-пăча пултарулăх çуртне ертсе пынă Р. Колесникова асăнмасăр иртме çук. Н. Иванов тата В. Николаев ячĕсем вĕренӳ сферипе уйрăлса тăми çыхăннă. Николай Павловича вĕренӳ ĕçĕн аксакалĕ тесен те йăнăш мар, вăл РОНО пуçлăхĕ А. Виноградов пулнă чухнех ĕçлеме тытăннă, питĕ ăслă та анлă тавра курăмлă çын. Владислав Николаевич пирки те çакнах каламалла, вĕренӳ сферине вырăссем каланă пек «от «а» до «я» пĕлетчĕ. Вĕренӳ сферине аталантарас тесе чылай тăрăшнă вĕсем.

**Районти вĕренӳ тытăмĕ пирки пуçарнă калаçу Галина Захаровнăн хăйĕн ячĕсĕр те, паллах, тулли пулаймасть. Сăпайлă педагог хăйĕн пирки сăмахламарĕ, анчах та «эпĕ 1965 çултанпах хама вĕрентӳ ĕçĕпе çыхăнтарнă» тени тата халĕ вăл районти хисеплĕ çынсен йышĕнче пулни унăн ĕçĕ те курăмлине çирĕплетет.**

**Н. НИКОЛАЕВА.**

# Тĕл пулăва чĕнетпĕр

Çĕр-шыв интересĕсене хӳтĕлесе Афганистанти вăрçа хутшăннă çар подразделенийĕсене унтан кăларнăранпа 25 çул çитрĕ. Çав ятпа нарăс уйăхĕн 15-мĕшĕнче 10 сехет те 30 минутра район администрацийĕн ларусем иртермелли залĕнче интернационалистсалтаксене чысласа тĕл пулу иртет.

Интернационалист-салтаксене, вĕсен тăванĕсене, çак юхăма хутшăнакансене тата пулăшакансене тĕл пулăва чĕнетпĕр.

**Йĕркелӳ комитечĕ.**

## Объявления


**Спутниковое цифровое телевидение ТРИКОЛОР 200 каналов – 7500 руб. ТЕЛЕКАРТА 50 каналов – 3500 руб. Дилер, установщик по району. Тел.: 8-906-385-29-30.** 7-10.

**ООО «Росметалл» предлагает профнастил оцинкованный и окрашенный, металлочерепицу и водосточную систему. Цены на профнастил от 140 руб пог. м., собственное производство. Доставка. Требуется менеджер по продаже со знанием программы 1С. Зарплата достойная. Тел.: 8(83541)66-3-84, 8(8352)37-22-32.** 3-3.

**«ВИКТОРИЯ – ОКНА» ИП Шишкин**
**Пластиковые окна, натяжные потолки, металлические двери, жалюзи, матрасы, эковата. Скидка на все – 40%. Тел.: 8-937-955-33-00.**

**ПИЛОМАТЕРИАЛЫ ОБРЕЗНЫЕ ВСЕХ РАЗМЕРОВ. Тел.: 8-903-346-40-58, 8-905-346-63-36.** 6-10.




**Адрес: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4 (сторца здания Дома быта). Тел.: 62-3-80.** 1-10.

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11.** 9-10.

**Требуется продавец-консультант с медицинским образованием в «Оптику Гранд», (с. Моргауши). З/п от 14000 руб., график работы 5/2, соц. пакет. Тел.: 8-937-395-87-29.** 4-4.


**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:281001:2, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиками проекта межевания являются: Захаров Николай Анатольевич, адрес:Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Шатьмапоси, ул. Первомайская, д. 37. Захарова Нина Павловна, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Шатьмапоси, ул. Первомайская, д. 37.

Проект межевания земельного участка подготовлен кадастровым инженером Кольцовым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-27. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:281001:2. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение.

С проектом межевания земельного участка можно ознакомиться по адресу: 429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельного участка принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, пр. Московский, д. 37.

***

**Куплю однокомнатную квартиру в с. Моргауши. Тел.: 8-937-941-24-09.**

***

**Тюкланă утă сутатпăр. Шупуç ялĕ. Тел.: 8-906-382-03-20.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления


**Консалтинговая компания «ВИКТОРИЯ»**
*** Представительство интересов в судах;**
*** Подготовка исков, договоров, жалоб;**
*** Сделки с недвижимостью, в т.ч. с земельными участками;**
*** Риэлторские услуги (покупка, продажа, аренда);**
*** Услуги по оценке недвижимости;**
*** Взыскание по КАСКО, ОСАГО;**
*** Регистрация, ликвидация организаций, ИП;**
*** Бухгалтерский и кадровый учет.**

**Адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, офис 119**
**Тел.: 62-4-43, сот. 8-903-358-64-48**
**г. Чебоксары, ул. Т. Кривова, д. 4а. Тел. 44-64-48**
**сайт: www.victoria-ooo.ru**


**Итоги публичных слушаний по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка»**

05 февраля 2014 года в здании МБУК «Кашмашский информационно-культурный центр» Сятракасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики прошли публичные слушания по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка».

Приняты следующие рекомендации участников публичных слушаний:

1. Одобрить проект муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка».

**Председательствующий глава Сятракасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики Г.В. ТРОФИМОВ.**


**Цифровое спутниковое телевидение ТРИКОЛОР - 7000 руб. ТЕЛЕКАРТА - 3000 руб. Гарантия. Тел.: 8-905-345-77-19.** 2-10.

**Бурение колодцев. Колодезные кольца. Доставка. Установка. Тел.: 8-927-668-96-96.** 10-10.

***

**Продаются березовые дрова. Тел.: 8-903-065-58-68.** 3-3.

***

**Çултаăкри хура-шурă тынашки сутатпăр. Хакĕ калаçса татăлнă тăрăх. Тел.: 8-927-864-12-49.**

***

**Тюкланă утă сутатпăр. Тел.: 8-906-383-46-80, 8-905-198-73-68.**

***

**Молодая семья снимет квартиру или дом в с. Моргауши. Тел.: 8-919-679-87-53.**

***

**Ĕне, вăкăр, тына, пăрусем туянатпăр. Тел.: 8-987-665-02-13.** 2-3.

***

**СТРОЙМАТЕРИАЛЫ.** Продаю с доставкой: кирпич керамический, силикатный (любых цветов); блоки керамзитобетонные, газосиликатные, фундаментные, пеноблоки; кольца колодезные; трубы асбестоцементные, профильные; арматуру, цемент; сухие смеси, шифер, рубероид, профнастил, пиломатериалы. Металлоконструкции: гаражные ворота, калитку, забор, беседку, теплицу, козырьки (навесы), решетки, кладочные сетки, печи, мангал, скамейки и т.п. Услуги крана-манипулятора. Тел.: 8-903-357-46-75, 8-927-880-04-83. 8-10.

***

**Продаю 40 соток земли под строительство дома в с. Юнга. Тел.: 8-917-675-45-38.**

***

**СХПК «Герой» по пятницам в с. Моргауши реализует дробленное зерно (фас., 30 кг) по цене 294 руб., кондиционные семена клевера (фас., 25 кг) по цене 2500 руб., семена люцерны (фас., 25 кг) по цене 3500 руб. Тел.: 8(83541)67-5-79, 67-5-48, 8-906-385-64-49, 8-987-578-41-04.** 2-3.

***

**Продаю сено в рулонах, первый укос. Тел.: 8-961-340-55-68.** 1-5.

***

**Редакция Моргаушской райгазеты принимает заказы на изготовление бланочной продукции.**

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ Тел.: 8-927-667-40-92.** 10-23.


## Мы помним



Ушел из жизни Васильев Федот Васильевич из деревни Б. Шептаки.

Тебя уж нет, а мы не верим.
В душе у нас ты навсегда,
И боль свою от той потери
Не излечить нам никогда.

**Жена, дети, внуки, правнуки.**

Нискассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул коллективĕ кунта музыка учителĕнче ĕçлекен Ю.П. Усовăн амăшĕ

**Евгения Алексеевна УСОВА**

вилнĕ пирки унăн тăванĕсемпе тата çывăх çыннисемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Совет, правление и коллектив Большесундырского райпо выражают глубокое соболезнование продавцу Кюрегасинского магазина Кузьминой Л.П. в связи с невосполнимой утратой – смертью дочери

**ЛАРИСЫ.**

## Прогноз погоды

| | среда 12 февраля | | | | четверг 13 февраля | | | | пятница 14 февраля | | | | суббота 15 февраля | | | | воскресенье 16 февраля | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | -8 | -8 | -5 | -4 | -3 | -4 | -3 | -3 | -4 | -4 | -2 | -3 | -3 | -4 | -3 | -3 | -3 | -5 | -4 |
| Давление мм | 750 | 750 | 749 | 749 | 747 | 749 | 751 | 751 | 750 | 750 | 749 | 749 | 747 | 747 | 747 | 747 | 745 | 744 | 743 |
| Влажность % | 93 | 94 | 92 | 94 | 100 | 97 | 96 | 95 | 95 | 99 | 97 | 97 | 95 | 94 | 92 | 94 | 99 | 95 | 87 |
| Ветер м/сек | 4 | 4 | 5 | 4 | 3 | 2 | 2 | 2 | 4 | 4 | 5 | 4 | 4 | 4 | 5 | 4 | 4 | 2 | 1 |
| | Ю-В | Ю-В | Ю-В | Ю-В | Ю-З | З | Ю | Ю | Ю | Ю | Ю | Ю | Ю | Ю | Ю | Ю | Ю | С-З | З |
| Солнце восход / заход | | 08:23 | 17:50 | | | 08:21 | 17:52 | | | 08:19 | 17:54 | | | 08:16 | 17:57 | | 08:14 | 17:59 | |
| Луна восход / заход | | 15:32 | 06:40 | | | 16:37 | 07:08 | | | 17:43 | 07:32 | | | 18:51 | 07:54 | | 20:00 | 08:13 | |


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
**Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви**
**ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.**

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

**АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.**
**ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, явапла секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36. E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru**

**Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.**

**Калăпăшĕ 3 пичет листи.**
**Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.**
**Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем явапла.**

**ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.**
**Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.**
**Номер дежурнăйĕ Николаева Н.Н.**
**Пичете панă 11.02.2014 ç.**
**Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.**
**Заказ Тираж 5374.**

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.